**Министерство образования Российской Федерации**
**Чувашский государственный университет**
**им. И.Н.Ульянова**
**Факультет чувашской филологии и культуры**
**Кафедра чувашской литературы**

**ФЕДОРОВА С.В.**

# Особенности поэтики цикла стихов Педера Хузангая «Песни Тилли»

**ДИПЛОМНАЯ РАБОТА**

Дипломная работа
студентки V курса
факультета чувашской
филологии и культуры гр. 13-98
Федоровой С.В.

Научный руководитель
доцент Иванова Н.Г.

ЧЕБОКСАРЫ-2003

**Раççей Федерацийĕн вĕрентӳ министерстви**

**И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ**

**Чăваш филологийĕпе культура факультечĕ**

**Чăваш литератури кафедри**

**ФЕДОРОВА С.В.**

# Петĕр Хусанкайăн «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕн поэтики

**ДИПЛОМ ĔÇĔ**

Ĕçе пурнăçлаканĕ:
13-98 ушкăнри
Федерова С.В. студентка

Ăслăлăх енĕпе ертсе пыраканĕ
Иванова Н.Г. доцент

ШУПАШКАР-2003

## План:

Ум сăмах

I сыпăк «Поэтика» ăнлав чăваш литератури контекстěнче

II сыпăк Композиции поэтики чăваш литератури контекстěнче

III сыпăк Стиль поэтики чăваш литератури контекстěнче

IV сыпăк Сăвă виçи поэтики чăваш литератури контекстěнче

Хыç сăмах

Библиографи

## Ум сăмах

Пурнăç улшăннăçемĕн халăхăн интересĕсем, ĕмĕчĕсем те улшăнаççĕ, илемлĕ литература та малалла аталанса пырать. Сăмах ăстисем çĕнĕ тĕллевсемпе проблемăсем лартаççĕ, çĕнĕ йышши геройсем тупаççĕ, çĕнĕ сюжетсем, интереслĕ композиции, сăнарлă чĕлхе йĕркелеççĕ.

Чăваш литератури те куллен-кун тĕрекленсе, вăй илсе пырать. Çакă ун стиль сăн-сăпатне те, поэтикăллă хăй евĕрлĕхне те куллен-кун тĕрĕсленсе, вăй илсе пырать. Петĕр Хусанкайăн «Тилли юррисене» пăхса тухса М.Я.Сироткин, В.А.Долгов, Г.Я.Хлебников, В.Г.Юмарт тата ытти тĕпчевçĕсем сахал мар ĕç çырчĕç.

Классикăллă хайлав кирек хăш вăхăтлăхшăн та çивĕч ыйтусем хускатать. Тĕпчевçĕсем «Тилли юррисем» хайлавăн илемлĕх вăрттăнлăхне, чуна тыткăнлакан хăй евĕрлĕхне тĕпчесе пĕлме тăрăшнă. Ку хайлав чăваш литературинче шухăшлă ăслăлăхĕпе те, формипе те, пĕтĕмĕшле стилĕпе те уйрăлса тăрать. «Тилли юррисен» хăйне евĕрлĕхне чи малтан М.Я.Сироткин профессор тĕпчеме тытăннă. Тĕпчевçĕ çак сăвăсене халăх сăмахлăхĕ чĕрĕлĕх пани çинчен калать. Каярахпа «Тилли юррисене» хаклать май В.А.Долгов хайлав илемлĕхне тата сăнарлăхне халăх сăмахлăхĕн витĕмĕпе ăнлантарнă: «Тилли юррисене» вулатăн та çапла калатăн: ку юрăсенче – тăван халăх юрри-сăввин тахçантанпа пухăнса пынă илемĕ, халăх кăмăлĕ, шухăшĕ, ăс-хакăлĕ, чăваш поэзийĕн хăйне евĕрлĕхĕ, вăйĕ, поэт ăсталăхĕ…»[1].

В.П.Тимаков тата Г.Я.Хлебников тĕпчевçĕсем те «Тилли юррисене» чăваш халăх сăмахлăхĕн витĕмлĕ тĕлĕшĕнчен пăхса тухнă. В.П.Тимаков ăсчах шухăшĕсем Г.Я.Хлебников тĕпчевçĕпе пĕр евĕрлĕрех пулни сисĕнет. Геннадий Яковлевич хайлав проблемине, тĕп шухăшне, жанрне т.ыт.те уçса парать. «Тилли юррисене» хаклать май вăл çакнашкал шухăш патне килсе тухать: «Поэма «Песни Тилли» Хузангая поражает нас не только

[1] Долгов В.А. Ырă сăнарсен илемĕ. – Шупашкар, 1978. – С. 67.

народностью и философичностью содержания, но и художественной выразительностью и отточенностью, яркой образностью языка»[2].

Виталий Юмарт тĕпчевçĕ «Тилли юррисене» маларах тĕпченĕ ăсчахсем каланине хирĕçлемесĕр хайлава тарăнрах тишкерет. Ун шучĕпе «юрăсен» пĕлтерĕшлĕхне, илемлĕхне халăх сăмахлăхĕн витĕмĕпе çеç ăнлантарни çителĕксĕр. Вăл «Тилли юррисене» тĕнче поэзийĕн традицийĕсем еплерех витĕм кӳнине, «поэт çак хайлавсенче, чăваш историне илемлĕх меслечĕпе тĕпчесе, халăх пурнăçĕнчи пĕр тапхăра, ун чухнехи çыннăн шухăш-кăмăлĕ мĕнле улшăнса, пиçĕхсе чĕрĕлĕхне упранине»[3] кăтартса парать.

Эпир диплом ĕçĕнче хисеплĕ литературоведсен шухăшĕсене шута илсе «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕн поэтикине тишкересшĕн. Хайлав поэтикине тĕпчес ĕçе ăнăçтарасси унăн тĕп тĕллевне тĕрĕс уçса панинчен килет. Диплом ĕçĕнче эпир П.П.Хусанкайăн «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕнчи сăвăсен тытăмне, стиль, илемлĕх хатĕрĕсемпе сăнарлăх мелĕсен уйрăмлăхĕсене, сăвă виçине пăхса тухатпăр.

Хамăр ĕçре эпир чи малтанах поэтика ăнлав пĕлтерĕшне чăваш литератури контекстĕнче пăхса тухатпăр. Поэтика ăнлав пĕлтерĕшĕ антика тапхăрĕнчен пуçласа паянхи кунччен епле улшăнса пынине сăнаса тухатпăр. Хамăрăн ĕçе эпир уйрăмах Г.Я.Хлебников, Г.И.Федоров тĕпчевçĕсен шухăшĕсем çине таянса йĕркелетпĕр. Г.Я.Хлебников тĕпчевçĕ поэтика ăнлава ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш писателĕсемпе поэчĕсен, уйрăмах Михаил Акимов-Аруй, Ахах Иванĕ, Георгий Тал-Мăрса, Илле Тăхти, Çеçпĕл Мишши, Федор Павлов тата ытти çыравçăсен хайлавĕсене тĕпчесе уçса парать. Ăсчах поэтика ăнлава уçса панă май унăн çак пахалăхĕсене палăртать: çыравçăн илемлĕх ĕлкисем (эстетикăллă идеалĕсем) тата тĕнчене сăнласа кăтартас тĕп йĕркисем – пултарулăх меслечĕсем, стилĕн виçĕ тĕрлĕ туртăмĕ – конкретлă реализмлă, романтикăллă, фольклорлă, жанр системи пуянлăхĕ. Тĕпчевçĕ поэтикăн виçе пахалăхĕ урлă çак ăнлавăн пĕлтерĕшне «Чăваш совет литературин поэтики» (1990) кĕнекере тĕпчесе ăнлантарать.

---

[2] Хлебников Г.Я. Чувашская литературная классика и ее наследники. - Чебоксары, 2001. – С. 235-236.
[3] Юмарт В. Тилли кăна Тили тееççĕ // Тăван Атăл. – 1987. - № 6. – С. 60.

Чăвашсен тепĕр паллă литературовечĕ Г.И.Федоров поэтикă ăнлава хăйне евĕр курать. Ун шучĕпе поэтика вăл пĕр-пĕр литературăри е уйрăм çыраçăн пĕтĕм пултарулăхĕшĕн палăртуллă, пĕрлехи сăрсене, детальсене тĕпчени. Уйрăм хайлавăн роман, комеди, повесть т.ыт.те) стиль хатĕрĕсене, сăнлăх-сăнарĕсене илемлĕх енчен тишкерет. Тĕпчевçĕ сăнарлă пуплев поэитикине уçса парать. Сăнарлă пуплев поэтики сăнлав деталĕсен, стиль сăрĕсен пĕтĕмĕшле енĕсене тата уйрăм хайлавшăн кирлĕ уйрăмлăхсене тишкерет. Тĕпчевçĕ хăйĕн шухăшĕсене «Чăваш литературин сăнарлă пуплев теорийĕ» (1994) кĕнекере çырса кăтартнă.

Унсăр пуçне эпир диплом ĕçĕнче «Тилли юррисен» композици поэтикине Ю.М.Никишовăн «Лирика: Поэтика и типология композиции» (1990) кĕнеки çине таянса уçса паратпăр. Вăл лирикăллă сăвăсен тытăмĕн тĕрлĕ тĕсĕсене кăтартса парать.

Литература несĕлĕсем хушшинче лирика уйрăм вырăн йышăнать. Лирикăпа нумай енчен тишкернĕ, ăна поэтика тĕлĕшĕнчен тĕпчени уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Классицизм тапхăрĕнчех жанрсен поэтикине тишкерме тытăннă. Ку таранччен пухнă паха опыт çине таянса паянхи кун жанрсен теорийĕ çине çĕнĕлле пăхма вăхăт çитрĕ. Хальхи вăхăтра сăнарлă поэтикăна тата сăвăхывăм уйрăмлăхĕсене тĕпчесси тĕп вырăн йышăнать.

Çапах та лирикăллă хайлава формăпа содержании пĕрлĕхĕ тĕлĕшĕнчен тĕпчесси питĕ кăткăс ĕç. Сăвăласа çырнă хайлава проза урлă уçса пама питĕ йывăр. Эпикăпа тата драмăпа танлаштарсан лирикăра сюжет аталанăвĕ çук, çавăнпа та ăна каласа пама май килмест.

Лирикăллă хайлав содержанине Никишов Ю.М. композици тишкерĕвĕ урлă уçса пама сĕнет. Çак меслет тухăçлăхĕпе пахалăхне вăл çапла ăнлантарса парать: «Композиция сама по себе обнаруживает двойственную природу: это компонент формы, но формы организующей именно содержание как целое»[4]. Лирикăна содержани енчен тишкерни унăн хăйне евĕрлĕхне кăтартса пама пулăшать. Çапах та кунашкал тишкерӳ сăвăллă хайлавăн кашни пайне ăнлантарса пама ыйтать. Ю.М.Никишов урăхларах

[4] Никишов Ю.М. Лирика: Поэтика и типология композиции. – Калинин, 1990. – С. 4.

çулпа кайма сĕнет. Вăл лирикăллă хайлаври поэтăн шалти тĕнчине – шухăша кайни, туйăмсен тата чун тăрăмне – тĕпе хурать. Унсăр пуçне çут çанталăк сăнласа паракан хайлавсенче автор ăнĕ тулашри тĕнчене епле ăша хывни, портрета сăнлакан сăвăсенче характеристика мелĕ т.ыт.те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Малалла та каласа кайма пулать, апла пулин те пĕтĕмĕшле лирикăллă хайлавсен содержанине шухăш, çырса кăтартни т.ыт.те ăнлавсем урлă палăртма пулать. Пĕр-пĕр текста тишкернĕ чухне ятарлă ăнлавпа усă курма тивĕçлĕ.

Хайлав содержанине калăплама композици пулăшать. Сăввăн композицине ăнланса илсен поэтăн шухăшĕпе туйăмĕсен йĕркине, урăхла каласан сăввăн чăн содержанине, курма пултаратпăр. Апла пулсан лирикăлла хайлавăн содержанине уçса пама пулать. Çапла майпа композициие тишкерсе лирикăллă хайлавăн «сюжетне» кăтартма май пур. Лирикăллă хайлавсен тыткăмне тишкерсе В.М.Жирмунский тĕпчевçĕ «Композиция лирических стихотворений» (1921) статья çырнă; ку тĕпчев ĕçĕ унăн «Теория стиха» (1925) кĕнекере пичетленнĕ. Ю.М.Никишов лирикăллă сăвăсен тытăмне шăпах çак ăсчах ĕçĕ çине таянса тишкернĕ.

Ю.М.Никишов В.М.Жирмунский ăсчах композиции ăнлава епле ăнлантарнине хирĕçлемест: «Изучение композиции имеет целью выяснить те художественные принципы, которыми определяется в произведении искусства его внешнее построение, распределение или расположение в нем художественного материала»[5]. Çав вăхăтрах тĕпчевçĕ композици ăнлава тарăнтарах тĕпченĕ май ăна содержани пĕлĕшĕнчен пăхма сĕнет. Апла пулин те В.М.Жирмунский хăйĕн ĕçне урăхларах йĕркеленĕ: «Материалом поэзии является язык; отсюда – основная задача работы: выяснить те факты языка, в которых прежде всего осуществляется композиционное задание»[6]. Тĕпчевçĕ шучĕпе сăвва калăпламалли тĕп йĕрке «закон художественного упорядочения словесного материала…»[7].

---

[5] Жирмунский В.М. Теория стиха. – Л., 1975. – С. 433.
[6] Жирмунский В.М. Асăннă ĕç. – Л., 1975. – С. 433.
[7] Жирмунский В.М. Асăннă ĕç. – Л., 1975. – С. 535.

Эпир хамăр ĕçре, Ю.М.Никишов шухăшĕсем çине таянса, лирикăллă сăвăсен композицине содержании тĕлĕшĕнчен пăхса тухăпăр. Тĕпчевçĕ хăйĕн ĕçĕнче композици тытăмĕн 10 тĕсне уçса панă, кашни тĕсне тĕслĕхпе çирĕплетнĕ. Эпир вара çак тĕссенчен «Тилли юррисемшĕн» чи кирлисене суйласа илсе вĕсен тытăмне тишкерсе тухрăмăр.

Çапла майпа «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕнчи лирикăлла сăвăсен тытăмне тĕпченĕ май пирĕн ума çакнашкал ыйтусем тухса тăраççĕ: лирикăлла сăвăсен тытăмне содержани енчен тĕпчесси тата вĕсен типологи уйрăмлăхĕсене уçса парасси. Эпир хамăр ĕçре «Тилли юррисене» шăпах çак енчен уçса парасшăн.

Диплом ĕçĕнче эпир «Тилли юррисен» стилĕ çинче те чарăнса тăрасшăн. «Тилли юррисен» стиль поэтикине эпир илемлĕх мелĕсемпе сăнарлă чĕлхе уйрăмлăхĕсем урлă кăтартса паратпăр. Çак ĕçе пурнăçлама пире уйрăмах В.П.Тимаковăн «Сăмах илемне туйсан…» (1980) кĕнеки пулăшрĕ. Эпир çак кĕнекери теорийĕ çине таянса хайлаври илемлĕх мелĕсене тупса палăртатпăр.

Çавăн пекех эпир ĕçре илемлĕ текст поэтикине сăвă виçи уйрăмлăхĕсем çине таянса пăхса тухатпăр. Кунта та пире В.П.Тимаковăн çӳлерех асăннă ĕçĕ пысăк пулăшу кӳрет. Сăвă виçин теорине пăхса тухнă хыççăн П.П.Хусанкайăн «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕнчи тĕслĕхсемпе çирĕплетсе хăваратпăр.

Çапла ĕнтĕ, П.П.Хусанкай пултарулăхĕ нумай енлĕ. Эпир хамăр ĕçре «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕн поэтикине сăвăсен тытăмĕ, илемлĕх хатĕрĕсен системи, стиль уйрăмлăхĕ, сăвă чĕлхине илем кӳрекен сăвă виçи йĕркелевĕш урлă кăтртса паратпăр.

I сыпăк

## «Поэтика» ăнлав чăваш литератури контекстĕнче

Мĕн вăл поэтика? Литературăн кашни тапхăрĕ поэтикăри уйрăмлăхсене палăртать. Çакна историлле поэтика науки тишкерет. Вырăссен паллă ученăйĕ М.Б.Храпченко каланă тăрăх çак ăслăлăх «тĕнчене сăнарлă уçса кăтартакан майсемпе мелсен аталанăвне, вĕсен социаллă-эстетикăллă витĕмлĕх функцийĕсене, илемлĕх тĕлĕшĕнчен çĕнĕлĕхсен кун-çулне тĕпчет».[8]

Авалхи грексен паллă ăсчахĕ ăристотель пĕрремĕш поэтика ăнлава «Об искусстве поэзии» ятлă кĕнекере системăллă уçса пама тăрăшнă. Ăнтика тапхăрĕнче поэтика вăл – пĕтĕмĕшле илемлĕ хайлав çинчен вĕрентекен ăслай шутланнă. Вăтам ĕмĕрсенче, уйрăмах классицизм тата Чĕрелӳ тапхăрĕнче, ку ыйту тавра тухăçлăн ĕçленĕ. Çак тапхăрта «пиитика» тесе поэтикăна каланă. Вăл вăхăтра поэтика чĕлхен сăнарлăхне тата сăвă çырас ăсталăхăн уйрăмлăхĕсене палăртассипе çыхăннă. Н.Буало «Поэтическое искусство» (1674) ятлă кĕнекере тата çкалигер «Поэтика» ятлă ĕçĕнче поэтикăна литературăри жанрсен формисене тĕпчекен ăслăлăх тесе палăртнă. Вăл вăхăтра поэтика хăйне тĕллĕн наука пек аталанма тытăннă.

Раççейре поэтика наукине пĕрремĕш йĕркелесе аталантараканĕсем шутне М.В.Ломоносова тата В.К.Тредиаковский ăсчахсене палăртмалла. XIX ĕмĕрте ку ыйтупа А.Х.Востоков тĕпчевçĕ нумай ĕçленĕ. А.С.Пушкин, Н.В.Гоголь, И.С.Тургенев, Ф.М.Достоевский, Л.Н.Толстой, А.П.Чехов тата ытти вырăс классикĕсем литературăна тĕпчени поэтика наукине пысăк витĕм кӳнĕ. Уйрăмах В.Г.Белинскийăн «Разделение поэзии на роды и виды» (1841) ĕçĕ паллă вырăн йышăнать.

Историллĕ поэтика ăслăлăхăн никĕсне хываканĕ – Александр Николаевич Веселовский. Унăн «Историческая поэтика» (1940) ятлă кĕнекинче Германири историпе филологи шкулĕн концепцийĕ тĕпре тăрать. Поэтика ăслăлăхне системăлас тĕлĕшпе совет литературовечĕсем тухăçлă ĕçленĕ. В.Виноградов тĕпчевçĕ поэтикăпа стилистикăна уйăрса пăхнă. Вăл

[8] Храпченко М.Б. Художественность, творчество, действительность, человек. – М., 1976. – С. 357.

«Стилистика. Теория поэтической речи. Поэтика» (1963) ятлă кĕнекере хăйĕн шухăшĕсене уçса панă. Ю.Лотман «Структура художественного текста» (1970) кĕнекере поэтикăн тытăмне тишкернĕ. Паллă совет ăсчахĕ М.Б.Храпченко хăйĕн «Художественное творчество, действительность, человек» (1976) поэтика мĕн иккенне тишкерсе çакăн пек пĕтĕмлетӳ тунă: «Поэтика тесе пурнăçа сăнарлăн уçса кăтартакан, ăна илемлĕ те витĕмлĕ ăсталаса палăртакан майсемпе мелсене… калаççĕ». Поэтика шутне вăл пултарулăх меслетне, стиль, жанр уйрăмлăхĕсене кĕртет. Вĕсене пĕр-пĕтĕмĕшле сăнарлăх системи пек пăхмалли çинчен калать.

Храпченко М.Б. академик ĕçĕсем çине таянса чăвашсен паллă тĕпчевçи Г.Я.Хлебников поэтика ăнлава уçса пама тăрăшать. Вăл хăйĕн «Чăваш совет литературин поэтики» ятлă кĕнекинче чăваш литератури аталанăвĕн малтанхи тапхăрĕнчи (1917-1922 çç.) поэтикине уçса парать. Ăсчах шухăшĕпе: «Произведени мĕн чухлĕ витĕмлĕ те чăнлăхлă, хăйне евĕр илемлĕ пуласси талантăн стихийăллă вăйĕнчен çеç килмест. Вăл тĕнчене художник мĕн чухлĕ тĕрĕс те тарăн ăнланнинчен, ăна сăнаса, тĕпчесе пĕлнинчен тата мĕнлерех сăнарлăх туртăмĕсене, илемлĕх идеалĕсене шыраса тупнинчен, пĕтĕмлетсе каласан – тухăçлă меслетрен нумай килет».[9]

Тĕнче литературинче обществăн ăс-хакăлĕпе сăнарлă шухăшлав шайĕн, хăйнеевĕрлĕхне пула тĕрлĕ пултарулăх меслечĕсем аталаннă: натурализм, романтизм, классицизм, реализм т. ыт. те.

«Меслет вăл – чăнлăха тĕпчесе пĕлмелли çул-йĕр. Пултарулăх меслечĕ тесе тĕнчери мĕн пур пулăма шалти çыхăнура (системăра) тишкерсе витĕмлĕн кăлартма пулăшакан сăнарлă пĕтĕмлетӳн тĕп майне калаççĕ» - тесе çирĕплетет Г.Я.Хлебников.

Тĕпчевçĕ хăйĕн ĕçĕнче чăваш совет литературин малтанхи тапхăрĕнче вăй хунă писательсемпе поэтсен поэтика уйрăмлăхĕсене тĕпчет. 1917-1922 çулсенчи чăваш литературин поэтики аталанса, пуянланса пынин, сăнарлăх тĕлĕшĕнчен çĕнĕ пахалăха куçнин сăлтавĕсене кăтартса парать.

---

[9] Хлебников Г.Я. Чăваш литературин поэтики: Малтанхи тапхăр (1917-1922). – Шупашкар, 1990. – 7 с.

Чи малтанах писательсен илемлĕх ĕлкисем тата пултарулăх меслечĕсем çĕнелме тытăннине палăртать. Ку тапхăрти чи пысăк çĕнĕлĕх – халăхăн поэтикăллă ăс-тăнĕ вăранма пуçланине кăтартма тытăнни. Ку тĕлĕшпе Çеçпĕл Мишшин «Тинĕсе», «Пурнăçпа вилĕм», «Иртнĕ самана» тата ытти сăввисем, Иван Ахахăн тата Георгий Тал-Мăрсан калавĕсем пĕлтерĕшлĕ.

20-мĕш çулсенче стиль туртăмĕсем те аталанаççĕ. Тепрен илсен романтикăллă, фольклорлă, конкретлă реализмлă юхăмсем вăй илеççĕ. Конкретлă реализмлă стиль туртăмĕнчи чи пысăк çитĕнӳсем – Ф.Павловăн «Сутра» комедийĕнчи Ухтеркке сăнарне тата «Ялта» драминчи Елюкпа Ванюк трагедине уçса пани.

Романтикăллă стиль ытларах поэзире аталанать. Çеçпĕл, Тал-Мăрса, Ахах лирикинче çак стиль уççăнах курăнать.

Çеçпĕл Мишшин поэтики, унăн лирикин сăнарлăхĕ тĕрлĕ тĕслĕ те пуян. Сăвăç поэтикинче чи малтанах «…лирикăллă геройĕ чун хавалĕпе тĕлĕнмелле хастар та маттур ĕçчен, максималист – çын пулни яр уççăн курăнать. Вăл – пурнăçа тĕпрен улăштарас хевтеллĕ çеç мар, вулакана та çавна тума, кĕрешме, тĕрлĕ конкретлă ĕçре «хастарлă, хыт утăмлă» пулма хистекен, хавхалантарса яракан çĕнетӳçĕ те».[10]

Чăваш сăвăçи çак çĕнĕ содержание уçса пама юрăхлă поэтика мелĕсене тупнă. Поэт чăваш поэзине çĕнĕ сăвă тытăмĕ – силлабо-тоника системине йĕркелени пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Çеçпĕл çак сăвă тытăмĕн мĕн пур тĕп виçине те – икĕ сыпăклисемпе те (ямб, хорей), виçĕ сыпăклисемпе те (амфибрахий, анапест) усă курать.

Тĕслĕхрен, «Хурçă шанчăк» сăвăра поэт сăмахĕн ритмĕ, пуплев кĕвви марш евĕр. Марш кĕввине ĕнерме пулăшаканĕ кунта – анлă стопаллă, виçĕ сыпăклă сăвă виçи (амфибрахий).

[10] Хлебников Г.Я. Асăннă ĕç. 78 с.

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕр-шывăн хастар ачисем,
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен.

*(«Хурçă шанчăк»)*

Çеçпĕл Мишши силлабо-тоникăпа çеç мар, ытти сăвă тытăмĕсемпе те усă курнă. Малтанхи сăввисене поэт чăваш халăх сăввине çывăхрах виçепе – силлабикăпа – çырать («Иртнĕ самана», «Пурнăçпа вилĕм» т. ыт.) Çак сăвăсенче темле чуна çывăх, ачаш та хурлăхлă туйăм витерсе тăрать. Кун пек содержании енне сăвă форми те туртнă пулмалла.

Поэт хăй пурнăçĕн юлашки тапхăрĕнче тоника сăвă тытăмĕпе е унăн мелĕсемпе, формисемпе (дольник, верлибр, ирĕклĕ сăвă) усă курать. Тĕслĕхрен, «Выç псалом», «Юлашки чĕл алăра…», «Кĕпер хывăр» т.ыт. сăвăсенчи ытла та йывăр кăмăл чуна пырса тивет.

Çулсем… Çулсем çинче вилсем,
Укăлчасем панче вил-шăмсем,
Ах, йывăр, йывăр, пăчă…
Эй!
    Эсир,
        Чĕррисем,
Вилсем урлă, шăм куписем çинче
Хĕвеллĕ ыран енне
Кĕпер чĕнтĕрлĕр.
Ах!
    Кĕпер чĕнтĕрлĕр.
Эпĕ
    Халран кайса ÿксессĕн,
Ман урлă таптаса кайăр,
Тимĕр урасемпе чĕрем çине
Хăюллăн таптăр.

*(«Кĕпер хывăр»)*

Çеçпӗлӗн сӑнарлӑх тытӑмне йӗркелекен тепӗр илемлӗх туртӑмӗ – трибун-оратор стилӗ. Çак сӑвӑсене поэт ытларах чухне халӑх умӗнче калама, унпа тӳррӗн калаçма, ӑна «агитацилеме» çырнӑ. Çеçпӗл сӑввисем хӑйсен тытӑмӗпе пурте тенӗ пекех калаçу (диалог) формипе йӗркеленнӗ. Поэт (е унӑн лирикӑллӑ геройӗ) кама та пулин час-часах оратор пек чӗнет, йыхӑрать, хушать.

Эй, ваттисем!
Эй, ват çынсем!
Авал чӑваш асаплӑ пулнине
Çамрӑксене каласа парӑр:
Тӑван çӗр-шывӑн капӑр чӗлхине
Ялан савма хушса хӑварӑр.

*(«Чӑн чӗрӗлнӗ!»)*

Поэт сӑввисенчи герой чунтан калаçнине пуплевӗн оригиналлӑ форминчен, хӑйне евӗрлӗ сӑнлӑхлӑ, çӗнӗ тытӑмлӑ чӗлхе стилӗнчен те туйса илме пултаратпӑр.

Çеçпӗл Мишшин сӑввисен композицийӗ те çав çивӗч диалог йӗркине пӑхӑнать. Вӗсенче, лирика геройӗсӗр пуçне, объективлӑ тӗнче сӑнӗсемпе уйрӑм персонажсем те курӑнма пултараççӗ.

Тӗслӗхрен, «Чӑваш арӑмне» сӑвӑра чӑваш хӗрарӑмӗпе ку-çулӗ, «Тинӗсе» сӑвӑра чӑваш поэчӗпе унӑн тӑван халӑхӗ тата ыттите тухса тӑраççӗ.

Сӑвӑсен сӑнарлӑх вӑйне витӗмлӗ поэтика синтаксисӗ те ӳстерет.

Трибун-оратор стилӗпе çырнӑ сӑвӑсене хистевлӗ тума калаçу сӗмӗ те пулӑшать. Унӑн «Хурçӑ шанчӑк» сӑввинче час-часах оратор чӗлхин мелӗсемпе, хире-хирӗç шухӑшсемпе ӗнентерсе е тӳррӗн, çивӗччӗн, касса пуплет. Тепӗр енчен, герой хӑйӗн ӗненӗвӗн çирӗплӗхне тӗрлӗ хутламсемпе, контрастсемпе, риторикӑллӑ иккӗленӳпе тата ытти мелсемпе вӑйлатать.

Çеçпӗл Мишшин поэтики хурлӑхлӑ е тунсӑхлӑ стиль туртӑмӗпе те вӑйлӑ, философиллӗ шухӑшлав сӗмӗсем те, пуласлӑх çинчен ӗмӗтленни тата ытти те пур.

Çеçпĕл поэзийĕ пĕтĕмĕшле илсен романтикăллă стиль туртăмне пăхăнса тăрать. Унăн пуласлăха кăтартакан сăвăсенче уйрăмах – çап-çутă та вĕри тĕссемпе пуян, юмах-халапри гиперболлă сăнлăхсемпе (символ, аллегории, эпитет, метафора, сăпатлантару тата ытти) çиçсе тăрать.

Çеçпĕл хăйĕн сăввисенче тата символлă тĕссемпе нумай усă курать. Тĕслĕхрен: хĕрлĕ тĕс – революцие пĕлтерет, кăвакки – юратăва, тасалăха, сип-симĕс улăх – телее, сар хĕвел – ырлăха, хура уй – хуйăха тата ытти те.

Çапах та поэзире, Çеçпĕл шучĕпе, тĕссенчен те ытларах, тĕп вырăнта сасăсем тăраççĕ. Сасăпа çутçанталăкри тĕссен çеç мар, сас-чĕвĕ, шав-шава та ӳкерсе парса, тĕлĕнмелле чĕрĕ ӳкерчĕксем тунине «Тинĕсе» сăвăра яр уççăн курăнать. «Тинĕсе» сăвăра тинĕс хăвачĕ пĕрре лăпланса выртнийĕ, тепре шавласа кайнийĕ сасă янравĕнче те, сасă юхăмĕнче те вăйлă туйăнать.

Вĕççĕр-хĕрсĕр тинĕсĕм,
Хуп-хуран, сип-симĕсĕн,
Кăпăк тумлăн, хумлăн, хумлăн
Çырана çапса хăюллăн
Хумлă сулнăнсемпе сулăн,
Хумлă кăпăкпа вĕре.
*(«Тинĕсе»)*

Фольклорлă стиль туртăмĕ те ку вăхăтра самаях паллă вырăн йышăнать. Çеçпĕл Мишшин сăввисенче чăваш халăх сăмахлăхĕн ырă витĕмĕ те сисĕнет. Тĕслĕхрен, «Çĕн Кун аки» сăвăри «Çĕн ĕмĕр чăвашĕ», хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнекенскер, чăвашсен халапĕсенчи Улăпа аса илтерет. «Хурçă шанчăк» сăвăра поэт çамрăксене юмахри вут кайăк пек вĕçме, малалла ăнтăлма сĕнет.

Анчах халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене е мелĕсене сăвва кĕртни Çеçпĕл лирикинче нумаях мар. Ытларах вăл халăх сăмахлăхĕн ăслăлăхĕпе гуманизмне ăша хывать, унăн илемлĕхе ăнланас майĕсене, тĕнчене сăнарлă курас, туяс туртăмне хăйĕн индивидуаллă поэтикине кĕртсе пуянлатать.

Çапла Çеçпĕл Мишши чăн-чăн çавра ăсти пулнă, вăл чăваш сăввине нумай çĕнĕлĕх кĕртнĕ. Çавăнпа та хальхи чăваш поэзийĕ çинчен калаçнă

чухне «Çеçпĕл шкулĕ» тени питĕ вырăнлă та тĕрĕс.[11] Анчах сăвă тытăмĕ Çеçпĕл поэзийĕн пĕр енĕ кăна-ха. Чи малтан çак çĕнетӳ – поэтăн паттăрлăх кĕввисене ыйтакан çĕнĕ содержани пулнă, ун никĕсĕ – çĕнĕ меслет. Çавăнпа Çеçпĕл Мишши витĕмĕ вăл поэзие ырă витĕм кӳнинче кăна мар. Ун тĕп пархатарĕ – пурнăçа çĕнĕлле сăнласа панинче, çавна пула пĕтĕм чăваш литературине – çав шутра прозăпа драматургине те, критикăпа публицистикăна та – çĕнĕлле вăйăм панинче.

«Çеçпĕл шкулĕ – пирĕн поэзин пуласлăхĕ» - тăтăшах аса илтернĕ П.Хусанкай. Вăл хăй çав шкулăн аслă вĕрентекенĕ пулнă, вăл хăй Çеçпĕл пуçарнă çĕнĕлĕхсене малалла тăсассишĕн çине тăрса кĕрешнĕ. Аслă ăру ĕçĕнче мĕн лайăххи пур, çавна çамрăккисен алла илмелле, унсăрăн малалла кайма çук – çапла вĕрентнĕ П.Хусанкай. «Поэзире (пĕтĕм литературăра та) чи кирли – пуян чĕлхе. Вăл – тĕп никĕс… Чĕлхепе хуçа пулмасăр, сăмаха мĕнле кирлĕ çапла (анчах пăсмасăр, хуçмасăр) авкалама вĕренсе çитмесĕр, Европа культурин шайне çĕкленнĕ поэзии техникине алла илмесĕр пысăк шухăшлă та илемлĕ, уçăмлă та витĕмлĕ япала çырма çук»[12]. Шухăшпа илемлĕх курăмне, сăвă ăсталăхне Çеçпĕлтен вĕренме хистесе, Хусанкай чăваш сăввин янравлăхне ӳстерес тесе хăй те сахал мар çĕнĕлĕх шырать. Тăван сăмахăн мĕн пур хăватне Çеçпĕл уçнă çулпа пырсан çеç туллин кăтартма пулать тесе шутланă халăх поэчĕ.

30-40-мĕш çулсенче, «Тилли юррисем» çырнă тапхăрта жанр системи те пуянланать. Шăпах çак çулсенче чăваш драматургийĕ чăмăртанса çитнине палăртмалла. Революциччен ик-виçĕ пьеса çеç çыраннă пулсан, халĕ вара драматургин пур тĕп жанрĕ те çуралать: комеди, драмăн тĕрлĕ тĕсĕсем (йăла-йĕрке, истории, характер, психологи драмисем), трагедие çывăх пьесăсем. Геннадий Яковлевич шучĕпе ку тĕлĕшрен Федор Павловăн пьесисем пуç пулса тăраççĕ. Çамрăк драматург ку вăхăтра ытларах юморпа, çемçе кулăшпа çĕкленет. ХХ-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Ф.Павловăн «Сутра» (1918-1919) комедипе палăрать. Г.Я.Хлебников каланă тăрăх Ф.Павлов комедин

---

[11] Иванов Н.И. Чăваш сăвви. – Шупашкар, 1977. – 138 с.
[12] Хусанкай П.П. Пин-пин чĕре. – Шупащкар, -

принциплӑ ҫитменлӗхӗпе эстетикӑллӑ хакӗ – вӑл халӑхӑн кулленхи пурнӑҫне, йӑлисене, тӗрлӗ йышши ҫынсене туллин те уҫӑмлӑн ӳкерсе пама кӑмӑллани. М.Акимов-Аруй, Н.Ефремов, Г.Тал-Мӑрса пекех, вӑл тата кивӗ чӑваш ялӗн пурнӑҫне ҫав вӑхӑтри историллӗ самана паллисемпе ҫыхӑнтарса уҫса пама тӑрӑшать.

Анчах та ҫыравҫӑ ыттисем пек уҫӑ публицист та, ӑса вӗрентекен те мар. Вӑл объективлӑ сӑнавҫӑ, ҫав хушӑрах тарӑн лирик та. Тӗпчевҫӗ калашле: «Живописность и яркая изобразительность сцен, объективность хода событий сочетается здесь с тонкой лиричностью и комической выразительностью»[13]. Хӑйӗн геройӗсене вӑл час-часах ҫемҫе кулӑшпа ҫупӑрласа вӗсене нумай енлӗн уҫса парать, аталанура курма вӗрентет. Драматург хӑйӗн хайлавӗнче уйрӑм ҫын хӑйевӗрлӗхне, унӑн шалти тӗнчине курма тӑрӑшни сисӗнет. Унсӑр пуҫне Ф.Павлов чӑн-чӑн сӑмах ӑсти те: вӑл калаҫу виҫине, ун янӑравне, сӑмах «тутине», «шӑршине» те лайӑх туять. Ун поэтикинче «яркое своеобразие – нечто «федоропавловское» [14] куҫа курӑнать.

«Сутра» комеди чӑваш ҫыннин килти пурнӑҫне пирӗн куҫ умне мӗнле пур, ҫавӑн пек, пӗтӗм вак-тӗвекпе кӑларса тӑратать. Хресченӗн кулленхи ӗҫӗ-хӗлӗ, йӑли-тыткаларӑшӗ кунта ал тупанӗ ҫинчи пек уҫҫӑн курӑнаҫҫӗ. Пьесӑра халӑхӑн тӗрлӗ йышши ҫынсен пӗтӗм нуши-ыйтӑвӗ, ҫитменлӗхӗ, вӗри кӑмӑлӗ, кӑмӑл-туйӑмӑн уйрӑмлӑхӗ паллӑ вырӑн йышӑнать. Ҫав вӑхӑтрах, сюжета йӗркелеме пӗлнӗрен, ҫыннӑн вак-тӗвек калаҫӑвӗ, харкашӑвӗ витӗр автор идеалӗн ҫути тӗлкӗшме тытӑнать. Вӑл ҫынсен тӳркесленнӗ, хытнӑ кӑмӑлне, усал йӑли-халине ҫутӑлӑхпа культура шайӗнче пӑхса хаклама вӗрентет. Хайлавра сута пынӑ ҫынсен нуши-ӗмӗтне, татса памалли ыйтӑвӗсене кӑларса тӑратать. Комедири тӗп герой Ухтеркке вырӑс классикӗсем Н.В.Гогольпе Ф.М.Достоевский сӑнласа панӑ «пӗчӗк ҫын» йышши сӑнарсене аса илтерет. Анчах пӗтӗм харкашулӑхӗ, чӑкӑлташлӑхӗ, вак-тӗвеклӗхӗ сӑнарӑн чӑн тӗшши мар-ха. Чӑннипе, комедин тӗп хирӗҫӗвӗн тупсӑмӗ – Ухтеркке питӗ тӳрӗ чунлӑ, чӑнлӑхпа тӗрӗслӗхе юратакан лайӑх ҫын пулни, кил-йышри ирӗклӗхе

---

[13] Хлебников Г.Я. Чувашская литературная классика. – Чебоксары, 2000. – С. 127.
[14] Там же. – С. 128

путарнине сивлени, ӗлӗкхи ырӑ йӑласене сӗмсӗррӗн пӑснине, ҫын чунӗ хытса, усалланса кайса, виҫерен тухса иртӗхнине ҫирӗппӗн хирӗҫ тӑни. «Образ Ухтеркке – это оригинальный социально-психологический тип, созданный творческой фантазией художника и освещенный умной и доброй улыбкой гуманиста», - тесе ҫирӗплетет ӑсчах[15]. Вӑл хӑйне евӗрлӗ кулленхи пурнӑҫ Дон Кихочӗ пек курӑнса каять. Ҫак хӑватлӑ гуманизмла идея ӗнтӗ вилӗмсӗр тӑвать те «Сутра» комедие.

Ф.Павлов хӑйӗн тепӗр хайлавӗнче «Ялта» (1916-1922) драмӑра та уйрӑм ҫыннӑн ирӗклӗх ыйтӑвне хускатнӑ. Ку вӑл социаллӑ танмарлӑх пусмӑрӗнчен хӑтӑласси ҫеҫ мар, ҫын хӑйӗ ӑнлану ансӑрлӑхӗнчен, тӗттӗмлӗхӗнчен, культурӑсӑрлӑхӗнчен тухасси те. Кашни ҫын хӑйӗн чӑн ирӗклӗхне тупасси. «Ялта» пьеса сюжечӗ ҫак тӗп идея аталанӑвӗн тапхӑрӗсенчен тытӑнса тӑрать те ӗнтӗ. Чи малтан Ҫтаппан Елюка хӑйӗн туйӑмне ирӗксӗррӗн йышӑнтарма хӑтлансан ӑна хӗрарӑм хыттӑн хирӗҫлет. Иккӗмӗш хутӗнче Ҫтаппан чеерех. Елюк упӑшки вилнӗ текен суя ҫыру шутласа тупать те хӗрарӑма чӗрине тивретет. Хӑйне тискеррӗн улталанӑ ҫыннах качча тухма та килӗшет. Г.Я.Хлебников каланӑ тӑрӑх унӑн сӑлтавӗ «хӗрарӑм чунӗ ҫемҫелӗхӗнче – ҫынна хӑвӑрт манма, ӗненме пултарнинче ҫеҫ мар. Унӑн тӗттӗмлӗхӗнче те, социаллӑ-политикӑллӑ тавракурӑмӗпе культури ансӑрлӑхӗнче те»[16].

Пьеса вӗҫӗнче хӗрарӑм, хӑйӗн чӑн, таса упӑшкине, тыткӑнран аманса та тем тӗрлӗ асапланса та тем тӗрлӗ асапланса таврӑннӑ ҫынна йышӑнманни. Елюк хӑй йӑнӑш тунине ӑнланса илет, уншӑн ӑна упӑшки нихӑҫан та каҫармӗ. Унчченхи телейне – шалти чун канӑҫне те никам та тавӑраймӗ.

Ҫапла вара Ф.Павлов драматургийӗнче чӑваш литературин психологиллӗ реализмӗ тарӑнланать: писатель этем чун-чӗрин вӑрттӑн енӗсене, кӑмӑл-сипетӗн кӑткӑс та хирӗҫӳллӗ аталанӑвне уҫса парать. Ҫавна май ҫынсен пурнӑҫӗнчи кӗтмен ҫӗртен пек сиксе тухакан пӑтӑрмахсемпе шалти пысӑк инкекӗсене кӑтартать. Ҫак сӑлтавсене пула чӑваш драматургийӗ характер комедийӗпе психологиллӗ драма жанрӗсемпе пуянланнӑ та ӗнтӗ.

---

15 Хлебников Г.Я. Чувашская литературная классика. – Чебоксары, 2001. – С. 135.
16 Хлебников Г.Я. Чӑваш совет литератури поэтики. – Шупашкар, 1990. – С. 53

Маларах каланине шута илсе çакна каласа хăвармалла: драматургăн стиль тĕлĕшĕнчен поэтика тĕп туртăмĕ – социаллă пурнăçа объективлă та конкретлă – реализмлă сăнласси палăрать.

1917-1922 çулсенчи революциллĕ лару-тăру витĕмĕпе тапса тухнă ирĕклĕ шухăш-туйăм сăмах искусствин поэтикине витĕм кÿмесĕр юлма пултарайманнине эпир маларах асăнса хăварнăччĕ. Граждан вăрçи вăхăтĕнчи чăваш литературин поэтики Ахах Иванĕн хайлавĕсенче лирика е кулăш мелĕсемпе витĕмленсе пуянланнă. Ахах Ивана халăха кирĕ ыйтусемпе асра юлмалла, чуна тивмелле çырнă очерксемпе тĕрленчĕксем, новеллăсемпе сăвăсем пичетлесе хăварнă. Çав хайлавсен çĕнĕлĕхĕпе хаклăлăхĕ – икĕ тĕнче кĕрешĕвне, граждан вăрçи тапхăрĕнчи вичкĕн хирĕçÿсене кăтартни, çынсен шухăш-кăмăл палăрăшĕсене ĕненмелле, чăн-чăн реалист куçĕпе сăнлани. Автор унпа пĕрлех хăй хăш класс çыннисене юратнипе сивленине публицист пек уççăн палăртса çырнă, хăйĕн çынлăх туйăмĕсене те чылай туллин уçса панă.

Акă, тĕслĕхрен, «Икĕ виле» новелла (1919). Кунта, пĕр енчен, çĕр чăмăрĕ çинчи пусмăрçăсемпе ĕçхалăх кĕрешĕвне <u>символлă сăнлăхсемпе</u> пĕтĕмлетсе кăтартнă. Çав хушăрах пĕтĕмлетÿллĕ ÿкерчĕке лирикăллă туйăмпа витерни, пĕр-пĕрне штыкпа чиксе вĕлернĕ çынсем иккĕшĕ те этем пулни, вĕсемшĕн авторăн чунĕ ыратни сисĕнет. Çакна сăмах майлашăвĕ сăвăри пек татăклăн та кĕвĕллĕн, ритмлă илтĕнсе пыни те çирĕплетет. Г.Я.Хлебников ку хайлава автор сăвă кÿлепипе çырнă пулĕ тесе шутлать. Кунта шуррисемпе хĕрлисем хушшинчи çапăçу картинине малтан тĕнче тÿпинчен ырă кăмăллă Этем пăхса тăнă пек сăнласа панă. Çавăнпа этемсем хушшинчи ним уссăр çапăçу, ăнланма хĕн хаярлăх пек тухса тăрать. Тĕслĕхрен: «Тинĕс çинчен хĕрелсе хĕвел тухрĕ, çĕр çине, курăнакан тĕнчене сар хунарпа çутатрĕ. Çак хунар çуттипе тинкеререх пăхсассăн, çÿллĕ тăвăн тăрринче катаран икĕ вилĕ выртни курăнать. Кам-ши ĕнтĕ çаксем? Хăçантанпа пĕр-пĕрне тăшман пулса пурăннă-ши? Мĕншĕн вĕсем çакăнта пĕрне-пĕри чикрĕç-ши?..» Çак хаяр, хĕрхенÿсĕр сăнлăхсем («пĕрне-пĕри чикрĕç-ши?), канăçсăр ыйтусем («кам-ши?.. хăçантанпа?.. мĕншĕн?..») тата лирика сĕмлĕ çутçанталăк ÿкерчĕкĕсем

вилнĕ çамрăксемшĕн куляннине вăйлатса кăтартаççĕ. Малалла автор вĕсен кĕрешĕвĕн чăн-чăн социаллă сăлтавĕсене уçса парать: «Пĕри иккен кусенчен – буржуй ывăлĕ, офицер; патша туса лартасшăн, хырăм пысăклатасшăн çĕртен-шывран уйрăлчĕ. Тепри тата – вăл чухăн, ака-суха тăвакан. Тăшман мăшкăлне тÿссе ку таранччен пурăннă. Улĕм пурнăç тÿрлетме чухăн ирĕкне сыхласа çапăçса вилнĕ иккен вăл (пуянсемпе чухăнсем авалтанпах пĕр-пĕрне тăшман тесе шутланă)». Писатель чĕрĕ çынсен класс интересĕсене пĕтĕм этемлĕх интересĕсемпе çыхăнтарать. Вăл вулакана ирĕксĕрлесе итлеттерес, хăйĕн шухăш-туйăмне пăхăнтарас тĕллев лартманни уççăн курăнать.

Пĕтĕмĕшле илсен Ахах Иванĕн те, Тайăр Тимкин те хайлавĕсем, вăл вăхăтри ытти писательсенни пекех, стиль тĕлĕшĕнчен пăхсан поэтика тĕп туртăмĕ – «социаллă пурнăçа пĕтĕм вак-тĕвекпе уçса кăтартасси, объективлă та конкретлă – реализмла сăнласси – палăрать», - тесе çирĕплетет Г.Я.Хлебников тĕпчевçĕ.[17] Çак çыравçăсен сăррисем чĕрĕ ÿкерчĕклĕ, кунта япала паллисем йышлă. Хайлавсенчи геройсем пурнăçри пек туллии сăн-сăпатлă, характерĕсем тĕрлĕ енлĕ, хирĕçÿллĕ, сюжечĕсем – кăткăс.

Тайăр Тимкки хăйĕн хайлавĕсене прозăпа та, сăвăласа та çырнă, çапах та стиль пĕрлĕхне пула вĕсенче жанр уйрăмлăхĕ сисĕнсех каймасть. Сăмахран, çыравçăн новеллисем («Çутта тухасчĕ», 1906, «Пурнăç çути», 1906) малти ритмикипе прозăллă сăвăсене çывăх. «Çутта тухасчĕ» новеллăра поэтăн публицистикăллă туртăмĕ лайăх сисĕнет. Ку хайлавра Тайăр хăй геройне конкретлă, вăл вăхăтри чăваш пурнăçĕпе тачăрах çыхăнтарса кăтартма тăрăшать. Новеллăра çутă чунĕнчи сÿнми шанчăк евĕрлĕ çеç мар, халăх куç-пуçне, ăс-тăнне уçакан çутă пулни куçа кĕрет. Тайăр геройĕ тем тĕрлĕ хĕн-хурпа чăрмава çĕнтерсе çутта тухать. Çапах та «ял çинче» каллех сĕм-тĕттĕм. «Нимĕн те курăнмасть. Çынсем те пĕртте курăнмаççĕ. Анчах хăшĕ çутăра çÿресен те, ыттисене çутă курма вĕрентиччен аллисене туя тыттараççĕ!»

Тайăрăн лирикăллă геройĕ халлĕхе хăй умне халăха çутта кăларас тĕллев çеç лартать-ха. Тĕттĕмре курăнакан ĕç çынни çутталла туртăнманни

---
[17] Хлебников Г.Я. Чăваш совет литератури поэтики. – Шупашкар. 1990. – С. 24.

ăна пăшăрхантарать. Çапах та сĕм-тĕттĕмре пурăнакан чăваш ĕç çынни культура, хут-кĕнеке çинчен пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн шухăшлама пикенет, анчах Тайăра халăх хуллен вăранни çырлахтараймасть.

«Çутта тухасчĕ» новелла хăйĕн ячĕпе те, тĕп туртăм-тĕллешĕвĕпе те просветительство литературишĕн пĕлтерĕшлĕ хайлав. Автор ытарлă та, систерсе те, вĕрентсе те, публицистла хĕрӳллĕн чĕнсе калать. Новеллăра лирика паллисем те сисĕнеççĕ. Символпа контраст мелĕсемпе автор ытларах çут-çанталăка сăнлать. (Çутă – сĕм-тĕттĕм тата уттите).

Усалпа кĕрешекен ырă вăйсене çĕнтерессе шанни, этем усăллă ĕçпе, тӳрĕлĕхпе пурăнса тата çынлăхпа «çăлăнăç» тупасса ĕмĕтленни «Çăлăнăç» сăвăпа (1906) «Пурнăç çути» (1906) новеллăра яр уççăн курăнаççĕ. «Пурнăç çути» новеллăра Тайăрăн шухăш-кăмăлĕ тĕрекленсе пыни, класс ăнкарăвĕ çивĕчленни аван сисĕнет. Илемлĕ пахалăхĕ тĕлĕшпе новеллăна поэт пултарулăхĕнчи чи лайăх хайлавсенчен пĕри теме пулать. Новеллине Тайăр пĕтĕмпех ытарлă сăнарсемпе, символсемпе усă курса хайланă. Çĕнĕ пурнăç çутипе Тĕрĕслĕх хĕвелĕ символа сăнарсем пулса куç умне тухаççĕ. «Автор пурнăçри пулăмсене, вĕсен конкретлă енĕсене палăртса, реализмла абстрактлăх, символа пĕтĕмлетӳ, тĕрлĕрен ассоциацисем урлă Тайăр çĕр пичĕ çине ырă вăй, тĕрĕслĕх çĕнтерсе пынă пек кăтартать»,[18] - тесе палăртать Ю.М.Артемьев ăсчах.

Кунпа пĕрлех Çĕнĕ пурнăç хĕвелĕ хĕн-хурпа асап тӳссе пурăннă ĕç çыннисене, «ĕмĕрхи ĕçĕпе хурлăхлă юррине юрласа пурăнакансене те» хăй патне йыхăрса, вĕсем паянтан ирĕке тухнине савăнса пĕлтерет. Пĕтĕмĕшле илсен Тайăр тĕрĕслĕх хĕвелĕпе, çутă хăвачĕпе çĕнелнĕ пурнăça утопи евĕрлĕрех ӳкерсе кăтартать. Ăнсăртран мар ĕнтĕ новелла Евангелире вĕрентнĕ пек вĕçленет: «Çапла ĕнтĕ тупĕç вĕсене хирĕç тăракансем ĕмĕрхи хурлăха кĕрĕç».

Тайăр çак новеллăра халăх сăмахлăхĕнче нумайранпа çирĕпленнĕ сăнарлăх системипе, ăслай-мелсемпе (сăмахран, ытарлă каласси, усала сивлесе, ырă вăй çиеле тухасса ĕмĕтленни, çутă е тĕттĕм, телей-хурлăх тата

[18] Артемьев Ю.М. Ĕмĕр пуçламăшĕ. – Шупашкар, 1998. – 31 с.

ыттите) анлă усă курать. Революци хумĕпе вăранса пыракан ялти чăваш хресченĕшĕн систерсе калани тӳрремĕнех кĕрешĕве йыхăрнинчен ăнланмалларах тесе шутланă новелла авторĕ.

Çапла майпа Г.Я.Хлебников çыравçăсен пултарулăх ĕçĕнче этемпе общество пурнăçне хăш енчен, мĕн тарăнăш, мĕнле майсемпе çутатса парассине икĕ енчен хакласа тишкернине сăнарăмăр: пĕр енче – çыравçăн эстетикăллă идиалĕ, тепĕр енчен – сăнарлă шухăшлав тĕп йĕркисем (е эстетикăллă принципсем). Тĕпчевçĕ шучĕпе вĕсене çыхăнтараканни вара пултарулăх (е илемлĕх) меслечĕ пулать. Эпир куртăмăр ĕнтĕ, меслет шутне вăл хайлавăн содержанийĕпе сăнарлăх тытăмне, поэтикине ăсталамалли тĕп майсене кĕртет.

Чăваш литератури куллен-кун тĕрекленсе, вăй илсе пырать. Çакă ун стиль сăн-сăпатне те, поэтикăллă хăйевĕрлĕхне те тата тарăнрах тĕпчеме хистет. Хальхи вăхăтри çак ыйтусем тавра тухăçлă ĕçлекен тĕпчевçĕ Г.И.Федоров профессор. Вăл проза аталанăвне ытларах тимлет. Ун поэтикине, сăнарлăх тытăмне комплекслă: истории, культура, психологи ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса тĕпчеме пăхать. Тĕпчевçĕ сăнарлă пуплев поэтикине, ун уйрăмлăхĕсене уçса пама пире унăн «Чăваш литературин сăнарлă пуплев теорийĕ» (1994) кĕнеки пулăшĕ.

Илемле хайлав çыракансен тĕп ĕç хатĕрĕ – сăмах. Унпа çыравçăсем сăнар калăплаççĕ, сăнлăх ăсталаççĕ. Сăмахпах вĕсем хăйсем сăнласа кăтартса пурнăçа эмоцилле хак параççĕ, ăна мĕнле кăмăлпа йышăннине пĕлтереççĕ. Çакна пула чĕлхе хатĕрĕсем сăнарлă тектсра эстетика функцийĕ йышăнаççĕ, экспрессипе эмоции енчен пуянланаççĕ, тĕрлĕ стильсемпе пĕрлешсе хăйсен витĕрӳлĕхне çивĕчлетеççĕ.

Чĕлхе пуплевре кăна иксĕлми пуян. Тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕртен çыравçă чи кирлине суйласа илет, кирлĕ пек контекст йĕркелет, кашни сăмахăн сăнарлă ытарăшне унпа килĕштерсе пырать. Г.И.Федоров хăйĕн шухăшне Çеçпĕл Мишшине сăввисен илемлĕ концепцийĕпе çирĕплетет.

«Поэт-патриот çут тĕнчене романтик пек курса ăнланать, çавăнпа сăнлăх-сăнара анлă, панорамăллă хывать, кăмăлпа сăнарсем шырать. Илемлĕ

шухăшăн çак икĕ енĕ поэтăн илемлĕ концепцине кăмăллать. Сăвăсенчи шухăш-кăмăл содержанийĕ сăмахăн сăнарлă пĕлтерĕшне сарма хистет, метафора анлăшне ÿстерме хушать. Сăнарлăх калăпăшĕ обществăри улшăнусемпе пĕр кĕвĕллĕ, идея çĕнĕлĕхĕ лирика геройĕн тавракурăмĕпе пĕрлĕхлĕ. Ку герой этем характерĕ кăна мар, стиль пали те поэт ун тавра поэтика деталĕсене пухса йĕркелет, хăйĕн илемлĕ концепцине çав сăнар урлă каласа пĕлтерет»[19].

Г.И.Федоров тĕпчевçĕ Çеçпĕл Мишшин хайлавĕсен сăнарлăхне, ун пытарăнчăк вăрттăнĕсене Г.Я.Хлебников ăсчахпа пĕр евĕрлĕрех чухлани куçа кĕрет.

Федоров хăйĕн «Чăваш литературин сăнарлă пуплев теорийĕ» (1994) ятлă кĕнекине сăнарлă поэтика ăнлава хăйне евĕрлĕрех уçса пама тăрăшать. Илемлĕх теорийĕн уйрăм хайлавăн эстетика паллисене, сăнарлă чĕлхине, илемлĕх мелĕсене пĕтĕçтерсе пĕр сăпатлă тăвать. Сăнарлă ĕç питĕ кăткăс япала. Вăл хайлавăн жанр тĕсне, писатель-поэтăн сăнлав туртăмĕ çине таянса калăпланать. Г.И.Федоров профессор шучĕпе произведени нумай пĕлтерĕшлĕ пулни те хайлав ытарлăхне тарăнлатма пултарать. Писательсем хăйсен шухăшне ытарлă çавăрса калаççĕ, нумай сăмахлăхран тăракан аллегори, символ, лейтмотив мелĕсене ĕçе кĕртеççĕ. Тĕслĕхрен, Хветĕр Уяр «Таната» романĕнче чăвашлăхшăн çунакан Янтул тĕрĕс çул тупайманнине вăл çил-тăманра çĕтсе кайни, аманса пĕтнĕ пек ытарланă, тăман сăнарне тĕп шухăша пытаракан подтекст мелĕ пек хайланă. «Çил-тăман Янтул чунĕн тăрăшĕ те вăл, ăна хупăрласа пыракан, ахăрса кайнă тĕнче те»[20], - тесе калать тĕпчевçĕ. Хайлавра писательсем сăнарлăх мелĕсем, форма енĕсем содержани палли туса йĕркелени те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Илемлĕ хайлав шухăш-кăмăл содержанийĕ, хайлавра сăнарланнă пурнăçăн илемлĕ чăнлăхĕ, вăхăтпа талккăша кăтартмалли мелсен системи, автор хăй сăнлакан пурнăçа хак пама, пахалăх енчен тĕслесе хывнă хатĕрсен илемлĕ пĕрлĕхĕ (кам куçĕпе те пулин курнă, кам чунĕпе те пулин туйнă пек

[19] Федоров Г.И. Чăваш поэтикин хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем // Тăван Атăл. – 1987. - № 6 .- С. 57.
[20] Федоров Г.И. Сăнарлă сăмах шыравĕ. – Шупашкар, 1996. – С. 39.

кӑтартса, пӗр героя, пӗр пулӑма… теприн урлӑ хакласа, пулӑмсем, фактсем… хушшинчи тӗрлӗ ҫыхӑнусем урлӑ тата ыттите), ҫыравҫӑ шухӑшласа кӑларнипе чӑн пурнӑҫран илни хушшинчи майлашун хӑй евӗрлӗхӗ, сӑнарлӑ чӑнлӑх ҫыравҫӑн философиллӗ шухӑшӗсене, эстетика концепцине кӑтартакан калӑп пек хывӑнни урлӑ шӑнӑрланать. Чӑн-чӑн илемлӗ хайлав, унӑн сӑнарлӑ шухӑшӗ сӑнланӑ пурнӑҫ, ӗҫ-пуҫ кампа, хӑҫан, ӑҫта пулнине кӑтартать, ҫыравҫӑ ҫырнӑ чух мӗн тата мӗнле калассине шута илсе хывӑнать. Ҫавӑн пекех хайлавра вӑхӑтпа талккӑш хӑйне евӗрлӗ калӑпланни пирки асӑнать тӗпчевҫӗ. Унӑн сӑн-сӑпатне вӑл ҫапла уҫса парать: «вӑхӑта калаҫу (калавҫӑ) сӑмахне ритм енчен килпет кӳрсе пама пултарать, ытларах чухне вӑхӑт сӑнарне глаголсем палӑртаҫҫӗ».[21] Тӗслӗхрен, В.Игнатьевӑн «Шӑпчӑк катинче», «Пурнӑҫ пуҫламӑшӗ» калавӗсенче, Хв. Агиверӑн «Туй», «Юр хӗвет» повеҫӗсенче глаголсен системи вӑхӑт сӑнарне шӑнӑрласа тӑрать. Унсӑр пуҫне вӑхӑт сӑнарне ытти хатӗрсемпе те ӑсталама пулать: ӗҫ-пуҫа хронологи йӗркипе вырнаҫтарса (С.Аслан, Н.Мранькка хӑйсен романӗсенче тӗрлӗ ӗҫ-пуҫа пӗр-пӗринпе сыпӑнтарма «тепӗр кунне», «унтанпа икӗ уйӑх иртрӗ» йышши ҫаврӑмсепе усӑ кураҫҫӗ), событисене ассоциаци йӗркипе ҫыхӑнтарса (тӗслӗхрен, Н.Мартынов повеҫӗсем, В.Игнатьев калавӗсем, Ю.Скворцов повеҫӗ-калавӗ), ӗҫ-пуҫ ҫинчен каласа панин тата ӗҫ-пуҫ пулса иртнин вӑхӑчӗсем пӗрлӗхлӗ сӑпат кӳрсе (сӑмахран, Хв. Уяр «Ӑҫта эс, тинӗс?», «Виҫӗ кун та виҫӗ каҫ» хайлавӗсем аса илӳ евӗр йӗркелени), вӑхӑт сӑнарне повествовании экспозицийӗпе ҫыхӑтарса (тӗслӗхрен А.Артемьев тӗрлӗ экспозицисем тума ӑста: суя, тарӑнлату, ӗнентерӳ экспозицийӗсем тата ыттите) хайлавра вӑхӑтпа талккӑш системине йӗркелеме пулать. Ҫавӑн пекех ҫыравҫӑсем вӑхӑтпа талккӑша сӑнарӗсене хайланӑ чухне авторӑн тӳрӗ мар пуплевӗ, геройӑн е калавҫӑн монологӗ, глогалӑн тӗрлӗ вӑхӑчӗсене сӑнарлӑх енчен майлаштарса (сӑмахран, Хв. Агивер «Туй» повеҫӗнче *–ччӗ* аффикслӑ глаголсем ытти вӑхӑт формисемпе шайлашаҫҫӗ) калӑплаҫҫӗ. Хайлавра ӗҫ-пуҫ таяккӑшӗ яланах авторӑн сӑнарлӑ шухӑшӗпе килӗшсе тӑрать. Сӑмахран, А.Артемьев «Салампи» повеҫре ҫакна кӑтартма вырнаҫтару (полагание)

[21] Федоров Г.И. Чӑваш литературин сӑнарлӑ пуплев теорийӗ. – Шупашкар, 1994. – С. 81.

мелĕпе усă курса Салампие Вирьялов, Муза сăнарĕсемпе хире-хирĕçлетет, çав вăхăтрах Ленăпа Кольăна çуммăн лартать. Ку мел пĕтĕм повеçе шăнăрласа тăрать. Ю.Скворцов вара пурнăç, ĕç-пуç тăтăшлăхне, юхăмне, мал туртăмне символсем урлă сăнарлать.

Илемлĕ хайлав пуплевĕ кулленхи пуплевпе пĕр шайра тăмаççĕ, вĕсене пĕрпеклетме те çук. Çапах та хайлавра кулленхи пуплеври сăмахсемпе виçине пĕлсе усă курмалла. Тĕрлĕ хатĕр-хĕтĕртен çыравçă чи кирлине суйласа илсе хайлав йĕркелет, кашни сăмахăн сăнарлă ытарăшне унпа килĕштерсе пырать. Сăнарлăх паллисем те, вăл шутра калу уйрăмлăхĕсем (диалог, монолог, тропсем, фигурăсем тата ытти те) сăнарлă чĕлхе пуянлăхне кăтартаççĕ, вĕсем уйрăм хайлавра çеç чĕрĕлсе тăраççĕ. Кирек епле хайлав та сăнарлă пуплев тĕсĕ шутланать. Сăнарлă пуплев поэтики сăнлав деталĕсен, стиль сăрăсен пĕтĕмĕшле енĕсене тата уйрăм хайлавшăн кирлĕ уйрăмлăхсене тишкерет. Чăваш литературинче пуплев уйрăмлăхĕсене кăтартакан хайлав тĕслĕхĕсем: И.Вутланăн «Çул-пĕрре» хайлавĕнче сăмаха автор тытса пырать, вăл тĕрлĕ ĕç-пуçа, пуплев йĕркине документлă пек йĕркелет. Тĕслĕхрен, А.Емельяновăн публицистикăллă хайлавĕсенче икĕ ене хире-хирĕçлетсе кăтартни сисĕнет: аналитик-публицист тĕрлĕ пулăмсем пирки пуç ватать тата геройăн, калавçăн лирикăллă кăмăлĕ, эмоцийĕ палăрать. П.Хусанкай «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕнче халăх йăли-йĕркин тĕрлĕ енĕсемпе, чăвашсен ĕненĕвĕсемпе усă курать. Çакна сăвăç культура, наци, истори контексчĕ çине таянса калăпланă. Пуплев палăрăмĕсем лирикăллă çаврăнăшсем, анлă метафорăсем, риторика мелĕсем, абзац йĕркеленĕвĕ тата ытти урлă сăнланаççĕ.

Сăнара ăсталамалли тĕпрех мелсене те поэтика уйрăмлăхĕ шутне кĕртет. Хайлаври тĕрлĕ эпизодсене, сыпăксене, геройсене вырнаçтармалли, пĕр пĕтĕм тумалли майсен системине сăнлăх, пуплев хатĕрĕ, деталь пĕр-пĕр шухăша хывма кирлĕ мелсем йĕркелеççĕ. Сăмахран, юптарусенче ытарлăх тата ăса вĕрентесси тĕпре. Юптару пĕр-пĕринпе пачах çывăхланма пултарайман пулăмсене çывăхлатма пултарать. Очерк ĕç-пуçа чăн пурнăçри пек кăтартнипе уйрăлса тăрать. Кунта шухăша дикларациллĕрех калани те

палӑрать. Сӑвӑра повторсем, хушса каламалли сӑмахсем, рефренсем пысӑк пӗлтерӗшлӗ, вӗсем сӑвӑ композицине тытса пыраҫҫӗ.

Стиль те хайлав поэтикине витӗм кӳрет. Хайлав тытӑмӗ, шухӑш-кӑмӑлӗ, сӑнарлӑх системи стиле кура калӑпланать.Хайлавсем пӗр-пӗринчен жанр тӗлӗшӗнчен кӑна мар, стиль енчен те расна. Публицистикӑллӑ, психологиллӗ, философиллӗ, приключениллӗ тата ыттите хайлавсем пӗрешкел мари куҫа кӗрет. Тӗслӗхрен, приключениллӗ повесть-хайлавра тӗпре интрига, событисен хӗрӳлӗхӗ, вӗсем хӑвӑрт ылмашни тӑрать. Психологиллӗ хайлавра писатель этем чунӗнчи пурнӑҫа тӗпчет, ҫавӑнпа кунта сюжет хӗрӳлӗхӗ чакать, повествовании вӑрахланать тата ыттите. Повеҫпе новеллӑра автор пурнӑҫа, ӗҫ-пуҫа хӑй ӑнланнӑ евӗр сӑнлать. Ку жанрсенче авторӑн ирӗкӗ туллинрех палӑрать. Романра ӗҫ-пуҫ хӑй тӗллӗн, хӑш чух хирӗҫле аталанса пырать. Кунта авторӑн хӑйӗн кӑмӑлне пӗлтермелли майсем сахалтарах. Тӗпчевҫӗ палӑртнӑ тӑрӑх «жанр хӑйӗн содержанийӗпе уйрӑм хайлавран анлӑрах, туллинрех пулни, уйрӑм хайлавра писатель-поэтӑн хӑйне евӗрлӗ тӗнчекурӑмӗ палӑрни, ҫавна пула жанр содержанийӗ ҫӗнелни» куҫа кӗрет. Сӑмахран, чӑваш литературинче ҫак туйӑмпа А.Артемьев «Тӑвӑл умӗн» романра икӗ йӗре хӑй халлӗн кӑтартать: чӑваш культурине аталантаракансен шӑпи (И.Яковлев, К.Иванов) тата писатель хӑй шутласа тупнӑ сӑнарсем (Кирук, Лисук). Хв. Агивер повеҫӗсенче халап-юмах, камит пысӑк вырӑн йышӑнать. Повеҫсенче яланах анлӑ танлаштарупа, параболӑпа усӑ курать. Вӗсем пурте тӗп геройпа пӗрле аталанакан сӑнарсем пек тухса тӑраҫҫӗ.

Кашни ҫыравҫӑн хайлавӗ хӑйне евӗр сӑн-сӑпатлӑ, мӗншӗн тесен сӑмах художникӗ тӗнчене яланах хӑйне майлӑ курать, туять, ӑнланать.

Чӑвашсен тепӗр паллӑ литературовечӗсем А.И.Мефодьевпа П.Н.Метин поэтика ӑнлав пӗлтерӗшне вырӑс тӗпчевҫисем майлӑ, вӗсен шухӑшӗсем ҫине таянса, хальхи вӑхӑтра ҫирӗпленнӗ теорие тӗпе хурса уҫса параҫҫӗ. Вӗсен шучӗпе, поэтика-литературоведенин маларах ҫуралнӑ ӑнлавсенчен пӗри, вӑл литература теорийӗн пайӗ. Поэтика хайлавсен тытӑмне тата илемлӗх хатӗрӗсен системине тӗпчет. Анлӑ пӗлтерӗшпе илсен – поэтика чӗлхен е

илемлĕ калаçăва тишкернине пĕлтерет. Çавăн пекех ку ăнланăва поэтшăн, литература юхăмĕшĕн, халăхшăн палăруллă илемлĕх хатĕрĕсен системине палăртаççĕ, сăмахран, «К.В.Иванов поэтики» т.ыт.те.

Вĕçĕнче, маларах каланине шута илсе, çакна калас пулать. Чăваш литературовечĕсем Г.Я.Хлебников уйрăмах, поэтика ăнлава уçса панă чух икĕ япалана тĕпе хуни курăнать: сăмах художникăн эстетика идеалĕ тата сăнарлă шухăшлав тĕп йĕркесем (эстетика принципĕсем). Çавсене пултарулăх (е илемлĕх) меслечĕ çыхăнтарать. Меслет – произведенин содержанийĕпе сăнарлăх тытăмăшне, поэтикине ăсталаса кăлармалли тĕп майсем пулса тăраççĕ.

Г.И.Федоров тĕпчевçĕ шухăшĕсене пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: поэтикăшăн пĕр-пĕрне литературăри е уйрăм çыравçăн пĕтĕм пултарулăхĕшĕн палăртуллă, пĕрлехи сăрсене, детальсене кăтартса парасси ал майлăрах. Хайлавăн стиль хатĕрĕсене, сăнлăх-сăнарĕсене илемлĕх енчен пăхни те кăтартуллă. Çапла майпа сăнарлă пуплев поэтики сăнлав деталĕсен, стиль паллисен пĕтĕмĕшле паллисене тата уйрăм хайлавшăн кирлĕ уйрăмлăхсене тишкерет.

II сыпăк

## Композицин поэтики чăваш литератури контекстĕнче

Кирек мĕнле искусство произведенийĕсенче те содержанипе форма пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăннă, пĕр-пĕринсĕр пулма та пултараймаççĕ. Хайлав содержанийĕ тесе эпир çыравçă хăй пултарнă пек ăнланнă пурнăç чăнлăхне калатпăр. Форма вара çав пурнăçăн сăнарĕсене, характерĕсене, çынсен ĕçĕ-хĕлне, шухăш-туйăмне мĕнле мелсемпе кăтартса пани пулать. Илемлĕ хайлавра темăпа тĕп шухăша уçса пама кирлĕ уйрăм пайсем, пуллăсем, сăнарсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса йĕркелени шăпах композиции пулса тухать. Композици хайлав содержанийĕнчен тухса тăрать. Хайлав тытăмĕ мĕнле пуласси çав хайлав литературăн хăш ĕретне кĕнипе те тачă çыхăннă. Лирика хайлавăн тытăмĕнче уйрăм геройсем пĕр-пĕринпе çыхăнни, кĕвĕсем лирикăллă кăмăл-туйăмпа тата шухăш-ĕмĕтпе çураçуллăн аталанса пыни тĕпре тăрать.

«Тилли юррисем»» сăвă ярăмĕн поэтики пуян та хăйне евĕрлĕ. Чи малтанах П.Хусанкайăн композици йĕркелес ăсталăха палăртмалла. Композиции поэтикине эпир П.П.Хусанкайăн «Тилли юррисем» ятлă сăвă ярăмĕ урлă уçса парасшăн. Вăл 56 юрăран тăрать. Çак ĕçе пурнăçлама эпир Ю.М.Никишовăн «Лирика: Поэтика и типология композиции» (1990) ятлă ĕçĕпе усă куратпăр. Ю.М.Никишовăн тĕпчев ĕçĕнчи шухăшсене «Тилли юррисемпе» çыхăнтарса П.Хусанкайăн хайлавĕн тытăмне, унăн уйрăмлăхĕсемпе пĕрпеклĕхĕсене тишкерсе тухасшăн.

Сăмах май Никишов Ю.М. хăйĕн тĕпчев ĕçне В.М.Жирмунский ăсчах тĕпчевĕсене тĕпе хурса çырни куçа курăнать. Тĕпчевçĕ сăвăласа çырнă хайлав тытăмне содержани, синтаксис тата метрика тĕлĕшĕнчен тĕпчеме хистет.

Композицин виçĕ тĕсĕн те хăйĕн тĕп виçи пур. В.Г.Родионов шучĕпе метрика тата синтаксис композицийĕн тĕп виçи строфа, тематика

композицийĕн – композици блокĕ. Композици блокĕ шухăшпа стиль е çыру мелĕ тĕлĕшĕнчен пĕрлешсе тăракан йĕркесен пĕрлĕхĕнчен калăпланать.[22]

Композицин чи ансат тĕсĕ – тӳрĕ композиции (е линейная композиция). Кунта хайлав тытăмĕн пĕрин  хыççăн тепри йĕркепе ылмашăнса пыни тĕп вырăн йышăнать. Композицин кашни пайĕ пĕр тан. Тӳрĕ композицин хăйĕн йăви пур, çавна май вĕсен малти тытăмĕ те тĕрлĕрен. Тӳрĕ композицин малти тытăмне кура вăл темиçе тĕслĕ пулма пултарать: а) вăхăт тĕлĕшĕнчен калăпланакан, ă) талккăш тĕлĕнчен калăпланакан, б) логика тĕлĕшĕнчен калăпланакан тытăм.

Халĕ кашнинех уйрăмшарăн пăхса тухатпăр.

1) Тӳрĕ композицин хайлав тытăмне вăхăт тĕтĕмĕшĕнчен калăплас хевти пур. Паллă ĕнтĕ, этем пурнăçĕ вăхăтпа тачă çыхăннă. Сăвă тытăмне вăхăт тĕлĕшĕнчен калăпланă чухне глагол вăхăчĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Тĕслĕхрен, «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕнчи çавнашкал тытăмлă сăвва илсе пăхар-ха, сăввăн композици пайĕсене тӳрех палăртса пыратпăр:

Ватăлатпăр пуль, Сарпайăм!
Санăн та куç хупанки
Тăртăнса ĕнтĕ сархайнă,
Ман юратнă çум çакки!

Ĕлĕкхи хевтӳ ăçта-ши?
Шăпăрт сасă вăрмантан
Илтĕнсен те – хурт карташĕ
Ян янратчĕ санпалан:

Шантарасшăн та юрасшăн –
Эс манна курмассерен
Тăрăххăн сиксе ачашшăн
Чуптăваттăн питĕмрен.

[22] Родионов В.Г. Генезис и эволюция речевого стиха // Чувашская народная поэзия. – Чебоксары, 1990. – С. 74.

Хирпеле эпир пыруҫăн
Эс хавассăн хамлатса
Путене е карăш хыҫҫăн
Ыткăнаттăн алхасса.

Халь эс лăпкă. Салхулантăн,
Васкамасăр, ерипе
Хӳрӳне суллакалатăн
Кив сехет ывăси пек.

Пĕр-пĕрне аван чухлатпăр:
Ăслă куҫусемпелен
Манн куҫран пăхса хăш тапхăр
Тем калас пек тинкерен.

Кам пĕлет, тен, эс калан-тăр:
«Вилме маннă ку старик!
Пăшалне курми пулсан та
Куян хыҫҫăн кустар-и?..»

Савнă йыттăм, вată тарҫăм!
Пурнăҫ – йĕлтĕр йĕрĕ пек.
Шăвăнатпăр-ха пăртакҫă
Аслă ҫулăн хĕррипе.

Аслă ҫул тăрăх иртеҫҫĕ
Сумлă-умлă упуссем.
Труйкăпа вирхĕнтереҫҫĕ
Хăнтăр тумлă улпутсем.

Эпĕр çĕлĕк те илместпĕр!
Кутсăр-пуçсăр тăманта
Çав-çавах питĕрĕнет йĕр –
Йĕлтĕрĕн те, труйкăн та.

Урăм-сурăм тăвăл-вилĕм, -
Ир-и, каç-и, - вăл пĕрре
Капланса хускалĕ, килĕ,
Шăлса лартĕ пур йĕре.

Униччен шăватпăр халĕ
Харпăр хамăр халпалан.
Таçта йĕрĕмĕр çухалĕ,
Таçтан килĕ сăлпăран?

Сар Сарпайăм! Иккĕн эпĕр
Йĕкĕрлемнĕ йĕлтĕр пек.
Хăрахшар шăва пĕлместпĕр
Пурнăç хирĕн кĕрчĕпе.

Эс манран малтан вилсессĕн
Тирӳнтен уртмах туса
Çакса çӳрĕп эп тирпейлĕн
Кăвакал-ăсан хурса.

Хам малтан кăнас пулсассăн
Пур йытта вĕчĕхтерме
Хушăп сан мăйна çакмашкăн
Ĕнчĕ куçлă çĕррĕме.

Юрт вара эс куян хыççăн,
Куян пуç кышланă чух
Асăнса ула та хыттăн –
Çавă пултăр ман учук!

Ку сăвăра пурнăçăн виçĕ тапхăрĕ иртни – хальхи – пуласси сăнланнă. Сăвăра Тилли хăйĕн чи çывăх тусĕпе Сарпай йыттипе пурнăç çинчен сăмахлать. Сăвă виçĕ пайран тăнине кунта усă курнă глагол вăхăчĕсем кăтартаççĕ. Малтанхи тăватă çаврара Тилли старик хăйĕн «юратнă çум çаккипе» пĕрле сунара çӳренине аса илет. П.Хусанкай иртнĕ кун-çула темиçе иртнĕ вăхăт аффикслă глагол формисемпе уçса парать («чуптăваттăн», «ыткăнаттăн»). Малалла Тилли хальхи пурнăç çинчен шухăшлама наречипе усă курать. Иртнĕ вăхăта калавçă хаваслăн, çĕкленӳллĕ кăмăлпа аса илет пулсассăн, хальхи пурнăç Тиллишĕн салхуллă. Тилли старик шухăш-кăмăлĕ, туйăмĕ пусмăрпа тĕрĕсмарлăх тĕнчине йышăнасшăн мар, вăл тĕрĕс пурнăç çинчен ĕмĕтленет. Хăйĕн пурнăçне Тилли «йĕлтĕр йĕрĕпе» танлаштарать. Вăл аслă çулăн хĕррипе кăна иртсе çӳреме пултарать имĕш. Аслă çулпа улпутсем çӳреме кăна тивĕçлĕ. Çапах та этем пуçне усмасть. Вăхăт çитсен пуяннин те, чухăннин те кун-çулĕ татӑлать «çав-çавах питĕрĕнет йĕр» тет. Çак ултă çаврара пурнăçпа вилĕм ыйтăвĕ çивĕч тухса тăрать. Юлашки ултă çаврара вара Тилли старик пуласси пирки шухăшлать. Тĕп сăнар пулас кун-çул епле килсе тухасси çинчен ĕмĕтленнине çыравçă пулас вăхăт формипе усă курса калăплать. Тĕслĕхрен, «çухалĕ», «килĕ», «лартĕ», «çӳрĕп», «хушăп». Çавăн пекех пулас кун-çул еккине автор хушу наклонении форми урлă сăнлать: «юрт», «ула». Автор сăвăра  хальхи тата пулассине «халĕ» наречипе çыхăнтарать. Ку сăвăра Тилли пурнăçĕнче Сарпай йытти пысăк пĕлтерĕшлĕ, вĕсем пĕр-пĕриншĕн тăванран та тăван пулни аван сисĕнет.

Пĕтĕмĕшле илсен çын ĕмĕрĕнче хальхи питĕ кĕске. Вырăссем калашле «Есть только миг между прошлым и будущим…» Паянхи шухăш-кăмăл пирĕн ăна кĕрсе ларать те иртнине куçать. Кашни этем хальхи тапхăра хăйне майлă ăнланать, çавăнпа та пулса иртнине хăйĕн вăхăт виçипе виçет.

Çак сюжетлă сăвăра пĕр ĕç мĕнле пулса иртнине ун юхăмĕ урлă кăтартса панă. Кунта хирĕçӳ кăна мар, событии те пур. Пĕтĕм ĕç-пуç Тилли старик йĕри-тавра пулса иртет.

Ă) Талккăш тĕлĕшĕнчен калăпланакан сăвăсем – тӳрĕ композицин тепĕр тĕсĕ. Вăхăтпа талкăш этем пурнăçĕпе тачă Сыхăннă пулăшсем. Илемлĕ

хайлавсенче вăхăтпа талккăш пĕтĕçсе йĕркеленеççĕ. Çав вăхăтра вĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлса кашниех хăй тĕллĕн тухма пултараççĕ. Сăнласа паракан сăвăсем ытларах талккăша тĕпе хурса калăпланаççĕ. Анчах та кунашкал сăвăсем литературăра нумаях мар.

Б) Тӳрĕ композицин тепĕр тĕсĕ – логика тĕлĕшĕнчен калăпланакан сăвă тытăмĕ. Вăл та анлă сарăлман сăвă тытăмĕсен шутне кĕрет, мĕншĕн тесен тӳрĕ композици пайĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнман, вĕсем кашниех хăйне тĕллĕн йĕркеленме пултарать. Çапах та логика тытăмĕпе калăпланакан сăвăсем тĕл пулаççĕ. Сăмахран, «Тилли юрринчи» пĕр сăвва илсе пăхар-ха:

Тăват касра тăвată савни,
Тăваттăран пĕри – тур çырни.

Хăшин ятне çырнă-ши турри
Пĕлес килет-çке ман çав тери!

Хурапала çырни – хурлăха,
Сарăпа-ши савăнмалăха?

Хĕрлипе çырни – хĕрлĕхе,
Симĕссипе-ши çав сиплĕхе?

Тăват касра тăвată варли,
Пĕри кăна хĕве хупмалли.

Хăшне савса хăшне ытарам?
Хăшин пуçне сурпан сыртарам?

Тăваттăш те мерчен тухьяпа,
Илем кӳреççĕ-çке уява.

Çĕрте çырла, садри Сар улма –
Ăçта ĕнтĕ вĕсем пек пулма!

Пĕрне илсен пĕри шел юлать,
Тăваттăшне илме çук йăла.

Пĕрне пĕркенчĕкпе пĕркесен,
Тепри пĕркенчĕкне тĕрлесен,

Виççĕмĕш вырăн сартăр-им,
Тăваттăмĕш ура салттăр-им?

Анчах хăрхăм тăвас хĕрсем мар:
Пĕри – вĕри кăвар, тепри – нар.

Аслурамрин çивти астарать –
Сар хÿрине çити явăнать.

Вăта касри вăрттăн йăл кулсах
Пăхăнтарать мана тĕл пулсан.

Тури касри юрра тапратсан –
Ялта пĕр çын та çук çывракан.

Анат касрин анратать ташши:
Те юс утти, те акăш ташши?

Ай-хай çухатрăм-çке канлĕхе,
Упкевĕм пур тура – пÿлĕхе:

Ма ман юратăва тăватта –
Тăват çынна – пÿрмен тупата?

Ку сăвă Хĕвел тухăç поэзийĕнчи анлă сарăлнă бейт формипе хывăннă. Кунашкал формăллă сăвăсем «Тилли юрринче» татах та пур. Çапах сăвă тытăмĕ патне таврăнас пулсан унăн паллă уйрăмлăхне палăртса хăвармаллах. Логика тĕлĕшĕнчен калăпланакан сăвă пĕтĕмĕшле тезисран пуçланать, малалла кашни ĕçе е пулăма пайăн-пайăн ăнлантарса пани вырăн йышăнать, юлашкинчен автор мĕн маларах каланине пĕтĕмлетсе хăварать. Унсăр пуçне кунта сăвă пуçламăшĕ тата вĕçĕ эмоци тĕлĕшĕнчен пĕрешкел пулни те пĕлтерĕшлĕ.

«Тăват касра тăвата савни…» сăвă пирки те çавнах калама май пур. Сăвă пуçламăшĕнчи икĕ бейтра Тилли тăватă касри тăватă савнирен хăшне суйласа илмелли пирки иккĕленет. Малалла кашни савнийĕн пахалăхне, илемлĕхне уçса парать. Çапах та тăваттăшĕнчен пĕри кăна хĕве хупмалли. Юлашкинчен те Тилли ыйтăва татса параймасть. Канлĕхне çухатнă çамрăк каччă турра ÿпкелеме пăхать. Çапах та татăклă шухăш патне килсе тухаймасть:

Ма ман юратăва тăватта –

Тăват çынна - пÿрмен тупата?

Çапла майпа сăввăн юлашки икĕ бейтчĕ те, пуçламăшĕнчи икĕ бейтри пекех, ыйтуллă предложениллĕ.

Ю.М.Никишов композицин пунктирлĕ тĕсне уйăрать. Пунктирлă майпа йĕркеленĕ композици тӳрĕ композицин логика тĕлĕшĕнчен калăпланакан сăвă тытăмĕн пĕр тĕсĕ пек пăхма пулать. Çапах та кунта тĕп шухăш е сăнар пĕтĕм текст калăпăшне хывăнать. Форма тĕлĕшĕнчен ку шухăш рефрен урлă палăрать. П.Хусанкайăн «Тилли юррисем» композицин ку мелĕпе йĕркеленнĕ темиçе сăввах курма пулать. Тĕслĕх вырăнне «Тилли юррисенчи» «Мехел тени мĕскер тени пулать?» кӳртĕм сăвва илсе пани питĕ вырăнлă пулĕччĕ.

Мехел тени мĕскер тени пулать?
Ыйтсамăр çумăр пĕлĕчĕсенчен:
Мĕн-ма вĕсем кăвак уярпала
Юхаççĕ çăвăнмасăр тахçанччен?
Мехел çитмен.

Мехел тени мĕскер тени, тăван?
Ыйтсамăр кайăк хур ушкăнĕнчен:
Мĕскершĕн вăл пайтах шуракăшран
Вĕçсе иртет, анмасть картипелен?
Мехел çитмен.

Мехел тени мĕскер тени иккен?
Ыйтсамăр пахчари улмуççрен:
Ма ун çеçки чăмăртансах çитсен
Тепре çĕр каçатех çурăличчен?
Мехел çитмен.

Апла мехел тени мĕскер ĕнтĕ?
Ыйтсамăр сĕрме купăс каччинчен:
Мĕн-ма патнех-патнех çитсессĕн те
Пусмасть вăл хĕлĕхне пӳрнипелен?
Мехел çитмен.

Мехел çитсессĕн çумăр ярăнать,
Çунатлă чун çӳлтен çĕре анать,
Чечек папки илемлĕн çурăлать,
Йĕркепелен юрри те юрланать –
Мехел çитсен.

Кунта рефрен сăввăн пунктирне туса пынă май унăн тĕп шухăшне те уçса парать. Ку философилле сăвă. Кунта çут тĕнчен тĕрлĕ пулăмĕсене илсе автор философири пĕр ăнланăвăн тупсăмне уçса панă, ăнлантарнă. «Композицийĕпе, синтаксисĕпе, пĕтĕмĕшле стилистикипе те ку сăвă философи лирикин шедеврĕ»[23], - тесе палăртать В.Юмарт тĕпчевçĕ. «Мехел тени мĕскер тени?» ыйтăва пĕр çаврăмран тепĕр çаврăма куçарса пырса, тĕрлĕ ӳкерчĕксене пĕтĕçтерсе П.Хусанкай пире тĕрлĕ пулăмсем çинчен шухăшлаттарать. Автор сăвăра пĕтĕмлетекен хурав шырать. Поэт хайлавра çут тĕнчене сăнарлăх витĕр тĕпчесе пĕлет. Çыравçă ăсталăхĕ чи малтанах çакăнпа палăрать – вăл философилле тарăн шухăшсене тӳрремĕн куçа кăтартассишĕн хыпăнмасть. Вăл çакна илемлĕ, сăнарлă ӳкерчĕксем урлă уçса парас хевтеллĕ. Г.Юмарт ăна автортан тесе шутламалли сăвă пулнине ĕнентерет. Çак сăвă ярăмĕ умĕнхи сăвва фольклор традицийĕсене пăхăнса теме те, ăна Тилли юрланă теме те çук. Тĕпчевçĕ çакна çапла сăлтавлать «…халăх юррисенче çирĕпленнĕ ăнлавсем çеç палăраççĕ, ятарласа философилле ыйту лартса хурав шырани çук вĕсенче».[24]

Сăвă тытăмне пăхас пулсан кашни çавра пĕр танлăхĕ тĕрлĕ сăлтавсенчен килет. Сăвăри рефрен тĕп вырăн йышăнать, хайлав тĕп шухăшне уçса парать. Ытти текст рефрена палăртма кирлĕ. Сăвă çаврисен пĕлтерĕшне уйрăмшаррăн пăхмалла.

«Тилли юррисем» сăвă ярăмĕнче пунктирлă композиции мелĕпе йĕркеленнĕ сăвăсем татах та пур. Вĕсенчен пĕринче «Чие тымарĕнчен пĕр чĕлĕм турăм» сăвăра та автор философилле ыйту – пурнăçпа вилĕм ыйтăвне – хускатать.

---

[23] Юмарт В. Тилли кăна Тилли теççĕ // Тăван Атăл. – 1987. - №6. – С. 63.
[24] Юмарт В. Тилли кăна Тилли теççĕ // Тăван Атăл. – 1987. - №6. – С. 63.

Чие тымарĕнчен пĕр чĕлĕм турăм,
Кăпчанкăран эп аврăм чăпăкне,
Савăнăçпа та, хуйхăпа та туртрăм,
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.

Çăка çăпанĕнчен эп алтăр алтрăм,
Мăтакласа тĕрлерĕм аврине,
Сире сирĕлейми симпыл тултартăм,
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.

Вĕренерен эп купăс ăсталарăм,
Хĕр пилĕкĕ пек турăм варрине,
Пĕр савăнса, пĕр хурланса каларăм –
Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине.

Тилли старике пурнăçĕ питĕ иртсе кайни шухăшлаттарать. Хăйĕн пурнăçĕнче вăл савăнăçне те, хуйхине те курнă. Çапах та ăна нимĕнле йывăрлăх та çапса хуçайман. Çапла майпа вăл кун-çулĕ иртсе кайнине те сиссе юлайман. Пĕтĕмĕшле çакнашкал шухăш çинче тытăнса тăрать сăвă. Ăна палăртакан рефрен кашни çавра вĕçĕнче шухăша пĕтĕмлетсе хăварать. Кунта кашни çавра урăх пулăм çинчен каласа парать. Кашни çавра малтанхи çавра йĕркипех хыvăнать. Сăвăри кашни çавра малтанхипе сăнчăр евĕр çыхăнса пырать. Сăввăн кунашкал тытăмĕ халăх юррисене аса илтерет. Ахальтен мар ĕнтĕ сăвăсене халăх сăмахлăхĕ хăйĕн сĕткенĕпе чĕрĕлĕх парса тăнине В.Юмарт та, В.Долгов та палăртнă.

Вырăс тĕпчевçи Ю.М.Никишов илемлĕ литературăри сăвă тытăмне тишкернĕ май унăн тепĕр тĕсне çавра композицие тĕпчесе палăртать. Поэзире кунашкал тытăмлă сăвăсем чылай. Çавра композицире, ытти композици тĕсĕсемпе танлаштарсан, сăвă пуçламăшĕ те, сăвă вĕçĕ те пĕрешкел пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Сăмах май çакă евĕрлех тăвата йĕркеллĕ çавра рифма йĕркелет. Кунта пĕрремĕшпе тăваттăмĕш, иккĕмĕшпе виççĕмĕш йĕркесем

пĕрешкел рифмăланаççĕ. Çапла майпа çавра тытăмлă сăвă пуçламăшĕнче тĕп шухăш тата эмоци палли йĕркеленсе пĕтĕм сăвă калăпăшне витĕм кӳреççĕ.

П.Хусанкайăн «Тилли юрринче» кунашкал тытăмлă сăвăсем те пур. Сăмахран, «Тахçантанпах тытман такмака…» сăвă çичĕ строфаран тăрать.

1 Тахçантанпах тытман такмака
2 Тапратмаллах-шим пĕр авăка?
3 Никрут кĕвви,
4 Сасси чĕвви
5 Хускатрĕçех Тилли – салтака.

1 Патшамăрăн патвар аллинче
2 Пурăнаттăм кĕçех аллăччен.
3 Пăхма йăваш,
4 Шалта – чăваш,
5 Чăтрăм сухал чăпарланиччен.

1 Хăвармарăм халăх кăмăлне,
2 Хăвартăм-çке пăртак хамăнне:
3 Эп киличчен
4 Тантăшăмсен
5 Ачи-пăчи çитнĕ хăйсене.

1 Мăн-мăн шыва кĕсмене султăм эп,
2 Çӳл-çӳл тусем çинче пултăм эп,
3 Инçе –инçе
4 Капкас енче
5 Нихçан кайми юрсем куртăм эп.

1 Кирек ăçта çитсен те иккен
2 Нушаллă чун нумай ырринчен.
3 Çут тĕнчере
4 Хĕвел пĕрре,

5 Ăшши пĕр пек тивмест ĕмĕртен.

1 Инкекпеле синкек – пĕр тĕкел,
2 Çĕртипелен çӳлтен – пĕр мехел:
3 Парсан парать,
4 Чарсан чарать,
5 Пĕрне – мăйăр, пĕрне – йӳç икел…

1 Тахçантанпах тытман такмака
2 Тапратмаллахчĕ пĕр авăка:
3 Никрут кĕвви,
4 Сасси – чĕвви
5 Хускатрĕçех Тилли-салтака.

1-мĕш строфа Тилли юррин ум сăмахĕ евĕр икĕмĕш строфара Тилли аллă çул хушши хĕсмĕтре пулнине пĕлтерет. Виççĕмĕш строфара тĕп герой тăван çĕр-шыва таврăннă çĕре ун тантăшĕсен ачисем ӳссе çитĕннине пĕлтерет, анчах та хăйĕн пурнăçĕ ăнманнишĕн хурланать. Тăваттăмĕш строфара Тилли çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнче пулса тĕрлĕрен çĕнĕлĕхсем курни çинчен калать. Пиллĕкĕмĕш строфара Тилли старик пур çĕрте те нушаллă пурнăç хуçаланнишĕн куллянать. Улттăмĕш строфара Тилли чунне çынсем хушшинчи тан марлăх ыраттарать. Юлашки, çиччĕмĕш строфа пĕрремĕш строфа евĕр йĕркеленнĕ. Кунта Тилли нимĕнле çĕнĕ шухăш пĕлтермесĕрех маларах каланине пĕтĕмлетсе хăварать.

Çакнашкал çавра композицири повторсем маларах каланине пĕтĕмлетсе хăвараççĕ. Ю.М.Никишов калашле «…кольцом мир стихотворения подчеркнуто замыкается в самом себе и приниципиально не ориентируется на мир, который существует за рамками стихотворения»[25]. Пĕтĕмĕшле илсен ку çавра композицин тĕп уйрăмлăхĕ пулса тăрать. Илемлĕ литературăра çавра композицин тĕрлĕ варианчĕсем те сарăлнă. Анчах «Тилли юррисенче» вĕсем çук.

---

[25] Никишов Ю.М. Лирика: Поэтика и типология композиции. – Калинин, 1990. – С. 33.

Ю.М.Никишов композицин тепĕр тĕсне – паралеллĕ композици тытăмне ăнлантарса парать. Пĕрремĕшĕнчен, илемлĕ параллеллĕх хайлавра сăнар калăплама кирлĕ.

Параллеллĕ çаврăмсем функци тĕлĕшĕнчен икĕ тĕрлĕ пулаççĕ – тÿрĕ параллеллĕх тата хирĕçле параллеллĕх. Кунта икĕ е тимиçе расна япала е пулăм сăнарне пĕр майлă йĕркеленни тĕпре тăрать. Иккĕмĕшĕнчен, сăвăра танлаштаракан япалана е пулăша уйрăм палăртмаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене юнашар çырса кăтартма май пур. Параллеллĕх аталанса пынă май пĕтĕм хайлав тытăмне йĕркелесе тăма пултарать.

Паралеллĕ композици илемлĕ литературăра та, халăх сăмахлăхĕнче те анлă сарăлнă. Параллеллĕх мелĕпе хывăннă сăвă-юрăсенче çакна асăрхама пулать: мăшăрăн пыракан шухăшра е сăнарта пĕри тĕп вырăн йышăнать, иккĕмĕшĕ ăна ăнлантарса парать.

П.Хусанкайăн «Тилли юррисенче» кун пек тытăмлă сăвăсем чылай. Сăмахран, «Тарăн шыва антăш ăшăх тесе…» сăвă параллеллĕ композиции мелĕпе хывăннă.

Тарăн шыва антăш ăшăх тесе,
Мерчен сапакĕсем ăсăп тесе.
Мерчен сапакĕсем пулмарĕ,
Юхан юшкăнчăксем пулмарĕ.

Эп пурнăç пурăнма ансат тесе,
Ыр çын шутне кĕме часах тесе.
Ыр çын ятне илтни пулмарĕ,
Нуша хыçран пĕр шит юлмарĕ.

Ку сăвă икĕ пайран тăни куç кĕретех. Кашни пай калăпăшĕпе пĕрешкел: иккĕшĕ те пĕрер çавраран тăраççĕ. Пĕрремĕш пайра пĕр пулăма сăнласа панă. Иккĕмĕшĕнче сăнласа пани çук, кунта сăввăн тĕп шухăшне уçса пырать: пĕри – мерчен сапакĕсем, тепри – ырă çын.

Ку сăвăра Хусанкай хирĕçле параллелĕхпе усă курса пĕр пулăма илсе кăтартать, анчах тепĕр пайĕнче ăна хирĕçлет. Кунашкал параллеллĕхсемпе халăх юррисем питĕ пуян.

Çакă унăн паллă уйрăмлăхĕ. Халăх юррисен çак уйрăмлăхне палăртса Н.И.Ашмарин çапла çырнă: «Юрăсенчен нумайăшĕсем икĕ пайран тăраççĕ, вĕсенчен икĕ япалана танлаштарса калаççĕ. Çынсем хушшинчи çыхăнăва кăтартакан тĕп шухăша çутçанталăкран илнĕ тепĕр япалапа ăнлантарса параççĕ. Чăннипе, предложенисем хушшинчи çыхăну ытларах хăшпĕр сăмахсемпе сасăсен пĕрпеклĕхĕнчен тата аллитерацирен килет, пĕр-пĕрне çывăх явленисемпе танлаштарни çукпа пĕрех»[26].

Çапла вара, эпир пăхса тухнă П.Хусанкайăн «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕсенчи сăвăсен композицийĕ тăрăх çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать. Композици темăпа проблема пекех, поэтикăн тĕп палли шутне кĕрет. Композици содержаниерен, сăнарсен (шухăшсен) аталанăвĕнчен килнине эпир маларах та палăртнăччĕ. Унсăр пуçне сăвă тытăмĕ ăнăçлă, хитре пултăр тесен сăвăçăн хайлав тĕп шухăшне ăста, асра юлмалла уçса памалла.

[26] Иванов Н.И. Чăваш сви. – Шупашкар, 1977. – 36 с.

III сыпăк

## Стиль поэтики чăваш литератури контекстĕнче

Мĕн вăл стиль?

Стиль ăнлавпа тĕрлĕ ăслăлăхсенче усă кураççĕ – чĕлхе пĕлĕвĕнче (лингвистикăра), искусствознанире, эстетикăра, литературоведенире. Кашни ăслăлăхра ку ăнлав пĕлтерĕшне тĕрлĕрен уçса параççĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн ăнлав пĕлтерĕшĕ те улшăнса пынă. Антика тапхăрĕнче стиль сăмах куçăмлă пĕлтерĕшпе çӳренĕ, вăл çырăвăн уйрăмлăхĕсене палăртнă. Ку пĕлтерĕш нумай чухне хальхи вăхăтри термин пĕлтерĕшĕнче те сыхланса юлнă.

XVII ĕмĕр варринчен ку терминпа сăнарлă чĕлхепе пуплевĕн уйрăмлăхĕсене палăртнă. Ăна виçе стиль теорийĕ енчен хакланă: çĕкленӳллĕ, ытахаль, уявсăр – низкий, высокий, нейтральный. «Виçĕ стиль теорине» вырăссен паллă ăсчах Ломоносов пуçарса янă. XVII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррине (Раççейре XVIII ĕмĕр варринелле) классицизмăн илемлĕх тытăмĕнче ку пĕлтерĕш çирĕпленсе ларнă.

XVIII ĕмĕр вĕçĕнче тата XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче стиль ăнлав искусствоведенире хушма пĕлтерĕш туянать. Вăл вăхăтра стиль ăнлав живописьре, музыкăра т.ыт.те çӳреме тытăннă. И.Винкельман, И.В.Гете, Г.В.Ф.Гегель ĕçĕсенче стиле кунашкал ăнлантарни тĕл пулать. Стиле идейăпа сăнарлăх çураçăвĕ, ĕç мелĕ, илемлĕх ăслайĕсен пĕрлĕхĕ тесе палăртнă.

XIX ĕмĕрте ку терминпа искусствоведсемпе литераторсем анлăн усă курнă. Литераторсем ăна литература çыравĕн хăйне майлă уйрăмлăхĕ пек курнă.

XIX ĕмĕр вĕçĕнчи – XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи форма шкулĕн искусствовечĕсем стиль ăнлава тарăнрах тĕпчеме тытăннă. Çапла стиль категорине Г.Вельфлин 2 енчен ăнлантарма пăхнă: пĕрремĕшĕнчен стиль пĕр-пĕр художникăн харкаш уйрăмлăхĕсене кăна палăртмасть, вăл искусствăри пĕр-пĕр юхăмăн е тапхăрăн эстетикăллă шухăшлавне кăтартса парать.

Иккĕмĕшĕнчен, стиль ăнлав форма хăйевĕрлĕхне çеç уçса памасть, вăл пĕр-пĕр тапхăра çеç тивĕçлĕ тĕнче тата этем концепцине çыхăннă.

XX ĕмĕр тăршшĕпе стиль ăнлав тĕрлĕ пĕлтерĕшсемпе çӳренĕ. Çапах та вĕсене çыхăнтараканни – пайăрлăх, уйрăмлăх, хăйне евĕрлĕх палли.

Пуплев стил ăнлав темиçе пайран тăрать:

а) пĕр-пĕр писательĕн, хайлавăн, жанрăн хăйне евĕрлĕ чĕлхе хатĕрĕсен пĕрлĕхĕ: П.Хусанкай стилĕ, «Нарспи» стилĕ, романтиксен стилĕ, пуплев стилĕ; ă) чĕлхе хатĕрĕсене эспрессипе стилистика уйрăмлăхĕ тĕлĕшĕнчен ушкăнланни: официаллă стиль, шӳтлĕ стиль т.ыт.те; б) калаçу чĕлхин тĕсĕсемпе тата синтаксис хăйевĕрлĕхĕ çинче никĕсленнĕ пуплев хатĕрĕсем: пуплешӳ стилĕ, ахаль калаçу стилĕ т.ыт.те.

Вырăссен паллă чĕлхеçи В.В.Виноградов академик стилистикăн çакăн пек тĕсĕсем пурине çирĕплетет: чĕлхе стилистики, пуплев стилистики тата илемлĕ литература стилистики.

Пире пуринчен ытларах илемлĕ литература стилистики кăсăклантарать.

Илемлĕ литература стилистики илемлĕ произведени стилĕн мĕн пур элеменчĕсене, çыравçă стильне, литература юхăмĕн стильне т.ыт.те тĕпчесе вĕрентет. Илемлĕ литература стилĕшĕн чи малтанах хăйне евĕрлĕхе палăртасси, эстетикăлăх тĕлĕшĕнчен чи çӳллĕ шайра тăрасси, тата илемлĕ хайлав формин уйрăмлăхне палăртасси пĕлтерĕшлĕ.

Çапла майпа стиль ăнлава пĕтĕмĕшлен çакăн евĕр уçса пама май пур: илемлĕ формă элеменчĕсен тата унăн пур уйрăмлăхĕсен эстетикăллă пĕрлĕхĕ, вăл хăйне евĕрлĕхпе тата мĕнле те пулин содержание кăтартса парать.

Стиль пĕтĕмĕшле илемлĕ формă уйрăмлăхĕ пулнă май вăл пĕтĕм хайлав тытăмĕпе çыхăннă. Çавăнпа стиль уйрăмлăхĕ текстри кирек хăш пайĕнче те уçăмлăн палăрать.

Çав вăхăтрах хайлав тексчĕнче П.В.Палиевский шучĕпе, стиль «проступает наружу»[27]. Çавна пула вулавçă хайлав хавалĕпе пĕтĕçет.

Стиль доминанчĕсен тытăмĕнче пĕр пĕтĕм стиль палăртать. Вăл стиль уйрăмлăхĕн пахалăхне илемлĕ хăйевĕрлĕхĕ тĕлĕшĕнчех кăтартса парать.

---

[27] Палиевский П.В. Постановка проблемы стиля. - . – С. 7.

Стиль уйрӑмлӑхӗсене стиль категорисем урлӑ А.Н.Соколов системӑласа пӑхма сӗннӗ. А.Н.Соколов Г.Вельфин ӗҫӗсем ҫине таянса ҫапла ҫырнӑ: «стилевые категории выступают как явление художественного стиля, охватывающие все элементы формы».[28] Тӗпчевҫӗ ҫавнашкал стиль категорийӗсене уйӑрса пӑхать: субъективлӑх /объективлӑх, сӑнласа кӑтартни/ экспресси; монументлӑх/камерность т.ыт.те.

Илемлӗ хайлав тӗнчинче тӗрлӗрен сӑнласа пама май пур. Ҫыравҫӑ хайлаври ӗҫсем ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ чухне вӑл сӑнлав стилӗ енне туртӑнать. Кунта ытларах сӑнарсен сӑн-питне, ӗҫ-хӗлне, пит-кӑларӑшне, пейзажа т.ыт.те сӑнласа парасси вырӑнлӑ. Ҫыраҫӑ хайлаври тӗнчене кулленхи Лару-тӑрӑвӗ анчах хӑйӗн стилӗпе тӗплӗн ӳкерсе пама тӑрӑшать.

Сюжетлӑ хайлавсенче ӗҫ-пуҫ хӑвӑрт аталанса пырать, вӑл хивре те кӑткӑс. Кунашкал произведенисенче сӑнарсен характерӗпе автор позицийӗ сюжетран тухса тӑрать.

Психологиллӗ хайлавсенче ҫыравҫӑ сӑнарсен чун-чӗре тӗнчине, кӑмӑл-туйӑмне, характерсене тишкерме кӑмӑлланипе уйӑрса тӑрать.

Сюжетлӑ психологиллӗх, описанилӗх хайлав стильне палӑртакан уйрӑмлӑхсем шутне кӗреҫҫӗ.

Ҫапах та ку категорисем хайлавсенче пӗр-пӗринпе ҫыхӑнма пултарни хевтеллӗ.

Унсӑр пуҫне хайлавсене чӑн пурнӑҫри пек лару-тӑру ҫине таянса калӑплама пулать. Кунашкал хайлавсенче сӑнарсем те, ӗҫ-пуҫсем те пурнӑҫ закономерлӑхне пӑсмасӑр сӑнарлаҫҫӗ. Фантастикӑллӑ хайлавсенчи чӑн пулнипе пӗрлех шухӑшласа кӑларнӑ ӗҫсемпе пулӑмсем ҫинчен ӗненмелле, шухӑшлаттармалла ҫырса кӑтартасси тӗп вырӑн йышӑнать. Фантастикӑллӑ хайлавсенче гиперболӑпа (вӑл пӗр-пӗр ӗҫе, япалана, чӗр чуна е этеме пысӑклатса кӑтартма кирлӗ), литотӑпа (гиперболӑна хирӗҫле троп; сӑнарлакан япалапа пулӑмӗн пӗлтерӗшне, вӑйне, пысӑкӑшне пӗчӗклетсе кӑтартма усӑ кураҫҫӗ), гротескпа (вӑл ӗҫ-пуҫа е пулӑма юриех урӑхлатса, сӑнарлакан

[28] Соколов А.Н. Теория стиля. – М., 1963. – С. 93.

тĕнчене е унăн пайĕсен майлашăвне пăсса кăтартать) тата стиль хăйне евĕрлĕхне кăтартакан паллăсем.

Илемлĕ пуплевре мăшăрлă виçĕ стиль куçкĕретлĕ мăкăрăлса тăрать: сăвă тата проза; номинативлăх тата риторикăллăх; монологизм тата разноречи.

Сăвăпа проза, стиль уйрăмлăхĕсем пулнă май, ритмикăпа темп енчен епле йĕркеленни енчен уйрăлса тăраççĕ. Вĕсем стиле эмоци енчен витĕм кÿреççĕ. Сăвăпа проза хушшинче ритмикăллă прозăпа верлибр вырнаçнă. Вĕсенче те çак стиль уйрăмлăхĕсем лайăх курăнаççĕ.

Стиле номинативлăхпа риторикăлăх тĕлĕшĕнчен хак пама сăнарлăх меслечĕсемпе тата илемлĕх мелĕсемпе, тропсемпе, фигурăсемпе (танлаштару, метафора, градации, повтор т.ыт.те), унсăр пуçне пассивлă лексикăпа, сайра усă куракан сăмахсемпе (архаизм, неологизм, варваризм т.ыт.те) усă кураççĕ.

Ку мелсем хайлав стилистикине самаях витĕмлетме пултараççĕ. Çав вăхăтрах писательсем вĕсене усă курмасан та пултараççĕ. Кун пек чухне сăмахăн тÿрĕ пĕлтерĕшĕ тĕп вырăн йышăнать. Вăл сăнлакан тĕнчен пайĕсене тÿрремĕн палăртма усă кураççĕ. Г.Н.Поспелов çак илемлĕ пуплевĕн пахалăхне номинативлăх тесе калама сĕннĕ. Çавăн пекех номинативлăх шутне ансат синтаксис та кĕрет. Риторикăлăх сăмахсене куçăмлă пĕлтерĕшпе усă курассине, сăнарлă пуплев йĕркелессине тĕпе хурать.

Монологизмпа разноречии илемлĕ хайлав пуплевне йĕркелеме пулăшать. Монологизм шутне хайлаври сăнарсен тата калаçун пуплевĕ пĕр манерлĕ пулни куçкĕретлĕ. Разноречи пирки В.Е.Хализов çапла çырнă: «При разноречии реальный речевой мир становится объектом изображения»[29]. Литературăра разноречи икĕ вариантпа çÿрет: пĕр хайлавсенче сăнарсен пуплев тыткаларăшĕ уйрăлса тăрать, теприсенче сăнарсен тата калуçă пуплевĕ пĕрешкел. Иккĕмĕш варианта М.М.Бахтин хăйĕн ĕçĕсенче полифони тесе палăртать. Хайлав стильне йĕркеленĕ чухне унăн композицийĕ те паллă вырăн йышăнать. Композиции тытăмĕ енчен икĕ тĕрлĕ пулать: ансат тата

---

[29] Хализев В.Е. Речь как предмет художественного изображения // Литературные направления и стили. – М., 1976.

кăткăс. Ансат тытăмлă композици хайлав пайĕсене, паллисене çыхăнтарса йĕркелет. Кун пек чухне сюжет хронологи йĕркипе аталанса пырать, калу форми пĕтĕм хайлав тăршшĕпех пĕр, хронотопра вăхăтпа талккăш пĕрлешсе йĕркелет т.ыт.те. Кăткăс тытăмлă композицийĕпе хайлавсен тытăмĕ, унăн пайĕсем епле йĕркеленни урлă илемлĕхне уçса парать.

Стиле калăплакан тепĕр уйрăмлăх вăл – хайлав калăпăшĕ. Çакна вулакансем те, çыравçăсем те лайăх туяççĕ. «Расчет на большую форму не тот, что на малую, - тесе çырать Ю.Н.Тынянов, - каждая деталь, каждый стилистический прием в зависимости от величины конструкции имеет разную функцию, обладает разной силой, на него ложится разная нагрузка»[30].

Литература пĕлĕвĕн ăслăлăхĕнче пур учĕнăй та илемлĕ пуплев стильне уйрăммăн тĕпчемеççĕ, ăна ытларах чухне илемлĕ литература чĕлхи тесе пăхаççĕ.

А.И.Власенков ăсчах илемлĕ пуплев стильне хăйне уйрăм стиль пек ăнлантарса пама пăхать. «Художественный стиль речи отличается однородностью, широким использованием изобразительно-выразительных средств языка», - тесе çырать вăл.[31] Илемлĕ пуплев стилĕшĕн, чĕлхе хатĕрĕсемсĕр пуçне, ытти стиль хатĕрĕсем те, уйрăмах калаçу стилĕн, курăмлă. Илемлĕ литература чĕлхинче ахаль калаçу лексикипе диалектизмсем, поэзии чĕлхин стилĕпе жаргонсем, тӳрккес сăмахсем, професси сăмахĕсемпе публицистика стилĕн лексики пĕрлешме пултараççĕ. Анчах та çак хатĕрсем илемлĕх стилĕнче эстетика функцине пурнăçлаççĕ. Калаçу стилĕпе ытларах чухне кулленхи хутшăнура усă кураççĕ. Илемлĕ пуплев стилĕ хăйĕн сăнарлăхĕпе тата эмоцилĕхĕпе уйрăлса тăрать. Сăнарлăхпа эмоцилĕх, пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса, хайлав чĕлхине чĕрĕ вăй парса илем кӳреççĕ.

Литературăра чĕлхе паллă вырăн йышăнать, мĕншĕн тесен вăл хайлава калăплама чи кирлĕ мел. Сăмах ăстисем – поэт, писатель – Л.Н.Толстой шухăшĕпе «единственно нужное размещение единственно нужных слов»

---

[30] Тынянов Ю.Н. Поэтика. История литературы. Кино. – М., 1977. – С. 256.
[31] Власенков А.И. Русский язык: Грамматика. Текст. Стили речи. – М., 2003. – С. 310.

тупса хайлавăн тĕп шухăшне сăнарлăн, тĕп-тĕрĕс уçса пама пултарать; унпа пĕрлех сюжета йĕркелеме, характерсене ăнланма пулăшать, вулакан шухăш-кăмăлне тыткăна илсе хумхантарса яма, хайлав тĕнчине витĕмлĕрех тума пултарать. Ку илемлĕ литература чĕлхишĕн кăна курăмлă. Çавна пула вăл литература чĕлхин чи çӳллĕ шайĕнче тăрать. «Самое лучшее в языке, сильнейшие его возможности и редчайшая красота – в произведениях художественной литературы, и все это достается художественными средствами языка», - тесе пĕтĕмлетет тĕпчевçĕ илемлĕ пуплев стилĕн пахалăхне хакланă май[32].

Илемлĕ литература – искусство тĕсĕ, вăл сăмах ăсталăхĕ. Музыкăра – кĕвĕ, живопиçре – тĕс, илемлĕ литературăра вара – сăмах – пурнăçа сăнламалли тĕп меслет. Сăмахпа теме те ӳкерсе пама пулать, курнине курнă пек, илтнине илтнĕ пек тăвать вăл.

Вырăс халăхĕн паллă писателĕ М.Горький каларăш, сăмах илемлĕ литературăн тĕп пайĕ («первоэлемент») шутланать. Илемлĕ литература пурнăçа сăнарлăн ӳкерсе парать, çакă вара пĕтĕмпе сăмах урлă пулса пырать. Чĕлхе илемлĕ литературăна пурнăçри тĕрлĕ пулăмсене, çынсен ĕçне-хĕлне, шухăш-кăмăлне сăнлама нумай мелсем тупса парать. Çавна кура ĕнтĕ илемлĕ литература чĕлхине чылай уйрăм, хăй евĕр чĕлхе теççĕ. «Илемлĕ литература произведенийĕ, - тенĕ М.Горький, - çынсен пурнăçĕ тĕрлĕ ĕçсенче мĕнле курăннине питĕ те тарăннăн, анлăн та уçăмлăн сăнласа пама тăрăшать. Çавăнпа та ăна вичкĕн те яка чĕлхе, витĕрӳллĕ сăмах кирлĕ. Çапла пулнă та ĕнтĕ «классиксен» чĕлхи, ăна вĕсем майĕ-майĕпе, ĕмĕр-ĕмĕр тăршшĕпе якатса пынă».[33] Илемлĕ литературăшăн чĕлхе тасалăхĕпе хитрелĕхĕ мерчентен те хаклă шутланать. Сăмахпа çыравçăсем сăнар калăплаççĕ, сăнлăх ăсталаççĕ. Сăмахпах вĕсем хăйсем сăнласа кăтартнă пурнăçа эмоциллĕ хак параççĕ, ăна мĕнле кăмăлпа йышăннине пĕлтереççĕ. Çакна пула чĕлхе хатĕрĕсем сăнарлă текстра эстетика функцийĕ йышăнаççĕ, экспрессипе эмоции енчен пуянланаççĕ, тĕрлĕ стиль мелĕсемпе пĕрлешсе хăйсен витерӳлĕхне

---

[32] Власенков А.И. Асăннă ĕç. – С.311.
[33] М.Горький о литературе. Литературно-критические статьи. – М., 1953. – С. 616.

çивĕчлетеççĕ. Танлаштарусенче эмоциллĕ сĕм, çыравçă пĕр япала çине мĕнле куçпа пăхни курăнать: ачашшăн, кăмăллăн, курăймасăр, юратса, йĕрĕнсе, кулăшла тат ытти те. Кулленхи пуплевпе танлаштарсан сăнарлă пуплеври сăмахсем, фразăсем – пĕлтерĕшĕпе анлăрах, вĕсем текстра хушма пĕлтерĕш тупаççĕ. Ку пĕлтерĕш илемлĕ хайлавăн пĕтĕмĕшле содержанийĕпе çура çуллă.

Тĕрлĕ сăмахсене çĕнĕрен çĕнĕ сăмах çаврăнăшĕсене çыхăнтарса, пĕлтерĕшсен шутне ĕнтĕ писатель пултарулăхĕнчи (хăйне евĕрлĕ) стиль уйрăмлăхсенчен пĕри пулса тăраççĕ.

Çапла вара сăмахсен тĕп пĕлтерĕшĕсĕр пуçне иккĕмĕшле пĕлтерĕшсем те пур. Сăмахсен тĕрлĕ пĕлтерĕшĕ вĕсен куçăмлă пĕлтерĕшĕпе тачă çыхăннă. Сăмахăн куçăмлă пĕлтерĕшне троп теççĕ. Тĕпрен илсен троп икĕ япалана танлаштарнинчен пулать. Пĕрин пахалăхĕ теприн пахалăхне ăнланма пулăшать. Тропсемпе халăх сăмахлăхĕнче те, литературăра та, ытларах чухне сăвăсенче, анлăн усă кураççĕ. Троп авалтан тĕрлĕ тĕслĕн аталанса пынă. Эпитет, танлаштару, метафора, сăпатлантару, метоними, аллегори, гипербола, литота, ирони, перифраз, синекдоха тата ытти куçăмлă пĕлтерĕшсем тропсен тĕрлĕ тĕсĕсем пулаççĕ.

Хайлав чĕлхине илемлетекен, сăнарлăхпа витĕмлĕх кӳрекен паха мелсенчен пĕри вăл – танлаштару. Ахаль тӳрĕ танлаштару эпир сахалтарах пĕлекен е пирĕншĕн паллах мар япалана лайăхрах пĕлекен япалана юнашар лартса ăнлантарма пулăшать.

Чăваш литературинче ку тĕлĕшпе Хусанкай пултарулăхĕ питĕ кăтартуллă. Çамрăк чухнехи Хусанкай хайлавĕсенче К.В.Иванов, Çеçпĕл Мишши, А.С.Пушкин, М.Лермонтов, С.Есенин, В.Маяковский стилĕ палăрнă. «Шухăша тĕрĕс, витĕмлĕ те сăнарлă ăнлантаракан чĕлхе – Хусанкай чĕлхи. Пушкинла уçăмлă та ирĕклĕ янăракан сăвă йĕрки – Хусанкай йĕрки; философилле лирика, асра юлакан сăнарсем… Вăл чăннипех чăваш халăх поэчĕ ятне тивĕçлĕ пулчĕ. Ирĕксĕрех Достоевский Пушкин пирки калани аса килет: «Тем-то они народный поэт, что всем понятен…»,- тесе палăртать А.Артемьев[34].

---

[34] Артемьев А. Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ. – Шупашкар, 1984. – 70 с.

Çыраçăсем танлаштару хайлама тĕрлĕ мелсемпе усă кураççĕ. Танлаштару хайламалли чи ансат мел – пек, евĕр, майлă сăмахсемпе усă курса илемлĕ пуплев çаврăмĕ йĕркелеме пулать. Сăмахран, П.Хусанкайăн «Тилли юррисенче» темĕн тĕрлĕ танлаштару та тупма пулать. Сăвă ярăмĕнче Тилли хăйĕн тăван-хурăнташне тĕрлĕ япаласемпе танлаштарса сăнлать: «Арăслан пек аттем пур; ăмăрткайăк аннем пур; пĕрхĕт куçлă пиччем пур; акăш пÿллĕ аппам пур; шăркалчă пек шăллăм пур; йăпăртан пек йăмăк пур; хурчăкана тан хам пур». Тепĕр сăвăра Тилли хăйĕн вилнĕ савнийĕ пирки хурланса ăна çапла сăнлать:

Усрав акăш пек савниййĕм пурччĕ,

Çамрăклах çĕре кĕрсе хур пулчĕ.

Ун Шур Атăл хăви пек пÿне

Хурт-кăпшанкă çисе ячĕ пулĕ,

Хура пурçăн пек кăтра çÿçне

Пăрчăкан йăва çавăрайрĕ пулĕ.

Унсăр пуçне çырăвçăн хайлавĕнче анлă танлаштарусем те нумай тĕл пулаççĕ. Анлă танлаштару чăваш халăх пултарулăхĕнче сĕм авалах пулнă.

Анлă танлаштару автор шухăшне тĕрĕс те тĕплĕн ăнланса илме, нумайлăха ас туса юлма пулăшать. Вăл ăнăçлă детальпе, ăнăçлă пейзажпа, ăнăçлă портретпа танлашать. Тĕслĕхрен, «Тилли юррисенче» П.Хусанкай анлă танлаштарупа пĕлсе усă курни уйрăмах «Çĕр палăрми юр çăвать…» сăввинче аван курăнать:

Çĕр палăрми юр çăвать,

Çур килет те юхтарать –

Çамрăк ĕмĕр çавăн пек…

- тет Тилли пурнăç çинчен шухăшланă май.

Çакнашкал асра юлакан паха танлаштару тĕслĕхĕсем «Тилли юрринче» сахал мар. Поэт вĕсемпе вырăнлă, пĕлсе усă курни хайлав пахалăхне çÿллĕ шая çĕклет, унăн хăйне кăна тивĕçлĕ уйрăмлăхне кăтартса парать.

Илемлӗ литература чӗлхине сӑнарлӑхпа витӗмлӗх кӳрекен чи паллӑ мел вӑл – эпитет. Эпитет япалан е пулӑмӑн пӗр-пӗр хӑйне евӗрлӗ уйрӑмлӑхне е пахалӑхне палӑртса калакан сӑмах.

Эпитетӑн пӗлтерӗшӗ поэзире пысӑк. Вӑл пӗр-пӗр япала паллине уйӑрса кӑтартать, лайӑх ӳкерчӗк, кӗвӗ тума пулӑшать. Эпитетсемпе писатель пӗр-пӗр япала ҫине хӑй е хайлавра герой мӗнле пӑхнине, вӗсем унӑн куҫӗ мӗнле курнине, мӗнле туйнине кӑтартать. Халӑх юррисенче яланхи эпитетсем тӗл пулаҫҫӗ: сарӑ хӗр, хура халӑх, вӗри чӗре, йывӑр хуйхӑ т.ыт.те. Уйрӑм поэтсен чӗлхине илес пулсан унта эпир эпитетсем авторӑн хӑйне евӗрлӗ стильне тума пулӑшнине куратпӑр. Пӗрисем халӑх лирикинчи евӗрлӗрех тропсемпе ытларах усӑ кураҫҫӗ, теприсем хальхи литература стилӗшӗн ҫывӑх тӗслӗхсем кӑна шыраса тупма тӑрӑшаҫҫӗ, виҫҫӗмӗшсем халӑх лирикинчи тӗслӗхсене те, хальхи поэзири эпитетсене те килӗштереҫҫӗ. Петӗр Хусанкай пултарулӑхӗнче ҫак икӗ ен те лайӑх палӑрнӑ.

Хӑйсен пӗлтерӗшӗпе эпитетсем сӑнласа кӑтартаканнисем тата эмоциллисем (туйӑмлисем) пулаҫҫӗ. «Тилли юррисенче» Петӗр Хусанкай шӑпах ҫакнашкал эпитетсемпе усӑ курнӑ. Пӗрремӗшӗсем япалана сӑнласа параҫҫӗ. Сӑмахран, «Пусрӑм кӗмӗл ура пуссине, // Карӑнтартӑм пурҫӑн чӗлпӗрне, // Ярӑнтартӑм Хусан хулине», «Хурал пӳртне кӗтӗм хурланса, // Хура халӑх ӳкнӗ урайне…», «Ҫӗмӗрт хулӑ касрӗ ҫурӑма, // Йывӑр шухӑш хӗсрӗ пуҫӑма», «Сар хӗр салтрӗ чӗрҫитти те, // Хам килмерӗм канаша» т.ыт.те. Эмоциллӗ эпитетсенче автор хӑй сӑнласа паракан япала ҫине епле пӑхнине палӑртать. Тӗслӗхрен, «Ман кӑмӑл хуҫӑлать, чун хурланать, // Хурлӑхӑма ҫумашкӑн ҫук куҫҫуль», «Кун-ҫул вӗҫне тухатӑп эп пӗччен, // Чун сивӗнчӗ пур ыр-усалтан» т.ыт.те.

Ҫапла вара эпитетсемпе усӑ курни япалан паллисене, шалти тупсӑмне, пӗлтерӗшне лайӑххрах ӑнланма пулӑшать.

Чӗлхене илемлетекен, пуянлатакан тропсен шутне кӗрекен сӑпатлантарӑва та асӑнмалла. Сӑпатлантару чӗрӗ мар япаласене, ҫут ҫанталӑкри пулӑмсене чӗрӗ чун пек е этем пек сӑнласа кӑтартать.

Сăпатлантару илемлĕ литературăра нумай тĕл пулать. Вăл калас шухăша сăнарлă, куçа курăнмалла кăтартмалли лайăх мел. Акă П.П.Хусанкай «Тилли юррисем»сăвă ярăмĕнче çут çанталăк ÿкерчĕкĕсене сăпатлантарусемпе анлă усă курса сăнарланă: «Çунса вылянă çăлтăр тÿпере, // Хур кайăксем çул тытнă çурçĕре», «Шурăмпуçсем килеççĕ шуралса», «Вут çутипе вылять пĕр чÿрече», «Хĕвел те тухнă, пĕçертет хытах», «Чÿречерен кĕрет шуралнă шуçăм», «Кулать иккен пиртен çак çут çанталăк, // Хĕвелĕ, уйăхĕ – йăлтах кулать» т.ыт.те.

Метонимипе синекдоха та илемлĕ хайлав чĕлхине сăнарлă та витĕмлĕ хатĕрсем шутланаççĕ. Вĕсемшĕн пĕр япалана, унăн пĕлтерĕшĕпе е пĕр-пĕр пайĕпе усă курса, урăх япала урлă кăтартасси пĕлтерĕшлĕ. Вĕсемпе илемлĕ литературăра та, ахаль калаçура та анлă усă кураççĕ. «Тилли юррисенче» те автор метонимипе тата синекдохăпа тухăçлă усă курнă. Сăмахран, çунатлă чун, тухья пуç, кăвак куç, шăл хушшине, чĕлхесĕр янавар, ĕмĕр сакки, çум çакки, ĕмĕрлĕх кил-çуртăм, тĕнчерен уйрăм тĕнĕсĕр пÿрт, юман юпа т.ыт.те.

Хайлав чĕлхине илемлĕ те сăнлăхлă тумалли мелсем татах та пур. П.Хусанкай вĕсемпе ăста усă курни вăл сăнарлă чĕлхене хапăлланине çирĕплетсе парать. Ку унăн стильне ыттисенчен тÿрех уйăрса илме пулăшать.

Çавăн пекех сăвăри е ытти хайлавсенчи сăмах сене пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнтарнинчен калас шухăшăн сăнарлăхĕ те нумай килет. Пĕр-пĕр сăмах ытти сăмахсен çыхăнăвĕнче кăна тĕрлĕ енлĕн палăрать, шухăша, туйăма нумай тĕрлĕ пĕлтерме май парать.

Хайлаври фразăсене мĕнле интонаципе каланинчен те, пĕр фраза тепĕр фразăпа епле çыхăнса тăнинчен те килет чĕлхен витĕмлĕхĕ.

Илемлĕ литература чĕлхин витĕмлĕхне, сăнарне ÿстерме синтаксис фигурисемпе те усă кураççĕ. Ăна тепĕр чухне сăмах (е пуплев) фигури тесе те калаççĕ. Пуплев фигурисем хăйсен пĕлтерĕшне кура тĕрлĕ тĕслĕ пулаççĕ: анафора, антитеза, союзсăрлăх, градаци, инверси, нумайсоюзлăх, паралеллĕх, риторикăллă ыйту, риторикăллă чĕнÿ, каламасăр хăварни, эллипсис, эпифора, эпанафора.

Чĕлхене илем кўмелли пуплев фигурисем хушшинче повторсем уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ. Повтор пĕр-пĕр пулăмăн, ĕçĕн е япалан паллине ытларах асăрхаттарма, илемлĕ пуплеври сăмахсен туйăмне вăйлатма, сăнара курăмлăрах тума кирлĕ. Повторсем синтаксис параллелĕхĕсене çывăх тăраççĕ. Вĕсем поэзире те, прозăра та чылай тĕл пулаççĕ. Пĕтĕмĕшле илсен чăваш поэзийĕнчи повторсем фольклор традицийĕсемпе таччăн çыхăннă. Апла пулин те кашни поэтăн е писателĕн хăйне тивĕçлĕ илемлĕх палли. П.Хусанкай «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕнче повторсемпе тухăçлă усă курнă. Унăн пĕтĕм пултарулăхне илес пулсан та эпир яланах çав пысăк ăсталăха куратпăр. Повторсем сăвă йĕркинче, сăвă çавринче пулаççĕ. Пĕр сăмаха, сăмахсен çаврăнăшне е предложение повторпа икĕ е темиçе хут калаççĕ:

1) йĕркери повтор – предложени. Тĕслĕхрен, «Хĕвел кăнтăрларан пĕр сулăнсан – // Каç пулнăнах вара, каç пулнăнах…», «Ай-хай вăрман кашлать, вăрман кашлать, // Турат çумне турат хушас тет пуль»;

2) сăвă çавринче глагол-повторпа усă курни. Тĕслсехрен, «Юрла кăна, юрла теетĕр те, // Чăн-чăн юррин ăсти эп марччĕ-çке; // Пĕр пикенсе юрла пуçласан // Каях та мар чăн-чăн ăстаран»;

3) синонимла чĕнўсене икĕ хут калани. Тĕслĕхрен, «Ыр кўршĕм-аршăм, Вăта кассăм, // Асăрсенче юлать ман сассăм, // Хушшăмăрта вĕрмерĕ çил» т.ыт.те.

Илемлĕ хайлава сăнарлăх кўрекен тепĕр сăмах фигури – анафора. Кунта сăвă йĕркисен е калуллă хайлавсен юнашар тăракан предложенийĕсем пĕр сăмахран е сăмах çаврăнăшĕнчен пуçланни тĕп вырăн йышăнать. Анафора хайлавăн экпрессилĕхне, шухăшăн тĕпрех енĕсене вăйлатма кирлĕ. Çакнашкал стилистика фигурипе П.Хусанкай «Тилли юррисенче» те сахал мар усă курнă. Çўлерех каланине темиçе тĕслĕхпе çирĕплетсе хăварăпăр:

Пурăнар-ха пурнăçа
Йĕм тĕп çĕре перниччĕн!
Йĕм тĕп çĕре перĕнсен –
Тапрататпăр çĕнĕрен.

Ан макăр, кил-йышăм, маншăн,

Ан макăр, тăван-пĕтен,

Ан макăр, ыр кӳршĕм-аршăм,

Ял-йышăм, эп çĕре кĕрсен.

Кунашкал тĕслĕхсем хайлавран пайтах илсе кăтартма пулать.

Анафорăна хирĕç сăмах фигурине эпифора теççĕ. Эпифорăшăн сăвă йĕрки вĕçĕсем е предложени вĕçĕсем пĕр пек сăмахсемпе е сăмах çаврăнăшĕсемпе вĕçленни пĕлтерĕшлĕ. Ку мел сăввăн сăнарлăх тытăмне йĕркелеме пулăшать. Анчах çырулла литературăра та эпифора мелĕпе йĕркеленĕ çаврасем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен:

Ай-хай ырашăм çук, туллăм çук,

Маккарьяран килнĕ мулăм çук

Тараканран ытла ылтăн çук,

Пул хуппинчен ытла кĕмĕл çук.

Мăн-мăн шыва кĕсмен султăм эп,

Çӳл-çӳл тусем çинче пултăм эп,

Инçе-инçе

Капкас енче

Нихçан кайми юрсем куртăм эп.

Поэт хăйĕн ĕçĕнче халăх сăмахлăхĕн пуянлăхĕпе пĕлсе усă курни сисĕнет. Унашкал тĕслĕхсем сăвă сарăмĕнче чылай.

Чĕлхене сăнарлă калăплама параллеллĕх те пулăшать. Вăл сăвă йĕркисене е предложенисене (предложенисем уйрăм пайсене) синтаксис енчен пĕр майлă йĕркелет, икĕ е темиçе япала сăнарне юнашар çырса кăтартать. Параллеллĕх, тĕпрен илсен, халăх сăмахлăхĕнче ытларах аталланнă. Кунта икĕ япалана танлаштарса шухăша юнашар илсе пани те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Параллелĕх мелĕпе хывнă сăвă-юрăсенче мăшăрăн пыракан шухăшра е сăнарта пĕри тĕп вырăн йышăнать, иккĕмĕшĕ ăна пулăшса, ăнлантарса парать. Параллеллĕхри тĕп пая ăнлантарса параканни çут çанталăк ӳкерчĕкĕ ăнлантарса пыраканни çут çанталăк ӳкерчĕкĕ те, пулăм та, пĕр-пĕр ĕç те пулма пултарать. Тĕп пуçне ăна хăй йĕрĕпе, юнашар илсе

пырать. Унсăр пуçне параллеллĕх тӳрĕ тата хирĕçле майпа йĕркеленме пултарать. Хирĕçле параллеллĕхре пĕр-пĕр пулăма е япалана илсе кăтартаççĕ, анчах та тепĕр пайĕнче ăна хирĕçлеççĕ. П.Хусанкайăн «Тилли юррисенче» параллеллĕх мелĕпе йĕркеленнĕ сăвăсем чылай. Сăмахран, тӳрĕ параллеллĕх мелĕпе калăпланă сăвă çаври:

Ай-хай вăрман кашлать, вăман кашлать,

Турат çумне турат хушас тет пуль.

Ман кăмăл хуçăлать, чун хурланать,

Хурлăхăма çумашкăн çук куççуль.

Ку çаврара хурлăхлă чуна çут çанталăкпа танлаштаруллăн кăтартнă.

Хирĕçле параллеллĕх мелĕпе хывăннă сăвă çаврисем те «Тилли юррисенче» сахал мар.

Тарăн шыва антăм ăшăх тесе,

Мерчен сапакĕсем ăсăп тесе.

Мерчен сапакĕсем пулмарĕ,

Юхан юшкăнчĕкĕсем пулайрĕ.

Эп пурнăç пурăнма ансат тесе,

Ыр çын шутне кĕме часах тесе.

Ыр çын ятне илтни пулмарĕ,

Нушам хыçран пĕр шит юлмарĕ.

Инверси, союзсăрлăх, нумай союзлăх пуплев фигурисем илемлĕ хайлав чĕлхипе сăнарлăх кӳрес çĕрте пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çыравçă предложенири сăмахсен яланхи вырăнне улăштарса пĕр-пĕр шухăша е япалан пĕр-пĕр паллине вăйлатсарах кăтартать. Инверсипе прозăра та, поэзире те, драматурги те усă кураççĕ, анчах вăл сăвăллă хайлавсенче ытларах тĕл пулать: кунта вăл шухăш витĕмлĕхĕпе сăнарлăхне ӳстерме çеç мар, сăвă ритмне виçеллĕ тытса пыма та пулăшать. «Тилли юррисенче» инверсии мелĕпе йĕркеленĕ сăвă çаврисем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен:

Çуралнă эп çурхи чĕрлĕхпелен,

Кĕрленĕ эп кĕрхи кĕрлĕхпелен.

Чăваш чĕлхинче сказуемăйăн яланхи вырăнĕ – предложени вĕçĕнче. Халĕ илсе кăтартнă сăвăра çуралнă, кĕрленĕ глаголсене поэт предложени умне лартнă, çакă Тилли ытлă-çитлĕ çемьере çурални çинчен, вăл пĕр шухăшсăр ўссе çитĕнни çинчен палăртса калама кирлĕ. Кунсăр пуçне инверси сăвва ритм тĕлĕшĕнчен хитре те янравлă йĕркелеме май панă. Сăвăçă «Эп çурхи чĕрлĕхпелен çуралнă, кĕрхи кĕрлĕхпелен кĕрленĕ» тенĕ пулсан сăвă йĕркисен пĕтĕм илемлĕ янравлăхĕ пăсăлнă пулĕччĕ. Унсăр пуçне поэт калас тенĕ шухăш та хăйсен витĕмлĕхĕпе сăнарлăхне çухатĕччĕ.

Инверсисĕр каланă чухне юнашар тăракан сăмахсене пĕр-пĕринчен ытлашши аякка куçарса лартни те шухăша сапаласа ярать. Кун пек чухне те инверси мелĕ чĕлхене илемлетекен, сăнарлăх кўрекен мел пулса ăна уçăмлатса хăварать.

Чĕлхене илемлĕ те сăнарлăхлă тумалли мелсемпе фигурăсем татах та пур. П.Хусанкай «Тилли юррисенче» чĕлхене сăнарлă тума тĕрлĕ мелсемпе усă курнă, çĕнĕрен те çĕнĕ, витĕмлĕрен те витĕмлĕ илемлĕх пайрăмĕсем ăсланă, тăван чĕлхен ахаль çынна курăнман пуянлăхне, пытарăнса тăракан иксĕлми майĕсене «ĕçе кўлнĕ». Вăл, кашни пултаруллă поэт пекех, вĕсемпе хăйне евĕрлĕ усă курма тăрăшнă, çавăнпа унăн хăйне майлă çырас ăсталăхĕ е стилĕ палăрать.

IV сыпăк

## Сăвă виçин поэтики чăваш литератури контестĕнче

Поэзи аталанăвĕн çул-йĕрĕнче сăвă çырас ĕçре тăватă тĕрлĕ йĕрке пур. Вĕсем çаксем: силлабо-тоника, тоника, силлабика, ирĕклĕ сăвă.

Вырăсла сăвă çырасси XVII ĕмĕр вĕçĕнче пуçланнă. Ăна пуçарса яраканĕ Симеон Полоцкий ятлă тĕн çынни пулнă. Хăйĕн сăввисене вăл поляк чĕлхинчен куçарса Украинăра çирĕпленнĕ силлабика сăвă йĕркин калăпне кĕртсе çырнă. Каярах ун майлă ыттисем те çырма пуçланă, силлабика сăвă йĕрки вырăс сăввин никĕсне хываннă. Сăвăсене йĕркесенчи сыпăксен шучĕпе кăна виçсе çырасси вырăс поэзийĕнче XVIII-мĕш ĕмĕрчченех тытăнса тăнă. 1735 çулта çав вăхăтри паллă поэт В.Тредиаковский сăвăсене халăх юррисенчи пек пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксене килĕшӳллĕ йĕркелесе çырмалли çинчен кĕнеке пичетленĕ. Çав кĕнекере вăл вырăс сăввисене силлабо-тоника виçисене пăхăнтарма кирли çинчен пуçласа сăмах хускатнă. Анчах В.Тредиаковский вырăс сăввине çĕнетсе урăхлатассине вĕçнех çитереймен: пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксене килĕшӳллĕ йĕркипе нумай сыпăклă сăвă кăна çырма пулать тесе шутланă вăл. Сахал сыпăклă сăвва силлабика сăвă виçипех çырмалла тенĕ. Кунсăр пуçне тата В.Тредиаковский вырăс сăввинче ама рифмăсем кăна пулма пултараççĕ тесе шутланă, ар рифмăсемпе сайра хутра, кулăшла сăвăсемпе питлекен сăвăсенче çеç усă куртарассишĕн тăнă. Çавăнпа пĕрлех вăл икĕ картлă виçесемсĕр пуçне ытти виçесемпе усă курассине хирĕç пулнă.

Вырăс сăввисене çĕнетсе урăхлатассине М.В.Ломоносов малалла аталантарнă, В.Тредиаковский пуçарăвне вĕçне çитернĕ. Вăл хăйĕн «Письмо о правилах российского стихотворства» (1739) ятлă статйинче сăвăсене тĕрлĕ виçесемпе тата тĕрлĕ рифмăсемпе усă курса çырма май пурри çинчен тата çакă вырăс чĕлхин хăйне тивĕç уйрăмлăхсемпе питĕ килĕшсе тăни çинчен каланă, çав шухăша ĕнентерсе нумай тĕслĕхсем илсе кăтартнă. Çакăн хыççăн вырăссем сăвăсене М.В.Ломоносов кăтартнă пек çĕнĕлле, пĕр тан сыпăклă йĕркесенче пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксене пĕр-пĕрин хыççăн кĕвĕллĕ сыпăнтарса çырма пуçланă, вырăс поэзине силлабо-тоника сăвă йĕрки кĕрсе

Удалено: е

вырнаҫнӑ. Ку сӑвӑ йӗрки, вырӑс чӗлхипе пӗр килсе, паянхи кунченех тытӑнса тӑрать.

XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче вырӑссем сӑвӑсене тата урӑхларах та ҫырма тытӑннӑ: пусӑмлӑ тата пусӑмсӑр сыпӑксене пӗр-пӗрин хыҫҫӑн килӗшӳллӗ ҫыхӑнтарса пынӑ май сӑвӑ йӗркисен пӗр танлӑхне шута илми пулнӑ. Кун пек сӑвӑсенче сӑвӑ ритмне йӗркелекен пусӑм шучӗ кӑна пӗр тан, сыпӑксен шучӗ тӗрлӗ. Ҫав сӑвӑ йӗркине тоника теҫҫӗ. Унӑн уйрӑмлӑхӗсем В.Маяковский сӑввисенче ытларах палӑрса юлнӑ. Ҫӗнӗ тоника сӑвӑ виҫисем совет поэзийӗнче силлабо-тоника сӑвӑ  виҫисем пекех анлӑ сарӑлнӑ. Ҫапла вара, хальхи вӑхӑтра сӑвӑ ҫырас ӗҫ ытларах икӗ майпа – силлабо-тоникӑпа тоника йӗркисем тӑрӑх пулса пырать.

Халӗ кашни сӑвӑ системине, ун тытӑмӗн хӑйне евӗрлӗхне тӗплӗнрех пӑхса тухар-ха.

Чун-чӗрене капланса килнӗ шухӑш-туйӑма палӑртма поэтсем авалтанах ҫӗнӗрен ҫӗнӗ виҫепе,  ҫӗнӗрен ҫӗнӗ тытӑмпа усӑ курнӑ. Чӑваш поэзийӗ, вырӑссен поэзийӗ пекех, силлабика сӑвӑ хывас мелӗ ҫинче никӗсленсе вӑй илнӗ. Чӑвашсен ҫыруллӑ поэзийӗ революцичченех аталаннӑ. Унӑн хӑйӗн традицийӗсем ҫирӗпленнӗ, сӑввӑн уйрӑм формисем (баллада, юптару, юрӑ, поэма) палӑрса пынӑ. Вак формӑллӑ произведенисемпе пӗрлех пысӑк формӑллисем те вӑй илнӗ. Силлабика сӑвӑ йӗрки танлӑхӗпе паллӑ вӑл. Вӑл ҫичӗ сыпӑклӑ, сакӑр сыпӑклӑ, тӑхӑр сыпӑклӑ пулма пултарнӑ. Чӑваш ӑна е сӑвӑ, е юрӑ, е такмак тенӗ. Чӑваш халӑх юрри, сӑвӑ кӗввипе хайланӑ ваттисен сӑмахӗ, тупмалли юмахӗ – пӗтӗмпе тӗпрен силлабика сӑвӑ тытӑмне пӑхӑнса тӑнӑ.

Форма енчен илсе пӑхсан сӑвӑҫсем XX ӗмӗрччен чылайӑшӗ ҫичӗ сыпӑклӑ сӑвӑ виҫипе ҫырнӑ. Ҫичӗ сыпӑклӑ сӑвӑ виҫипе ҫырнӑ чӑвашсен чи паллӑ хайлавӗ К.В.Ивановӑн «Нарспи» поэми. Вӑл чӑваш литературин чӑн-чӑн шедеврӗ. Тӗслӗхшӗн поэмӑри пӗр ҫаврӑмне илсе пӑхатпӑр:

Отформатировано: По левому краю, Отступ: Слева: 4,13 см

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче

Хĕвел пăхрĕ ăшăтса;

Силпи чăваш ялĕнче

Юр ирĕлчĕ васкаса.

∪́∪́∪∪∪∪́ 7 – 3 - а

∪∪́∪∪́∪∪́ 7 – 3 - б

∪∪́∪∪́∪∪́ 7 – 3 - а

∪́∪∪∪́∪∪́ 7 – 3 - а

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче çырнă поэтсенчен хăшĕ-пĕри çичĕ сыпăклă виçепе кăна мар, сакăр, тăхăр, вунă сыпăклă йĕркесемпе те çырса пăхаççĕ. Çакăн йышши йĕркесене эпир Якăвпа Хĕветĕр Турхансен сăввисенче те асăрхатпăр. Сăмахран, «Чĕрем ыратни» сăвва Турхан Яккăвĕ вунă сыпăклă виçепе çырнă.

Ай-хай кăна чунăм, пĕр чунăмçăм,

Куллен-кунах хĕнпе хуйхăратăн;

Епле-епле сăвă эс юрлăн-ши?

Епле сăвăпа хăвна пусарăн?!

∪∪́∪∪́∪́∪∪́∪∪∪ 10 – 4 - а

∪∪́∪∪́∪∪́∪∪∪́∪ 10 – 4 - б

∪∪́∪∪́∪́∪∪∪́∪∪ 10 – 4 - в

∪∪́∪∪∪́∪∪́∪∪́∪ 10 – 4 - г

Турхан Хĕветĕрĕ хăйĕн «Çеçенхирте лăс хурăн…» сăввине вунă сыпăклă виçепе хайланă.

Шăпчăк мĕн шухăшпа пурăннине

Эпĕ юррине итлесе сисĕттĕм,

Шăпчăк шухăшĕ хурлăхлине

Сиссен, эпĕ ĕсĕклесе йĕрĕттĕм.

**Отформатировано:** По левому краю, Отступ: Слева: 4,13 см

∪́ ∪ ∪́ ∪∪ ∪́ ∪∪∪ ∪́ 10 – 4 - а

∪́ ∪∪∪ ∪́ ∪∪ ∪́ ∪∪ 10 – 4 - б

∪́ ∪∪ ∪́ ∪∪∪∪∪ ∪́ 10 - 3 – а

∪ ∪́ ∪́ ∪∪∪ ∪́ ∪́ ∪∪ 10 - 4 - б

Ытти поэтсем те, уйрăмах вырăсларан чăвашла куçарнă чухне, çичĕ сыпăкран час-часах пăрăннă. Сăмахран, К.В.Иванов М.Ю.Леромонтовăн «Калашник хуçа çинчен хунă юррине» куçарнă чухне оригиналти виçине чăвашла та сыхласа хăварнă.

Силлабика авалтан чăваш чĕлхине майлă пулнăран хальхи поэзире те манăçа тухман, унран та ытла çĕнĕрен те çĕнĕ ăслайсемпе пуянлатса пынине палăртмалла. Н.И.Иванов тĕпчевçĕ «Силлабикăн сăвă тытăмне пăхăннă чăваш сăввин хăйне евĕр кĕвĕ те пур-тăр-ха»[35] тесе калать. Тĕпчевçĕсем силлабика сăвă виçипе те, сăвă кĕввипе те хăйне евĕр çемĕллĕ пулнине асăрханă.

Пĕтĕм тĕрĕк халăх сăвви силлабикăна пăхăнать тенĕ чухне тĕрĕк чĕлхинчи сăмахсенче пусăм кайри сыпăк çине ӳкнине тата ытти сыпăксенчен хăйсен вăйĕпе (янравлăхĕпе) ытлашши уйрăлса тăманнине калаççĕ. Чăваш чĕлхинчи пусăм йĕрки, ытти тĕрĕк чĕлхисемпе танлаштарсан, чылай уйрăлса тăманнине калаççĕ. Чăваш чĕлхинчи пусăм йĕрки, ытти тĕрĕк чĕлхисемпе танлаштарсан, чылай уйрăлса тăрать. Чăваш сăмахĕсенчи сасă пур çĕрте те вăйлăн илтĕнме пултарать: сăмах пуçламăшĕнче те, варринче те, вĕçĕнче те. Кунта пусăм сăмах вĕçĕнче кăна мар, урăх вырăнта та пулма пултарать. Чăваш чĕлхинчи пусăм вырăнĕ сăмахра ă(ĕ) сасă мĕнле вырăнта тăнинчен е вăл сăмахра пуррипе çуккинчен килет. Пусăм куçăмлăхĕ, пусăмлă сасăсен кĕвĕллĕ черетленĕвĕ чăваш сăвви çеммине пуянлатать те ĕнтĕ. Сăвă йĕркисен танлăхне (сыпăк шучĕ) тытса пынийĕ тата сăвă йĕркисенче пусăмлă сыпăксемпе пусăмсăр сыпăксем кĕвĕллĕ çыхăнса тăнийĕ – çакă чăваш сăввин хăй евĕрлĕхĕ. Чăваш сăввинчи йĕрке танлăхĕ тĕрлĕ япаларан тухса тăрать: уйрăм сăмахсемпе сăмах тăвакан аффикссене тулли е кĕске формăпа

[35] Иванов Н.И. Чăваш сăвви. – Шупашкар, 1977. – 65 с.

каланинчен те, сăмаха кĕскетсе, ă(ĕ) сасса кăлара-кăлара пăрахнинчен те, сăвăри сăмахсем хушшине тĕрлĕ татăксене кĕрте-кĕрте лартнинчен те, вĕçĕсене кăлара-кăлара пăрахнинчен те. Пусăмлă сасăсем кĕвĕллĕн черетленнĕ çĕрте сăвăри сăмахсем пĕр-пĕринпе пĕтĕçсе кайма пултарнийĕ те (проклитикăпа энклитика) чăваш сăввинче паллă вырăн йышăнса тăрать.

Чăваш халăх сăвви, чăваш çырулăхĕ вăй илнĕ хыççăн хальхи поэзийе куçнă, унта вăл тата та вăй илсе аталаннă: пусăмсăр сыпăкпа пусăмлă сыпăк кĕвви тата та уçăмлăн янрама тытăннă. Анчах та чăваш сăвви тăруках силлабика сăвă тытăмĕнчен хăпма пултарайман: пусăмлă тата пусăмсăр сыпăк кĕвви уйрăм сыпăксенче çеç хытăрах палăрса тăнă. Çапах та, вăхăт иртнĕçемĕн, чăваш сăвви улшăнса пынă, вăл силлабо-тоника енне туртăннă, тоника патне çывхарса пынă. Часах силлабо-тоника виçисем поэзире сарăлса, вăй илсе пынă.

Хальхи вăхăтри чăваш поэзийĕнче силлабо-тоника сăвă виçи уйрăмах пысăк вырăн йышăнать. Мĕн-ха вăл силлабо-тоника? «Силлабо» - грек сăмахĕ, вăл сыпăк тенине пĕлтерет. «Тоника» тени пусăм тени пулать. Сăвă çырмалли çак йĕрке авалах аталанса кайнă. 2500 çул каялла авалхи Греци поэзийĕче çакăн йышши виçе вăй илнĕ. Силлабо-тоника сăвă виçипе пĕтĕм тĕнче поэчĕсем сăвăсем хайланă.

Силлабо-тоника сыпăкĕсемпе пусăмсем пĕрлешсе йĕркеленĕ сăвă виçи, авалтанах пиçĕлĕхĕпе, витĕмлĕхĕпе, кĕввипе уйрăлса тăнă. Вăл пĕр шайра тăман, вĕçĕмсĕр аталаннă, хăйĕн çĕнĕ пахалăхĕсене палăртнă, халĕ те аталанса пырать.

Тĕслĕхшĕн Ухсай Яккăвĕн «Юратрăм эп, хирсем, сире…» сăввин пĕр сыпăкне илсе пăхар-ха:

Юратрăм эп, хирсем, сире,  
Сана та сĕм хура вăрман!  
Нихçан та шухă чĕрере  
Ку юрату çухалмĕ ман.

∪∪́∪∪́∪∪́∪∪́ 8 – 4 - а

∪∪́∪∪́∪∪́∪∪́ 8 – 4 - б

∪∪́∪∪́∪∪́∪∪́ 8 – 4 - а

∪∪́∪∪́∪∪́∪∪́ 8 – 4 - б

Сăвăри сыпăксен шучĕ тĕлĕшĕнчен – вĕсем кашни йĕркерех сакăршар сыпăк. Пусăмсем кашни йĕркерех тăватшар. Пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксем тĕрĕс черетленсе пыраççĕ.

Силлабо-тоника, авалхи Грецире пуçланса кайнăскер, паянхи куна çитиччен самай улшăннă. Кашни халăх хăй чĕлхине юравлă туса йышăннă. Мĕншĕн тесен сасăсен кĕвĕлĕхĕ, пусăмсем мĕнле ӳкни кашни халăх чĕлхинче тĕрлĕрен: французсен пусăм сăмахăн юлашки сыпăкĕ çине, акăлчансен малти сыпăк çине ӳкет.

Авалхи Грецире силлабо-тоника вырăнти халăх чĕлхин кĕввине тĕпе хурса аталаннă. Çак йĕркеленӳ музыкăри сасăсен йĕркеленĕвне çывăх. Авалхи Грецире сасăсен янравне мора (пай) текен виçипе виçнĕ. Кĕске тăсăлакан сыпăк пĕр пайпа, вăрăммăн янăракан сыпăк икĕ пайпа танлашнă. Кĕске сыпăка (∪) паллă, вăрăм сыпăка (–) паллă лартса çырнă. Виçĕ пайлă стопасем çаксем пулнă: ямб (∪–), хорей (–∪), трибрахий (∪∪∪); тăватă пайлисем: спондей (––), дактиль (–∪∪), анапест (∪∪–); пилĕк пайлисем: бакхий (∪––), антибакхий (––∪), кретик (–∪–), тăватă тĕрлĕ пеон (–∪∪∪, ∪–∪∪, ∪∪–∪, ∪∪∪–);ултă пайлисем: молосс (–––), хориямб (–∪∪–), антиспаст (∪––∪), икĕ тĕрлĕ ионик (∪∪––,––∪∪); çичĕ пайлисем: тăватă тĕрлĕ эпитрит (∪–––,–∪––,––∪–,–––∪). Авалхи грексен чĕлхе янăравĕ хăйне евĕр пулнă пирки ытти чĕлхесенче вăрăм тата кĕске сыпăксене пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксемпе палăрта пуçланă. Авалхи Грецире йĕркеленнĕ сăвă тытăмĕсем Европăри ытти çĕр-шывсене те сарăлнă. М.Смотрицкий славян «Грамматикисен» авторĕ пулнă май сăвă виçи стописен 12 тĕсне палăртать: тăваттăшĕ икĕ пайлисем, саккăрăшĕ виçĕ пайлисем.

| Икĕ пайлисем | Виçĕ пайлисем |
|---|---|
| Спондей –– | Дактиль –∪∪ |
| Пиррихий ∪∪ | Анапест ∪∪– |
| Трохей (хорей) –∪ | Амфибрахий ∪–∪ |
| Ямб –∪ | Амфимакр –∪– |
| | Бакхий ∪–– |
| | Палимбакхий ––∪ |
| | Трибрахий ∪∪∪ |
| | Тримакр ––– |

М.Смотрицкий авалхи грексем пекех вăрăм сыпăка «–» паллăпа, кĕске сыпăка «∪» паллăпа палăртнă. Анчах та вăл славян чĕлхинчи уçă сасăсем вăрăмлăх/кĕскелĕх тĕлĕшĕнчен палăса тăманнине шута илмен. Ун шучĕпе вăрăм сыпăксем çине пусăм ўкме те, ўкмесен те пултарать. Çапла майпа М.Смотрицкий стопасенчи сыпăксем çирĕп йĕркене пăхăнса йĕркеленмен тет. Хальхи вăхăтра поэзире ямб, хорей, дактиль, амфибрахий тата анапест виçисем сыхланса юлнă. Вĕсен пурин те пĕрер «вăрăм» сыпăк. Ыттисенче е икшер (спондей, амфимбрахий, бакхий, палимбакхий), е виçшер сыпăк (тримакр), е пачах çук (пиррихий, трибрахий). «Вăрăм» тата «кĕске» (пулăмлă тата пусăмсăр) сыпăксенчен тăракан пĕрлĕхрен сăвă хывма çук. Хальхи поэзире стопасем пусăмлă тата пусăмсăр сыпăк ушкăнĕсене черетленнипе йĕркеленеççĕ. Хальхи чăваш поэзинче силлабо-тоника виçине чĕртсе яраканни – Çеçпĕл Мишши пулнă. Вăл 1920 çулта «Канаш» хаçатра «Сăвă çырассипе ударени правилисем» ятлă статья пичетленĕ. Кунта Çеçпĕл Мишши икĕ пысăк ыйту хускатнă: 1) чăваш сăввине çĕнетсе урăхлатасси, 2) пĕтĕм чăваш çырăвĕнче пĕр пусăм йĕрке тăвасси. Ку ыйтусем пĕр-пĕринпе питĕ тачă çыхăнса тăраççĕ. Çакна Çеçпĕл Мишши хăйĕн статйинче ĕнентерўллĕ ăнлантарса панă.

Çеçпĕл Мишши чăваш сăввине çĕнетсе урăхлатнă чухне пуринчен малтан чăваш чĕлхин уйрăмлăхĕсене, унăн фонетика законĕсене шута илнĕ.

Çапла вара вăл чăваш поэзине кĕртнĕ силлабо-тоника сăвă йĕрки чăваш чĕлхипе пĕр килет. Ахальтен мар ĕнтĕ сăвă йĕрки чăваш поэзинче кĕске тапхăртах çирĕпленнĕ.

Çеçпĕл Мишши сăвăсене ытларах ямб, хорей, анапест, амфибрахий виçисемпе çырнă. Дактиль виçисемпе Çеçпĕл чăвашла сăвăра пачах усă курман.

Халĕ икĕ сыпăклă стопасене – ямб тата хорей сăвă виçисене пăхса тухар-ха.

Ямб сăвă виçинче йĕркесенчи пусăмсăр сыпăкем пусăмлисемпе черетленсе пыраççĕ.

Пĕлтер мана, тăван çĕр-шывăм,
Хăçан кăтартăн халăхна
Ху чĕлхӳне, хăват кĕртмешкĕн
Тĕнчене килнĕ халăхна?

*(«Чăваш чĕлхи»)*

◡◡́◡◡́◡◡́◡◡́◡ 9 – 4 - а
◡◡́◡◡́◡◡́◡◡́ 8 – 4 - б
◡◡́◡◡́◡◡́◡◡́◡ 9 – 4 - а
◡◡́◡◡́◡◡́◡◡́ 8 – 4 -б

Çак тытăма сăвăра тĕп-тĕрĕс тытса пырас тесен йăлтах икĕ сыпăклă сăмахсем тупмалла, вăл сăмахсенче кашнинчех пусăм юлашки сыпăк çине ӳкмелле. Анчах та чĕлхере пĕр, икĕ, виçĕ, тăватă е ытларах сыпăклă сăмахсем те нумай. Акă илсе панă Çеçпĕл Мишшин сăвă çаврăмĕнче тĕрлĕрен сăмахсем тĕл пулаççĕ. Грамматика законĕ тăрăх сăмахра пĕр пусăм кăна. Пĕр сыпăклă сăмахра вара хăш чух пусăм пачах палăрмасть. Тĕслĕхрен «Ху чĕл-хӳ-не хă-ват кĕртмешкĕн…» йĕркере пусăм тăваттăмĕш сыпăк çине кăна ӳкет. Тăваттăмĕш йĕркере те çавăн пекех. Анчах ку сиксе юлнă пусăмсем (пиррихийсем) сăввăн пĕтĕмĕшле кĕввине пăсмаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене клаузулăсем – сăвă йĕркин вĕçĕсем – çирĕп тытса пыраççĕ: çĕршывăм – халăхна – кĕртмешкĕн – ывăлна.

Икĕ сыпăклă стопасен тепĕр тĕсĕ вăл – хорей. Кунта пусăм малти сыпăксем çине ӳкет. Тĕслĕхрен:

Вĕтĕ-вĕтĕ хум вылянăн
Тăрă кӳлĕ питĕнче,
Кăпăш юрĕ кăштăртатнă
Кăпăк тейĕн çĕр çине.

*Ю.Петров*

◡́◡◡́◡◡́◡◡́◡ 8 – 4 - а
◡́◡◡́◡◡́◡◡́ 7 – 4 - б
◡́◡◡́◡◡́◡◡́◡ 8 – 4 - а
◡́◡◡́◡◡́◡◡́ 7 – 4 - б

Хорей виçинче те, ямбри пекех, йĕркери сăмахсенчи пусăм схемăри тытăмпа час-часах пĕр килмест. Ю.Петров сăввисенчен илсе кăтартнă тĕслĕхре икĕ сăмахра «пулăшу» пусăмĕпе усă курнă: «пи-тĕн-че», «кăш-тăр-тат-нă». Ку сăмахсенчи малтанхи пусăмсем «пулăшу» пĕлтерĕшлĕ. Ямбпа хорей виçинчи пусăмсене сиктерсе хăварни сăвă кĕввин тĕрлĕ варианчĕсене тупма пулăшать. Анчах та клаузулăсенчи пусăм çирĕп, уçăмлă пулмалла.

Ямбпа хорейсĕр пуçне хальхи силлабо-тоникăра тата дактиль, амфибрахий, анапест сăвă виçисем паллă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем – виçĕ стопаллă сăвă виçисем.

Малта пусăмлă сыпăк, ун хыççăн икĕ пусăмсăр сыпăк йĕркеленсе пулнă стопасенчен тăракан сăвă виçине дактиль теççĕ (дактиль грекла – пӳрне).

Тĕслĕхрен, Юрий Айдашăн «1946» сăввине илсе пăхар:

Шăппăн шăвать каç чаршавĕ,
Çăлтăр вылять чӳхенсе.
Сӳннĕ йăлтах кун шăв-шавĕ,
Çĕр çеç пĕтмен сивĕнсе.

∪́∪∪∪́∪∪∪́∪ 8 – 3 - а

∪́∪∪∪́∪∪∪́ 7 – 3 - б

∪́∪∪∪́∪∪∪́∪ 8 – 3 - а

∪́∪∪∪́∪∪∪́ 7 – 3 - б

Виçĕ сыпăкран йĕркеленекен стопасенчен пулнă тепĕр йышши сăвă виçи вăл амфибрахий. (Амфи грекла - çавра, брахус – кĕске). Кунта пусăм яланах иккĕмĕш сыпăк çине ӳкет. Сăмахран, Ç.Элкерĕн «Хурçă карап» хайлавĕнчи пĕр çаврине тимлер:

Карап шăвăнать тек канмасăр, хăюллăн
Çĕнтернĕ, вакланнă хумсем çийĕпе.
Ишет вăл хавассăн пĕлсе тытнă çулăн
Хастар капитанĕ кăтартнă йĕрпе.

∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪ 12 – 4 - а

∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 11 – 4 - б

∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪ 12 – 4 - а

∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 11 – 4 - б

Виçĕ сыпăклă стопасен тепĕр йышши виçине анапест теççĕ. Кунта малта пусăмсăр икĕ сыпăк, вĕсем хыççăн пусăмлă пĕр сыпăк. Сăмахран, Митта Ваçлейĕ «Сиктермерĕн мана кĕленче сăпкара…» сăввине çак виçепе çырнă:

Сиктермерĕн мана кĕленче сăпкара
Макăрсан пыл хумарăн тута-çăвара.
Анчах сансăр пуçне, ыр çĕршывăм,
Тĕнчере чи хакли тек пур-ши вăл?

∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 12 – 4 - а

∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 12 – 4 – а

∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪ 10 – 3 - б

∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪ 10 – 3 - б

Виçĕ сыпăклă стопасем те тĕрлĕ вариантлă пулма пултараççĕ. Схемăри пусăмсене хăш чухне сăвăри хăш-пĕр сăмахсем пăхăнса тăмаççĕ. Тĕслĕхрен, Митта Ваçлейĕн анапест виçипе çырнă тепĕр сăввинчен пĕр çавра илсе пăхар.

Ял хĕрри укăлча. Симĕсленнĕ калча
Хĕвелпе пĕрлешсе йăрăм-йăрăм юхать.
Сыв-и, вата юман! Кунĕпех ачапча
Сан туйру айĕнче туй тăвать.

∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 12 – 4 - а

∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 12 – 4 - б

∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 12 – 4 - а

∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 9 – 3 - б

«Сыв-и, ватă юман…» пуçланса каять виççĕмĕш йĕрке. Ку икĕ стопара анапест виçи пăсăлать. Анчах та сăвă пĕтĕмĕшле тĕп тытăмрах юлать. Мĕншĕн тесессĕн ăна ытти çирĕп стопасем тата клаузулăсем çĕклеççĕ.

Хăш-пĕр стопасенчи пусăмсене улăштарсан виçĕ сыпăклă сăвă тĕрлĕрен янăрать, тĕрлĕрен кĕвĕ çуратать.

Çапла вара силлабо-тоника ĕмĕрсем хушши çĕнелсе, улшăнса пынă. Хальхи вăхăтра та вăл аталанать, хăйĕн çĕнĕ пахалăхĕсене палăртать.

Силлабо-тоника сăвă виçинче йĕркесенчи сыпăксенче пусăмсен шутне пĕр харăсах тытса пыраççĕ тесе палăртнăччĕ çӳлерех. Тоника сăвă виçинче вара пусăмсен шучĕ кăна пĕр евĕрлĕрех пулать (тон грекла – сасă, тонос – пусăм).

Сăвă вăл – кĕвĕ. Силлабикăра сăвă кĕвви сăвă йĕркисен танлăхĕнчен килет. Силлабо-тоникăра сăвă йĕркисен танлăхĕпе сăвăри сăмахсенче

пусăмлă тата пусăмсăр сыпăк кĕвĕллĕ черетленсе пынине куртăмăр. Тоникăпа çырнă сăвва чĕлхен мĕнле мелĕ кĕвĕллĕ тунине татса пама çăмăл мар.

Малтанах тоника сăвă виçи халăх юррисенче йĕркеленнĕ. Каярахпа сăвăçсен пултарулăхĕнче те паллă вырăн йышăнма тытăннă. Тоникăра пусăмлă сыпăксем хушшинчи пусăмсăр сыпăксен шучĕ те пĕр пек мар. Тĕслĕхрен, халăх юрринчи пĕр çаврине илсе пăхар-ха:

Атăлăн леш енче мĕн ĕçлеççĕ
Чĕнтен тилхепе яваççĕ
Варрисене пурçăн та, ай, хураççĕ,
Вĕçĕсене ука яраççĕ.

∪́∪∪∪́∪∪́∪∪∪́∪ 10 – 4 - а
∪∪́∪∪∪́∪∪́∪ 8 – 3 - а
∪∪́∪∪∪́∪∪∪∪∪́∪ 11 – 3 - а
∪∪∪∪́∪∪́∪∪́∪ 9 – 3 - а

Илсе кăтартнă тĕслĕхре 1-мĕшпе 3-мĕш йĕркесенче 4-шар, 2-мĕшпе 4-мĕш йĕркесенче 3-шер пусăм. Сыпăксен шучĕ вара кашни йĕркере тĕрлĕрен (10, 8, 11, 9). Кунта силлабо-тоникăри пĕр евĕрлĕ стопасем черетленсе пымаççĕ. Сăввăн ритмикине йĕркелес енĕпе пусăм тĕп вырăнта тăрать.

Тоника тытăмĕнчи сăвă виçисем тимиçе тĕрлĕ пулаççĕ: силлабо-тоникăна çывăх виçесем, дольниксем, логаэдсем, акцентлă сăвăсем.

Тоникăра силлабо-тоникăна çывăх сăвăсем чылай тĕл пулаççĕ. Сăмах май каласан XVIII ĕмĕрте тоника тесе силлабо-тоникăна та каланă. Тĕслĕхрен, туй юрринчен пĕр çаврăма илсе пăхар-ха:

Тĕпĕр-тĕпĕр килтĕмĕр,
Çĕр чĕтретсе килтĕмĕр.
Выртан каска йăванчĕ,
Ларан йывăç хумханчĕ.

/ / / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 – 4 - а

/ / / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 – 4 - а

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 – 3 - б

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 - 3 - б

Ку тоникăлла сăвă хорей сăвă виçине çывăх. Çавăн пекех ямб, дактиль, анапест, амфибрахий виçисен çывăх тоникăллă сăвăсем те тĕл пулаççĕ.

Дольниксем – силлабо-тоникăна çывăхрах, вăл силлабо-тоникăпа таса тоника хутлăхĕнчи форма шутланать. Кĕвĕ кунта йĕркесенчи пусăмсен шучĕ пĕрешкел пулнипе йĕркеленет. Пусăмсем хушшинче ялан тенĕ пекех пĕр е икĕ пусăмсăр сыпăк пулать. Дольник силлабо-тоникăна çывăхрах пулин те йĕркесенчи хăш-пĕр стопасенче сыпăксем сиксе юлаççĕ. Тĕслĕх вырăнне А.Атиллăн сăввине илсе пăхар:

Çӳлте – кайăксен патефонĕ,
Умра – çут çанталăк чĕрçи.
Итле! – тет, кĕрлет симфонии,
Çырла йăлăнать: тат, çи.

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪∪∪ 9 – 3 - а

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪∪ 8 – 3 - б

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪∪ 8 – 3 - а

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 – 3 - б

Ку сăвă виçи амфибрахий сăвă виçине çывăх. Сăвăра кашни йĕркерех виçшер пусăм, юлашки икĕ йĕркере пĕрер сыпăк сиксе юлнă.

Дольниксемпе усă курни сăвăсен тĕрлĕрен янравлăхне туйма пулăшать.

Логаэдсем (логос грекла – сăмах, аэдэ – юрă) – тоника сăвă виçин пĕр тĕсĕ. Вĕсем йĕркесенче тĕрлĕ йышши сăвă виçисем (тĕрлĕ йышши стопасем) пĕрлешнипе пулаççĕ. Сăмахран, дактильпе хорей, анапестпа ямб пĕр йĕркере çыхăнма пултараççĕ.

Каланине П.Хусанкайăн «Сен Катямăна асăнса» сăввипе çирĕплетме пулать.

Сайралать пирĕн ватă гварди.
Хурала, комсомолецсем!
Яш чĕре варрине кăвар чĕрт,
Хурлăхпа пуçна ан пĕксем.

∪∪∪́∪́∪∪́∪∪́∪ 9 – 4 – а
∪∪∪́∪∪∪́∪∪́ 8 – 3 - б
∪∪∪́∪∪∪́∪∪́∪ 9 – 3 - в
∪∪∪́∪∪∪∪∪ 8 – 1 - б

Ку йĕркесен пуçлашăшĕнче – анапест стописем, вĕçнелле ямб стописем вырнаçнă.

Тĕслĕхрен, Ю.Айдашăн «Каç» сăввинчи хăш-пĕр йĕркисенче дактиль стописем хорей стописемпе черетленеççĕ.

Санăн аллу тӳпере çăлтăрсем çутса ячĕ,
Эс çӳçентертĕн пĕчĕк тӳлек çырмана.
Эс хушнипе ут кĕтӳçĕн салхуллă кăвайчĕ,
Шанчăк палли пек, канăçлăх сунчĕ мана.

∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪ 14 – 5 - а
∪́∪∪∪́∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 12 – 5 - б
∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪ 14 – 5 - а
∪́∪∪∪́∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 12 – 5 - б

Кунта иккĕмĕшпе тăваттăмĕш йĕркесенче логаэд паллисене асăрхама пулать.

Европăра тата Раççейри поэтсем дольниксемпе тата логаэдсемпе авалхи Греци поэчĕсен гекзаметр тата ытти виçисемпе çырнă хайлавĕсене куçарнă чухне усă курнă. Каярахпа ку формăсем оригиналлă произведенисенче те

çирĕпленсе юлнă, малалла аталанса пынă, поэтсене силлабо-тоникăн пĕр евĕрлĕхрех кĕввине çĕнетме, ритмсене пуянлатма май панă. Ку виçесем калаçу, чĕнӳ интонацине лайăхрах кăтартма пулăшаççĕ. Çавăнпа юптаруçăсем ку виçесемпе анлă усă курма тытăннă.

Тоника сăвă виçисем халăх поэзийĕнче ĕмĕртенпех пулнă. Халăх пултарулăхне тĕпчесе, вĕренсе пынă май, ăста поэтсем унти ритмикăна анлăн усă курма тытăнаççĕ. Уйрăмах ку витĕм халăх поэзийĕ евĕрлĕрех çырнă хайлавсенче палăрать. Халăх юррисемпе былинисен илемлĕхне, сăнарлăхне поэтсем юратса тĕпченĕ, вĕсен ытарайми кĕввипе хăйсен хайлавĕсенче усă курма тăрăшнă.

Революциччен чăваш халăх поэзийĕнче тоника питех аталанман. Çырулăх пуçлансан вара вăл К.В.Иванов пултарулăхĕнче пуçласа вăй илет. «Нарспи» авторĕ вырăс поэчĕсен хайлавĕсене çине тăрса чăвашла куçарнă. Вăл М.Ю.Лермонтовăн «Калашник хуçа çинчен хунă юрă» хайлавра тоника сăвă тытăмне питĕ лайăх сыхласа хăварнă. Чăваш поэзийĕнче ку виçипе çырнă хайлавĕсене Çеçпĕл Мишши, Ç.Элкер, П.Хусанкай, С.Шавли т.ыт.поэтсен пултарулăхĕнче курма пулать. Акă, тĕслĕхрен, Ç.Элкер «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна тоника виçипе çырнă. Унти йĕркесем хăйне евĕрлĕ янравлăн илтĕнеççĕ.

1 Кушлавăш текен вуникĕ ял уйĕ
2 Хура вăрманпа хупланса выртать.
3 Çулла е хĕлле – такам та туйĕ –
4 Вăрманлăх кунта хӳтлĕхе тытать.
5 Хаваслă кĕтес! Сывлать вăл кал-кал…
6 Илемлĕ, аслă çакăнти вăрман,
7 Пĕр-ик ĕмĕр пирĕнтен авал,
8 Вĕçĕ-хĕрри ун ниçта курăнман.

1 ◡◡́◡◡◡◡́◡◡◡́◡◡◡́◡ 11 – 4 - а

2 ◡◡́◡◡◡́◡◡◡́◡◡́ 10 – 4 - б

3 ∪∪́∪∪∪́∪∪́∪∪∪́ 10 – 4 - а

4 ∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪́ 10 – 4 - в

5 ∪∪́∪∪∪́∪∪́∪∪∪́ 10 – 4 - г

6 ∪∪́∪∪́∪∪∪∪́∪∪́ 10 – 4 - д

7 ∪∪́∪∪́∪∪∪́∪∪́ 9 – 4 - г

8 ∪∪́∪∪́∪∪∪́∪∪∪́ 10 – 4 - д

Ç.Элкер поэминчи йĕркесенче тăватă пусăмлă тоника тĕп вырăнта тăрать.

Ку йĕркесенче пусăмсем хушшинчи пусăмсăр сыпăксен шучĕ тĕрлĕрен. Анчах та, тĕпрен илсен, сăвăсен пĕтĕмĕшле тытăмне амфибрахий виçине çывăх теме пулать (анакруза) йышши стопана чылай чухне тытса пырать. Йĕркесен вĕçĕнче вара ар тата ама клаузулăсем. Ç.Элкер поэминчи йĕркесенче тăршшипех пауза палăрать. Йĕркесенче вăл икĕ пая пайланать:

Ялти чухăнсем усаççĕ пуçа,
Шыраççĕ меслет кăшт укçа тупма.
Вăрман çĕрĕнче килмест-мĕн укçа.
Тырри шав пулмасть. Ăçта тыр сутма?

∪∪́∪∪∪́∪∪́∪∪∪́ 10 – 4 - а

∪∪́∪∪∪́∪∪∪́∪∪́ 10 – 4 - б

∪∪́∪∪∪́∪∪́∪∪∪́ 10 – 4 – а

∪∪́∪∪∪́∪∪́∪∪∪́ 10 – 4 - б

Пауза уйăракан йĕркесен пĕрремĕш пайне поэзире тĕрлĕрен вĕçеççĕ: е ар, е ама, е дактиль пусăмлă сыпăксемпе. «Хĕн-хур айĕнче» поэмăра икĕ тĕрлĕ çурма йĕркесем тĕл пулаççĕ: 1. «ялти чухăнсем усаççĕ пуçа» - «чухăнсем» - ар вĕçленӳ; 2. «илемлĕ, аслă çакăнта вăрман» - «аслă» - ама вĕçленӳ.

Акцентлă сăвă та тоника сăвă тытăмĕн виçийĕ шутланать. Ун йышши тоникăллă сăвăра ритмикăна пĕртан пусăмсен хисепĕ тытса пырать. Пусăмсăр сыпăксен шучĕ вара тĕрлĕрен. Йĕркесенчи сăмахсем е сăмах çыхăнăвĕсем пĕр вăйлă пусăмпа пĕрлешсе тăраççĕ, вĕсем, пĕр-пĕринчен ритмикăпа уйрăлса пауза тĕлĕшĕпе ытларах палăрса тăраççĕ. Ку тытăм В.Маяковский хайлавĕсенче тĕп вырăн йышăнать. Унăн витĕмĕпе чăваш поэзинче те çакнашкал виçепе риитмикăллă хайлавсем çуралнă. Уйрăмах Петĕр Хусанкай, Митта Ваçлейĕ, Стихван Шавли хайлавĕсенче кунашкал сăвăсем курăнкалаççĕ.

Ирĕклĕ сăвă XX ĕмĕр пуçламăшĕнче вăй илсе аталанать. Паллах, ирĕклĕ сăвă унччен пулманнине пĕлтермест. Вăл чăн та пулнă, анчах та ăна асăрхамасăр хăварнă. Çирĕп йĕркене пăхăнакан çыруллă сăвăра урăхла япаласем палăрма тытăнсан кăна «ирĕклĕ сăвă» («свободные стихи») теме пуçланă.

Ирĕклĕ сăвă малтан анăçра çуралнă. Ăна пуçарса яраканĕсем француз поэчĕ Эмиль Верхарн тата акăлчан поэчĕ Уолт Уитмен т.ыт.те. Вĕсем халăха çывăх тăнă. Çавăнпа та вĕсем ирĕклĕ сăвва халăхран вĕреннĕ.

Вырăс поэзийĕнче ирĕклĕ сăвă ăнлав икĕ пĕлтерĕшпе çӳрет: «вольный стих» тата «свободный стих». Чăвашла вĕсене пĕр пĕлтерĕшпех куçараççĕ: «ирĕклĕ сăвă». Ку тĕрĕсех мар. «Вольный стих» тата «свободный стих» ăнлавсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ.

«Вольный стих» тесе тан мар виçеллĕ йĕркесенчен тăракан сăвва калаççĕ. Унта рифма та, ритм та пулма пултарать. Ку форма ытларах юптарусенче сарăлнă. Унăн поэтики те хăйне евĕрлĕ.

Йĕркесенчи сыпăксен виçи тĕрлĕрен пулни юптару чĕлхине çăмăллăн янăрама пулăшать. Шухăшаваскамасăр, уйрăм сăмахсене палăртса калама питĕ меллĕ ку форма. Диалогра, ăс вĕрентсе калакан е ирониллĕ хайлавсенче поэтсем унпа час-часах усă кураççĕ. Чăваш юптаруçисем те тан мар сыпăклă йĕркесемпе час-часах çыраççĕ. Тĕслĕхрен, Н.Евдокимовăн «Картара» юптарăвĕнчи пĕр сыпăка пăхар-ха:

1 Ирхине, хуҫа пӳртрен тухиччен,
2 Ĕне Сурăха кăлт! Тапрĕ уринчен.
3 Илтрĕн-и, - тет, - кĕҫĕр пӳртре мĕн турĕҫ?
4 Так ахаль вĕт, пĕр сăлтавсăр,
5 Усăсăр
6 Ĕҫкĕ тунă. Ҫутăличчен шавларĕҫ.
7 Мĕн чул расхут тухмарĕ пуль унта!
8 Эс пур – мăшкăлтăк шывĕ ҫеҫ умăнта.
9 Пирĕншĕн тесен,
10 Чĕптĕм ҫăнăх ҫук вĕсен.

1 ◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡ 10 – 4 - а
2 ◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡ 11 – 4 - а
3 ◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡ 11 – 5 -б
4 ◡◡◡◡◡◡◡◡ 8 – 4 - в
5 ◡◡◡ 3 – 1 - в
6 ◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡ 11 – 4 - б
7 ◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡ 10 – 4 - г
8 ◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡◡ 11 - 4 - г
9 ◡◡◡◡◡ 5 – 2 - д
10 ◡◡◡◡◡◡◡ 7 – 3 - д

«Свободный стих» тени вара «верлибр» ятпа XIX ĕмĕрте Францире ҫирĕпленнĕ. Франци поэчĕ Рембо 1872 ҫулта «Марина» тата «Движение» ятлă сăвăсем ҫырнă. Ҫав произведенисенчен пуҫласа «верлибр» аталанса вăй илме тытăнать.

Верлибрта чылай чухне пусăмлă тата пусăмсăр сыпăксен черетленĕвĕ ҫук. Вăл рифмăсăр та пулма пултарать. Анчах та верлибршăн вăл тĕп паллă мар. Сăвă йĕркисенчи сыпăксемпе пусăмсен шучĕ те чылай чухне пĕр тан мар. Верлибрăн тĕп палли вăл – пĕрремĕш ритма пула лирикăллă сăнар

кĕскен те витĕмлĕн йĕркеленни. Верлибр интонаципе синтаксис çинче тытăнса тăракан сăвă.

Хальхи чăваш поэзийĕнче верлибр формипе П.Эйзин уйрăмах тухăçлă ĕçлет. Тĕслĕх выранне поэтăн пĕр сăввине илсе пăхатпăр:

1 Пултăрччĕ
2 хура çăкăр –
3 çиме
4 хырăм выçсассăн.
5 Пултăрччĕ
6 сивĕ шыв –
7 ĕçмешкĕн
8 ăш хыпсассăн.
9 Пултăрччĕ
10 уçă сывлăш –
11 кăкăр тулли
12 сывламашкăн.
13 Пултăрччĕ
14 савнă тус –
15 чун каниччен
16 калаçмашкăн.

| | | |
|---|---|---|
| 1 | ∪́∪∪ | 3 – 1 - а |
| 2 | ∪∪́∪́∪ | 4 – 2 - б |
| 3 | ∪∪́ | 2 – 1 - в |
| 4 | ∪́∪∪́∪ | 4 – 2 - г |
| 5 | ∪́∪∪ | 3 – 1 - а |
| 6 | ∪́∪∪́ | 3 – 2 - д |
| 7 | ∪́∪∪ | 3 – 1 - е |
| 8 | ∪́∪́∪ | 3 – 2 - г |

9 ∪́∪∪ 3 – 1 - а

10 ∪́∪∪́∪ 4 – 2 - ё

11 ∪∪∪́∪ 4 – 1 - ж

12 ∪∪∪́∪ 4 – 1 - е

13 ∪́∪∪ 3 - 1 - а

14 ∪́∪∪́ 3 – 2 - з

15 ∪́∪∪∪́ 4 – 2 - и

16 ∪∪∪́∪ 4 – 1 - е

«Ирĕклĕ сăвă ритмĕ йĕркисенче, шалти кĕвĕ, интонаци темиçе хут илтĕнсе пынипе йĕркеленет», - тенĕ вырăссен паллă литературовечĕ Л.Тимофеев[36].

Верлибра, силлабо-тоникăпа е тоникăпа танлаштарсан, чăннипех те хăйне евĕрлĕ ритмика пур. Унсăр пуçне ирĕклĕ сăвă хăйне евĕрлĕ ритмика пур. Унсăр пуçне ирĕклĕ сăвă хăйĕн сăнарлăхĕпе уйрăлса тăрать. Пĕр-пĕр ĕçе е çут çанталăк пулăмне ÿкерчĕк туса кăтартни çакнашкал сăвăсенчи кашни сăмаха е сăмах çаврăнăшĕн пĕлтерĕшне лайăхрах туйма хистет.

Чăваш халăх поэзийĕнче верлибра çывăх тăракан такмаксемпе халапсене асăрхама пулать. Çав тĕслĕхсене Н.И.Иванов тĕпчевçĕ «Чăваш сăвви» кĕнекере ятарласа пăхса тухнă. Ирĕклĕ сăвăра калаçу чĕлхи ăслайĕ малта тăрать. Вăл ĕçпе, тĕшмĕшпе, туй йăлипе çыхăннă япаласенче те палăрса юлнă. Вĕсенче хăйне расна çавра та, кĕвĕ те, рифма та. Сасă янравлăхĕ (аллитераципе ассонанс), уйрăм сăмахпа сăмах çаврăнăшне çавра вĕçĕнче рефрен вырăнĕнче каласа пани те чăваш чĕлхинчи верлибрăн (е Н.И.Иванов калашле «ирĕклĕ сăввăн») сăнарлăхĕ.

Çавра та хăйне кăна тивĕçлĕ тупăнать. Юрăри пек пайăр сăнар кунта пачах та пулмасть. Акă, тĕслĕхрен, «Çĕлен чĕлхи».

---

[36] Иванов Н.И. Чăваш сăвви. – Шупашкар, 1980. – С. 46.

Чăваш сăмахлăхĕнчи ирĕклĕ сăввăн чи паха тĕслĕхĕ вăл – «Мăн кĕрӳ такмакĕ». Унăн пĕр сыпăкне илсе пăхар-ха:

1 Эпир çак хăта патне
2 Çĕрпе пĕлĕт хушшинчен килтĕмĕр.
3 Çĕрпе пĕлĕт хушшинчен килнĕ чух
4 Утмăл çухрăм сĕм вăрман урлă каçрăмăр,
5 Çитмĕл çухрăм çеçен хир тăрăх тухрăмăр.
6 Утмăл çухрăм сĕм вĕрман урлă каçнă чух
7 Пĕр пăлан тĕл пултăмăр.
8 Ун майраки вĕçĕсем ылтăн,
9 Чĕрни вĕçĕсем кĕмĕл,
10 Хӳри вĕçĕсем кăлкан.
11 Майракине майăрать – йĕр тăвать,
12 Чĕрнипеле пусать – çул тăвать,
13 Хӳрипеле якатса пырать, -
14 Эпир çавăн çулĕпе килтĕмĕр…

| | | |
|---|---|---|
| 1 | ∪∪́∪́∪∪́∪∪́ | 7 – 4 - а |
| 2 | ∪∪́∪∪́∪∪∪́ ∪́∪∪ | 10 – 4 - б |
| 3 | ∪∪́∪∪́∪∪∪́ ∪́∪∪́ | 10 – 5 - в |
| 4 | ∪́∪∪́∪∪́∪∪́ ∪́∪∪́∪∪ | 12 – 6 - б |
| 5 | ∪́∪∪́∪∪∪∪́∪∪́ ∪́∪∪ | 12 – 5 - б |
| 6 | ∪́∪∪́∪∪́∪∪́ ∪́∪∪́∪∪́ | 12 – 7 - в |
| 7 | ∪́∪∪́∪∪́∪∪ | 7 – 3 - б |
| 8 | ∪∪́∪∪∪́∪∪́ | 7 – 3 - г |
| 9 | ∪∪∪́ ∪́∪∪∪́ ∪́∪∪́ | 10 – 5 - г |
| 10 | ∪∪́∪∪∪∪́ ∪́∪∪́ | 9 – 4 - г |

11 ∪∪́∪∪∪∪∪́∪∪́ 9 – 3 - д

12 ∪∪́∪́∪∪́∪∪∪́∪∪ 10 – 4 - д

«Мăн кĕрӳ такмакне» питĕ ăста калăпланă. Н.И.Иванов тĕпчевçĕ ăна çапла тишкерсе хаклană: «Кунта юрăри пек çавра пачах та çук, вăл вĕсĕмсĕр тăсăлса пырать. Анчах такмакра хăйне евĕр сыпăксем пурине асăрхатпăр. Кашни сыпăкра тĕвĕленнĕ шухăш, вĕсен тытăмĕ те пĕрешкелтерех: пĕр майлă пуплевпе пуçланаççĕ те, пĕр майлă пуплевпе вĕçленеççĕ. Вĕсене çавра теме питĕ йывăр: унта йĕркесен шучĕ те тĕрлĕ, рифма курăнмасть. Рифма тенийĕ хутран-ситрен сиксе тухкалать, анчах нимĕн енĕпе те хăйне ытлашши палăртмасть. «Мăн кĕрӳ такмакĕ» сасă янравлăхне (аллитераципе ассонанса) питĕ юратать («ĕçетре, етре», «вылятра, кулатра», «утмăл çухрăм сĕм вăрман», «çитмĕл çухрăм çеçен хир тата ыт.те). Çакă пĕтĕмпе «Мăн кĕрӳ такмакне» ирĕклĕ сăвă картинче тытса тăрать»[37].

Сăмах май çакна та каламалла: поэзире тата рифмăсăр сăвă – шурă сăвă (белый стих) – тĕл пулать. Ăна верлибрпа танлаштарма çук. Кун пек сăвăсем рифмăсăр. Ритмика енчен илсессĕн вĕсем силлабо-тоника е тоника виçипе çырнă йĕркесем.

Чăваш поэчĕсенчен ку формăпа ытларах П.Хусанкай, Ç.Элкер, Н.Шелепи т.ыт.те пултарулăхĕнче палăрса юлнă. Тĕслĕхрен, Н.Шелепин «Колхозра» сăвви шурă сăвă формиллĕ хайланнă:

1 Кĕрекисем тулăх,
2 Сăри лайăх,
3 Те сахăрпа тунă,
4 Те пылпа.
5 Сĕтел йĕри-тавра
6 Хăна-вĕрле.
7 Те юрлама пынă,
8 Те курма.

---

[37] Иванов Н.И. Асăннă ĕç. – С. 98.

| | | |
|---|---|---|
| 1 | ◡◡◡◡◡◡ | 6 – 3 - а |
| 2 | ◡◡◡◡ | 4 – 2 - а |
| 3 | ◡◡◡◡◡◡ | 6 – 3 - б |
| 4 | ◡◡◡ | 3 – 2 - в |
| 5 | ◡◡◡◡◡◡ | 6 – 3 - г |
| 6 | ◡◡◡◡ | 4 – 2 - д |
| 7 | ◡◡◡◡◡◡ | 6 – 3 - б |
| 8 | ◡◡◡ | 3 – 2 - е |

Маларах каланине пĕтĕмлетсе çапла калама пулать. Сăвă виçин теорине В.П.Тимаков илсе кăтартнă тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пăхса тухрăмăр. Петĕр Хусанкай пултарулăхĕнчи сăвă виçи çинче чарăнса тăрар. Аслă поэтăмăр чĕлхи тути масине лайăх туйнă, сăвă виçине çирĕп тытса пынă: сăввăн силлабика виçипе те, тоника виçипе те, силлабо-тоника виçипе те ăнăçлă усă курнă. Петĕр Хусанкайăн «Тилли юррисем» сăвă ярăмĕнче ĕмĕртен ĕмĕре куçса, илемленсе пынă пахалăхĕ, форми хальхи чăваш поэзине çывăх тăрать. Унăн виçи халăх юррисен çичĕ сыпăклă сăвă виçи çеç мар, хальхи поэтсем усă куракан сăвă виçи (ямб, хорей, анапест).

Халĕ «Тилли юррисенчи» сăвă виçин кашни тĕсне пăхса тухар. Çак хайлавра силлабика – сăвă йĕркелес мел паллă вырăн йышăнать. Сăмахран, «И утар-и, утар-и…» сăвва силлабика сăвă виçи çине таянса йĕркеленĕ.

И утар-и, утар-и,
Утар çулне тухар-и,
Тили пиччĕр кукшине
Уçланкăра курар-и.

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 – 3 - а

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 – 3 - а

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 – 3 - б

/ / /
∪∪∪∪∪∪∪ 7 – 3 - а

Çак сăвă никĕсĕнче – кашни йĕркерех сыпăксен шучĕ пĕрешкел пулни. Кунта кашни йĕркере çичĕшер сыпăк, виçĕшер пусăм. Ку сăвă халăх юрри çинче никĕсленнине çирĕплетсе парать.

П.Хусанкай сăвă ярăмĕнче силлабо-тоника сăвă йĕркелес мелпе те усă курнă. Кунта уйрăмах хорей, ямб, анапест сăвă виçиллĕ сăвăсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Сăмахран, «Хапха умнее тайăлтăм…» сăвва хорей виçипе хайланă.

Хапха умне тайăлтăм,
Хапăл курки эп ĕçрĕм.
Кил картине тайăлтăм,
Килĕшӳ курки ĕçрĕм…

/ / / /
∪∪ ∪∪ ∪∪ ∪ 7 – 4 - а

/ / / /
∪∪ ∪∪ ∪∪ ∪ 7 – 4 - б

/ / / /
∪∪ ∪∪ ∪∪ ∪ 7 – 4 - а

/ / / /
∪∪ ∪∪ ∪∪ ∪ 7 – 4 - б

Ку тĕлĕнмелле илемлĕ те янравлă юрă. Вăл хорей виçиллĕ пулнине икĕ сыпăклă стопара пусăм малти сыпăк çине ӳкни çирĕплетсе парать.

«Тилли юррисенче» ямб сăвă виçипе çырнă сăвăсем те чылай. Сăмахран, «Мехел тени мĕскер тени пулать?» философилле сăввах илер. Кунта автор ямб сăвă виçи урлă çут тĕнчен тĕрлĕ пулăмсене илсе философири пĕр ăнлавăн тупсăмне уçса панă, ăнлантарнă.

Мехел тени мĕскер тени пулать?
Ыйтсамăр çумăр пĕлĕчĕсенчен:
Мĕн-ма вĕсем кăвак уярпала

Юхаççĕ çăвăнмасăр тахçанччен?

Мехел çитмен.

◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ 10 – 5 -а

◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ 10 – 5 - б

◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ 10 – 5 - в

◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ ◡◡́ 10 – 5 - б

◡◡́ ◡◡́ 4 – 2 - г

Ямб сăвă виçипе çырнă çавнашкал тĕслĕхсем «Тилли юррисенче» кăна мар, пĕтĕмĕшле П.Хусанкай пултарулăхĕнче йышлă.

Ямбпа хорейсĕр пуçне П.Хусанкай виçĕ стопаллă сăвă виçипе çырнă – анапестпа.

Çуркуннеччĕ. Кĕрлетчĕ çыр-варĕ.
Эп лараттăм унпа иккĕнех.
Ман умра унăн куçĕ вылярĕ
Кăвакарчăн вĕçсе иртнĕ пек.

◡◡◡́◡◡◡́◡◡◡́◡◡ 10 – 3 - а

◡◡◡́◡◡◡́◡◡◡́ 9 – 3 - б

◡◡◡́◡◡◡́◡◡◡́◡◡ 10 – 3 – б

◡◡◡́◡◡◡́◡◡◡́ 9 – 3 –б

П.Хусанкай амфибрахий сăвă виçипе те янравлă та витĕмлĕ сăвăсем хайлама пултарнă. Тĕслĕх вырăнне унăн «Савни» кĕнекери «Эс марччĕ пĕрремĕш, эс мар юлашки, тен…» сăвăри пĕр çаврана илсе пăхар.

Эс марччĕ пĕрремĕш, эс мар юлашки, тен…
Паллах, кунпалан каппайни килĕшмест.
Анчах ку таран эс манран юлман шит те,
Пĕр çавăншăнах çак сăвва тивĕç эс.

∪∪́∪ ∪∪́∪ ∪∪́∪ ∪∪́∪ 12 – 4 - а

∪∪́∪ ∪∪́∪ ∪∪́∪ ∪∪́ 11 – 4 - б

∪∪́∪ ∪∪́∪ ∪∪́∪ ∪∪́∪ 12 – 4 - а

∪∪́∪ ∪∪́∪ ∪∪́∪ ∪∪́ 11 – 4 - б

Ку сăвăра кăмăл-туйăма татăклăн, пуçтарăнуллăн та сумлăн каламашкăн шăпах амфибрахий сăвă виçи пулăшать.

Петĕр Хусанкай силлабо-тоникăпа çеç мар, ытти сăвă тытăмĕсемпе те усă курнă. Малтанхи çулсенче поэт тоника сăвă тытăмĕпе е унăн мелĕсемпе , формисемпе, дольникпа, верлибрпа, ирĕклĕ сăвăпа усă курнă.

Акă, тĕслĕхрен, «Çухатрăм» ятлă сăвва поэт верлибр виçипе çырнă.

1 Мăшăр кăвак куç

2 Ман çине

3 Ăшшăн пăхатчĕ,

4 Ăраскалсăр пуç

5 Хуйхине

6 Сирсе яратчĕ.

1 ∪́∪∪́∪∪́ 5 – 3 - а

2 ∪́∪∪́ 3 – 2 - б

3 ∪́∪∪∪́∪ 5 – 2 - в

4 ∪∪∪́∪∪́ 5 – 2 -а

5 ∪∪∪́ 3 – 1 - б

6 ∪∪́∪∪́∪ 5 – 2 - в

Çак сăвăри йывăр шухăш-кăмăл чуна ыраттарать. Лирика геройĕ савнине çухатнăшăн хурланать, çакна шăпах верлибр виçи лайăхрах туйса илме пулăшать.

## Хыç сӑмах

Ахальтен мар В.А.Долгов П.П.Хусанкая «чӑваш поэзийĕн улӑпĕ»[38] тесе каланӑ. Унӑн «Тилли юррисем» хайлавĕнче чӑваш поэзии янравĕсем туллин те нумай енлĕн ӳкерĕнсе юлнӑ. Сӑвӑç еткерĕ пирĕншĕн эстетикӑлла пахалӑхĕпе те, историллĕ-культурӑллӑ пĕлтерĕшĕпе те хаклӑ.

П.П.Хусанкай çырнӑ «Тилли юррисем» сӑвӑ ярӑмĕн поэтикине сӑвӑ виçи, стиль, сӑвӑсен тытӑмĕ тĕлĕшĕнчен тишкерни акӑ мĕнле пĕтĕмлетӳсем тума май парать:

1. Чӑваш литератури контекстĕнче поэтика ӑнлава тĕрлĕ енчен тишкернĕ. Г.Я.Хлебников тĕпчевçĕ çак ӑнлава  виçĕ пахалӑх тĕлĕшĕнчен ӑнлантарнӑ: çыравçӑн эстетикаӑллӑ идеалсемпе пултарулӑх меслечĕ, стиль туртӑмĕ тата жанр системи. Çапла майпа П.П.Хусанкай аслӑ ӑру çыравçисен ӑсталӑхне ӑша хывса «Тилли юррисем» сӑвӑ ярӑмĕ хайланӑ. Г.И.Федоров ӑсчах шучĕпе поэтика пĕр-пĕр литературӑри е уйрӑм çыравçӑн пĕтĕм пултарулӑхĕшĕн палӑртуллӑ, пĕрлехи сӑрсене тĕпчет.Сӑнарлӑ пуплев поэтики сӑнлав детальĕсен, стиль сӑрĕсен пĕтĕмĕшлле енĕсене тата уйрӑм хайлавшӑн кирлĕ уйрӑмлӑхĕсене тишкерет. П.Н.Метин тата А.И.Мефодьев поэтика ӑнлав пĕлтерĕшне вырӑс тĕпчевçисем майлӑ, вĕсен шухӑшĕсем çине таянса, хальхи вӑхӑтра çирĕпленнĕ теорие тĕпе хурса параççĕ.

2. Текста тимлесе унӑн тĕп пайĕсене тупса палӑртасси, вĕсем пĕр-пĕринпе епле çыхӑннине кӑтартасси, поэтӑн кӑмӑл-туртӑмĕ тата шухӑш-ĕмĕчĕ мĕнле аталаннине уçса парасси – композици тишкерĕвĕн тĕп уйрӑмлӑхĕ. Лирикӑллӑ сӑвва çакнашкал тĕпчени унӑн тулаш енне е формине анлӑрах курма пулӑшать. Сӑвӑ тытӑмне тулашпа мал енчен тишкерни лирикӑллӑ хайлавӑн шалти тата тулашри кӑткӑс тĕнчине курма май парать, ӑна пĕр пĕтĕмĕшлле уçса пама пулӑшать. Петĕр Хусанкайӑн «Тилли юррисем» сӑвӑ ярӑмĕнчи сӑвӑсен тытӑмне çакӑн евĕр тишкеретпĕр.

---

[38] Долгов В.А. Ырӑ сӑнарсен илемĕ. – Шупашкар, 1978. – С. 66.

Чӗлхене илемлӗ те сӑнлӑхлӑ тумалли мелсемпе ҫыравҫӑ «Тилли юррисенче» туллин усӑ курнӑ. Вӑл ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ, витӗмлӗрен те витӗмлӗ илемлӗх пайрӑмӗсем ӑсланӑ, тӑван чӗлхен ахаль ҫынна курӑнман пуянлӑхне, пытарӑнса тӑракан иксӗлми майӗсене «ӗҫе кӳлнӗ». Сӑвӑҫ вӗсемпе хӑйне евӗрлӗ усӑ курма тӑрӑшнӑ, ҫакӑнта унӑн хӑйне майлӑ ҫырас ӑсталӑхӗ е стилӗ палӑрать.

4. Петӗр Хусанкай хӑйӗн пултарулӑхӗнче тӗрлӗ сӑвӑ йӗркелес мелӗсемпе усӑ курнӑ. Аслӑ поэтӑмӑр чӗлхи тути-масине лайӑх туйнӑ, сӑвӑ виҫине ҫирӗп тытса пынӑ: сӑввӑн силлабика виҫипе те анлӑ усӑ курнӑ. П.П.Хусанкайӑн «Тилли юррисем» сӑвӑ ярӑмӗнче ӗмӗртен ӗмӗре куҫса илемленсе пынӑ пахалӑхӗ, форми хальхи чӑваш поэзине ҫывӑх тӑрать. Унӑн виҫи халӑх юррисен ҫичӗ сыпӑклӑ сӑвӑ виҫи ҫеҫ мар, хальхи поэтсем усӑ куракан сӑвӑ виҫи те (ямб, хорей, анапест).

Эпир ҫак ӗҫре П.П.Хусанкайӑн «Тилли юррисем» сӑвӑ ярӑмӗн поэтикине тӗпчес ӗҫпе ҫыхӑннӑ хӑш-пӗр ыйтусене ҫеҫ хускатрӑмӑр. Кунта тишкермелли, сӑнламалли татах та нумай. Акӑ, тӗслӗхрен, «Тилли юррисен» жанр поэтикинех илер. Тӗпчевҫӗсем ку хайлав жанрне тӗрлӗрен палӑртаҫҫӗ: ӑна поэма та, сӑвӑ ярӑмӗ те тесе калаҫҫӗ. «Тилли юррисем» хӑш жанра ҫывӑх пулнине тарӑнрах тӗпчесе пӗлме те питӗ кӑсӑклӑ. Унсӑр пуҫне «Тилли юррисене» тема поэтики тата проблема поэтики тӗлӗшӗнчен тишкересси те чӑваш литератури аталанӑвӗшӗн пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫ. Ҫапла ӗнтӗ Хусанкай пултарулӑхӗн ҫӳлти пусӑмӗнче тӑракан хайлава тӗрлӗ енчен тӗпчеме май пур. Ҫакӑ «Тилли юррисене» анлӑрах ӑнланма, унӑн хӑйне евӗрлӗхне тарӑнрах курма пулӑшать.

# Библиографи

## I. Петĕмĕшле меслет литератури

1. Барбаш Ю.Я. Вопросы эстетики и поэтики. – 4-е изд., испр. и доп.- М: Современник, 1983. – 416 с.

2. Бахтин М.Н. Вопросы литературы и эстетики: Исследования разных лет. – М.: Худож. лит., 1975. – 502 с.

3. Винарская Е.Н. Выразительные средства текста. – М: Высшая школа, 1989. – 134 с.

4. Власенков А.И. Русский язык: Грамматика. Текст. Стили речи: Учеб. для 10-11 кл. общеобразоват. учреждений / А.И. Власенков, Л.М.Рыбченкова. – 9-е изд. – М.: Просвещение, 2003. – 350 с.

5. Гончаров Б.В. Анализ поэтического произведения. – М: Знание, 1987. – 62 с.

6. Лотман Ю.М. Анализ поэтического текста: Структура стиха. – Л.: Просвещение. Ленингр. отд-ние, 1972. – 271 с.

7. Одинцов В.В. Стилистика текста. – М: Наука, 1980. – 263 с.

8. Палиевский П.В. Литература и теория. – 3-е изд., доп.- М.: Советская Россия, 1979. – 287 с.

9. Поляков М.Я. Вопросы поэтики и художественной семантики: Монография. – М: Советский писатель, 1986. – 480 с.

10. Поспелов Г.Н. Вопросы методологии и поэтики. – М.: Изд-во МГУ, 1983. – 336 с.

11. Потебня А.А. Теоретическая поэтика / Сост., вступ. ст., коммент. А.Б.Муратова. – М.: Высшая школа, 1990. – 344 с.

12. Томашевский Б.В. Теория литературы. Поэтика: Учебное пособие. – М.: Аспект-Пресс, 1999. – 334 с.

13. Тынянов Ю.М. Поэтика. История литературы. Кино. – М.: Наука, 1977. – 574 с.

14. Федоров А.И. Образная речь / Отв. ред. К.А.Тимофеев. – Новосибирск: Наука. Сиб. отд-ние, 1985. – 199 с.

15. Фоменко И.В. О поэтике лирического цикла: Учебное пособие.- Калинин: Изд-во КГУ, 1984. – 79 с.

16. Хализев В.Е. Речь как предмет художественного изображения // Литературные направления и стили: Сборник статей; [Под ред. П.А.Николаева, Е.Г.Рудневой]. – М.: Изд-во МГУ, 1976. – 390 с.

**II. Теори литератури**

1. Аристотель. Об искусстве и поэзии. – М.: Гослитиздат, 1957. – 182 с.

2. Введение в литературоведение: Литературное произведение: Основные понятия и термины: Учебное пособие / Л.В.Чернец, В.Е.Хализев, С.Н.Бройтман. – М.: Высшая школа, 1999. – 556 с.

3. Веселовский А.Н. Историческая поэтика. – М.: Высшая школа, 1989. – 404 с.

4. Виноградов В.В. Стилистика, теория поэтической речи, поэтика. – М.: Изд-во АН СССР, 1963. – 255 с.

5. Гаспаров М.Л. Очерк истории русского стиха: Метрика, ритмика, рифма, строфика. – М.: Наука, 1984. – 319 с.

6. Гачев Г.Д. Содержательность художественных форм: Эпос, лирика, театр. – М.: Просвещение, 1968. – 309 с.

7. Жирмунский В.М. Теория литературы. Поэтика. Стиль. – Л.: Наука. Ленингр. отд-ние, 1977. – 407 с.

8. Кожинов В.В. Стихи и поэзия. – М.: Советская Россия, 1980. – 304 с.

9. Краткий словарь литературоведческих терминов : Кн. для учащихся / [Г.Л.Абрамович, В.П.Аникин, Г.И.Беленький]; Ред.-сост. Л.И.Тимофеев, С.В.Тураев. – 2-е изд., дораб. – М.: Просвещение, 1985. – 208 с.

10. Литературный энциклопедический словарь / [Подгот. Е.И.Бонч-Бруевич]; Под общ. ред. В.М.Кожевникова, П.А.Николаева. – М.: Советская энциклопедия, 1987. – 750 с.

11. Лотман Ю.М. О поэтах и поэзии. – С.-Пб: Искусство - СПб, 1999. – 848 с.

12. М.Горький о литературе: Литературно-критические статьи. – М.: Советский писатель, 1953. – 868 с.

13. Метнин П.Н. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем: Шкул словарĕ / П.Н.Метин, А.И.Мефодьев. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕрентӳ институчĕн изд-ви, 1997. – 80 с.

14. От аллегории до ямба: Терминологический словарь-тезаурус по литературоведению / Л.В.Шмрей. – Н.Новгород, 1993. – 203 с.

15. Семенова С.Г. Русская поэзия и проза 1920-1930-х годов. Поэтика – Видение мира – Философия. – М.: ИМЛИ РАН, Наследие, 2001. – 465 с.

16. Современный словарь-справочник по литературе / Сост., науч. ред. С.И.Кормилов. – М.: АСТ, 2000. – 704 с.

17. Соколов А.Н. Теория стиля. – М.: Искусство, 1963. – 223с.

18. Степанов Г.В. Язык. Литература. Поэтика / Отв. ред. Д.С.Лихачев; АН СССР. Отд-ние лит. и яз. – М.: Наука. – 1988. – 380 с.

19. Тимофеев Л.И. Словарь литературоведческих терминов / Ред.-сос. Л.И. Тимофеев, С.В.Тураев. – М: Просвещение, 1974. – 509 с.

20. Тимофеев Л.И. Слово о стихе. – М.: Советский писатель, 1982. – 342 с.

21. Томашевский Б.В. Стилистика: Учебное пособие. – 2-е изд., испр. и доп. – Л.: Изд-во ЛГУ, 1983. – 288 с.

22. Успенский Н. Поэтика композиции. – М.: Искусство, 1975. – 223 с.

23. Хализев В.Е. Теория литературы. – 2-е изд.- М.: Прогресс, 2000. – 339 с.

24. Холешников В.Е. Стиховедение и поэзия / ЛГУ. – Л.: Изд-во ЛГУ, 1991. – 254 с.

25. Храпченко М.Б. Поэтика, стилистика, теория литературы // Храпченко М.Б. Художественное творчество, действительность, человек. – М., 1976. – С. 345-360.

26. Энциклопедический словарь юного литературоведа / Сост. В.И.Новиков, Е.А.Школовский. – 2-е изд., доп. и перераб. – М.: Педагогока-Пресс, 1998. – 424 с.

**III. Наукăпа критика литератури**

1. Артемьев А.С. Илемлĕ произведенисен композицийĕпе сюжечĕ // Артемьев А.С. Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ. Публицистика. Литература теорийĕ. Статьясем. Асаилӳсем. – Шупашкар, 1984. – С. 82-96.

2. Артемьев А.С. Илемлĕ произведенисен стилĕпе чĕлхи // Артемьев А.С. Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ. Публицистика. Литература теорийĕ. Статьясем. Асаилӳсем. – Шупашкар, 1984. – С. 61-82.

3. Артемьев Ю.М. Ĕмĕр пуçламăшĕ: (1900-1917 çулсенчи чăваш литература историйĕн очеркĕ) / Ю.Артемьев. – 2-мĕш кăларăм. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1996. – 295 с.

4. Горский С.П. Язык и стиль народного поэта П.П.Хузангая // Ученые записки. – Чебоксары, 1955. – Вып. 12. – С. 191-226.

5. Даницких Л.И. Слово и мысль в художественном тексте / Отв. ред. Е.Ф.Ковалева; Молдавский гос. ун-т им. В.И.Ленина. – Кишинев: Штиинца. 1990. – 164 с.

6. Долгов В.А. Ырă сăнарсен илемĕ: Критикăллă статьясем. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1978. – 176 с.

7. Иванов Н.И. Чăваш сăвви. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1977. – 154 с.

8. Иванов Н.И. Чăваш халăх сăвăçи Петĕр Хусанкай. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1978. – 64 с.

9. Канюков В.Я. Классикăллă чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем. I пай / В.Я. Канюков, И.И.Одюков. – Шупашкар, 1973. – 95 с.

10. Канюков В.Я. Развитие литературы и народно-художественные традиции: Проблемы литературно-фольклорных отношений.- Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1979. – 191 с.

11. Никишов Ю.М. Лирика: Поэтика и типология композиции: Учебное пособие / Калининский госуниверситет. – Калинин: Изд-во КГУ, 1990. –87 с.

12. Одюков И.И. Чăваш халăх лирики (Сăвă-юрă сăнарлăхĕ): Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 1983. – 70 с.

13. Петĕр Хусанкай: Статьясен пуххи. – Шупашкар, 1988. – 98 с.

Поспелов Г.Н. Проблемы литературного стиля. – М.: Изд-во МГУ, 1970.- 330 с.

14. Пустовойт П.Г. Слово – стиль – образ. – М.: Знание, 1980.- 64 с.

15. Родионов В.Г. Генезис и эволюция речевого стиха // Чувашская народная поэзия: Сборник статей. – Чебоксары, 1990. – С. 65-110.

16. Родионов В.Г. Чувашский стих: Проблемы становления и развития. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1992. – 994 с.

17. Родионов В.Г. Чувашское и тюрксоке стихосложение: Учебное пособие. – Чебоксары: Изд-во ЧГУ, 1986. – 80 с.

18. Родионов В.Г. Чувашское стихосложение и тюркская аллитерация // Современные проблемы чувашской литературы. – Чебоксары, 1980. – С. 100-114.

19. Сироткин М.Я. Очерк истории чувашской советской литературы. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1956. – 352 с.

20. Сироткин М.Я. Чувашский фольклор: Очерк устно-поэтического народного творчества. – Чебоксары: Чувашское книжное изд-во, 1965. – 132 с.

21. Спивак Р.С. Русская философская лирика: Проблемы типологии жанров. – Красноярск: Изд-во КГУ, 1985. – 139 с.

22. Тимаков В.П. Лирика П.П.Хузангая: К проблеме творческой индивидуальности поэта: Диссертация на соискание ученой степени кандидата филологических наук.- Чебоксары, 1996.

23. Тимаков В.П. Сăмах илемне туйсан… - Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1980.- 128 с.

24. Федоров Г.И. Сăнарлă сăмах шыравĕ: Тĕпчев ĕçĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1996. – 224 с.

25. Федоров Г.И. Чăваш литературин сăнарлă пуплев теорийĕ: Методика кăтартăвĕсем. – Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 1994. – 88 с.

26. Федоров Г.И. Чăваш поэтикин хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем // Тăван Атăл. – 1988. - № 1 .- С. 57-62.

27. Фетисов М.И. Народный поэт Чувашии П.П.Хузангай. – Чебоксары: Чувашгосиздат, 1957. – 276 с.

28. Хальхи чăваш литератури: Илемлĕ ăсталăх ыйтăвĕсем: Статьясен пуххи / Чăваш НТИ. – Шупашкар, 1990. – 124 с.

29. Хлебников Г.Я. . Чăваш литературин поэтики: Малтанхи тапхăр (1917-1922): Вĕренӳ пособийĕ. – Шупашкар: ЧПУ изд-ви, 1990. – 92 с.

30. Хлебников Г.Я. Творческий путь П.П.Хузангая // Чувашский язык, литература и фольклор: Сб. статей. – Чебоксары, 1973. – Вып. 2. – С. 126-167.

31. Хлебников Г.Я. Чувашская литературная классика и ее наследники. - Чебоксары: Изд-во ЧГУ, 2001. – 302 с.

32. Хусанкай П.П. Ăсталăхпа чăнлăх. – Шупашкар: Чăвашиздат, 1964. – 164 с.

33. Чăваш илемлĕ литература чĕлхи: Статьясен пуххи. – Шупашкар, 1978. – 172 с.

34. Чăваш литератури: Поэтикăпа стиль ыйтăвĕсем: Статьясен пуххи. – Шупашкар, 1989. – 156 с.

35. Чекушкин В. Мехел çитсен: [П.Хусанкай сăввисем çинчен] // Ялав. – 1997. - № 1-2. – С. 122-126.

36. Чернухина И.Я. Общие особенности поэтического текста: (Лирика). – Воронеж: Изд-во ВГУ, 1987. – 158 с.

37. Юмарт В. «Тилли кăна Тили тееççĕ»: П.Хусанкай ярăмне ăнланам тесен // Тăван Атăл. – 1987. - № 6. – С. 60.

38. Юмарт Г.Ф. Чувашская эпическая поэзия // Чувашская народная поэзия: Сборник статей. – Чебоксары, 1990. – С. 110-124.

IV. Илемлĕ произведенисем, текстсем, ал çырусем.

1. Хусанкай П. Тилли юррисем. – Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1962. – 37 с.

2. Хусанкай П.П. Çырнисен пуххи. Пĕрремĕш том. Сăвăсем, ярăмсем. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997.- 544 с.

Тупмалли:

С.

Ум сăмах……………..…………………………….

I сыпăк «Поэтика» ăнлав чăваш литератури контекстĕнче ………………...

II сыпăк Композиции поэтики чăваш литератури контекстĕнче ………..…..

III сыпăк Стиль поэтики чăваш литератури контекстĕнче …………...………

IV сыпăк Сăвă виçи поэтики чăваш литератури контекстĕнче ………………

Хыç сăмах ………….………………………….

Библиографии…………….……………………..

I. Петĕмĕшле меслет литератури ……………………………………..

II. Теори литератури ………………………………………………........

III. Наукăпа критика литератури ……………………………..………….

IV. Илемлĕ произведенисем, текстсем, ал çырусем ………......…………..

| | |
|---|---|
| Диплом çыраканĕ | Федорова С.В. |
| Ертсе пыраканĕ | Иванова Н.Г. |

Ĕçе хӳтĕлеме ирĕк парас.

| | |
|---|---|
| Кафедра пуçлăхĕ, профессор | Родионов В.Г. |

Диплом ĕçне комиссии пăхса тухнă

2003 çул ……………………….. мĕшĕ

ГАК протоколĕ №